

# ЯЛАВ

№ 7 ИЮЛЬ 1954

# ВĔСЕМ МУСКАВА КАЯÇÇĔ



Кăçал, августăн 1-мĕшĕнче, тăван çĕршывăн столицинче—Мускавра—Пĕтĕм Союзри ялхуçалăх выставки уçăлать. Халь унта юлашки хатĕрленӳсем пыраççĕ. Ялхуçалăх выставкине илемлетсе йĕркелес тĕлĕшпе художниксемпе скульпторсем, монтажниксемпе инженерсем, агрономсемпе специалистсем, ытти рабочисем тăхăр пин çын ытла ĕçлет.

Пĕтĕм Союзри ялхуçалăх выставки ытарма çук хитре те çав тери пысăк. Унта 76 павильон пулать, экспонатсем вырнаçтарма 231 çурт лартнă. Выставка пысăкăшне çак тĕслĕхсем те кăтартса параççĕ: пĕр «Ялхуçалăхне механизацилени тата электрификацилени» павильонĕнче кăна çирĕм ултă залпа икçĕр аллă стендра çĕршер ялхуçалăх машинисемпе механизмĕсене вырнаçтарма палăртнă. Выставкăра туса лартнă çуртсен пĕтĕм калăпăшĕ икĕ миллисн кубла метртан та иртет.

Çав выставкăна халь çĕршывăн пур кĕтесĕсенчен те экспонатсем пырса тăраççĕ. Пирĕн республикăран унта çĕршер экспонат ярса панă ĕнтĕ.

Çĕрпӳри государство селекци станцийĕнче ĕçлекенсем çултан-çулах çĕнĕрен те çĕнĕ ӳсĕмсем тăваççĕ. Кăçал вĕсем Пĕтĕм Союзри ялхуçалăх выставкине хутшăнаççĕ. Иртнĕ уйăхра вĕсем выставкăна илсе кайма экспонатсем суйласа илчĕç. Экспонатсем хушшинче «красногорбатски» ăратлă «Бланка» ятлă ĕне пур. «Бланка» рекордистка 7 пăру тунă хыççăн пĕлтĕр 5146,6 килограмм сĕт панă. Вăтамран шутласан, кунсерен 26,2 килограмм сĕт суса илеççĕ, унăн сĕтĕнчен 4 процент ытларах çу тухать.

Антонина Ефимовна Ефимова доярка çав рекордисткăна зоотехникăпа ветеринари вĕрентнĕ пек пăхать. Совет правительстви А. Е. Ефимова юлташа Ĕçлĕх Хĕрлĕ ялав орденĕпе наградăланă.

Çĕрпӳри селекци станцийĕнче сыснасен çĕнĕ йăхне ӳстернĕ. Çав йăха «Çĕрпӳ йăхĕ» теççĕ. Çĕрпӳ сыснисен йăхĕ хăвăрт ӳсет, какайĕ лайăх, салă нумай парать. Пĕтĕм Союзри ялхуçалăх выставкине «Çĕрпӳ йăхĕн группинчен» пĕр партине экспонатсем ярса пачĕç те ĕнтĕ. Выставкăна илсе кайнă «Созар» 15 № ятлă сысна аçи 425 килограмм туртать. «Крепыш» 167 № сысна та 385 килограмм ытла таять. Вĕсене Марфа Яковлевна Гаранина пăхса ӳстернĕ. Нина Ивановна Иванова зоотехник та селекци станцинчи выльăхсене зоотехникăпа ветеринари вĕрентнĕ пек пăхса çитĕнтерме пулăшать. Выльăх-чĕрлĕх работникĕсем ăна пит хисеплеççĕ, ĕçре пулăшнăшăн тав тăваççĕ.

Гаранинăпа Ефимовăна иккĕшне те выставкăна кайма уйăрнă. Вĕсем Пĕтĕм Союзри ялхуçалăх выставкинче, аслă Мускавра пулаççĕ.

— Ялхуçалăх выставкин кандидачĕ пулни пире çĕнĕрен те çĕнĕ çитĕнӳсем тума хавхалантарать, — теççĕ вĕсем хавассăн.

Ӳкерчĕксенче: 1. А. Е. Ефимова доярка «Бланка» рекордисткăпа. 2. Ялхуçалăх выставкине яма палăртнă сыснасем (сулахайри ӳкерчĕк). 3. «Созар» 15 № тата «Крепыш» 167 № ятлă сыснасене пăхса ӳстернĕ М. Гаранина свинаркăпа Н. Иванова зоотехник выставкăна яма уйăрнă сыснасене пăхаççĕ.

**Б. Тимкинпа Н. Голубев** фотоӳкерчĕкĕсем.





**ЖУРНАЛ ХУПЛАШКИН ПĔРРЕМĔШ СТРАНИЦИНЧЕ:** Антон Павлович Чехов.

**П. ЧИЧКАНОВ** ӳкерчĕкĕ.

**ЖУРНАЛ ХУПЛАШКИН ТĂВАТТĂМĔШ СТРАНИЦИНЧЕ:** Çамрăк авиамоделистсем.

**П. ЕФРЕМОВ** фотоэтюдĕ.

ОБЯЗАТЕЛЬНЫЙ ЭКЗЕМПЛЯР

*Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!*

# ЯЛАВ

№ 7 (103)
ИЮЛЬ
1954

ЧĂВАШ СОВЕТ ПИСАТЕЛĔСЕН СОЮЗĔ УЙĂХРА ПĔРРЕ КĂЛАРАКАН ИЛЕМЛĔ ЛИТЕРАТУРĂПА ОБЩЕСТВĂЛЛА-ПОЛИТИКĂЛЛА ЖУРНАЛ

# АНТОН ПАВЛОВИЧ ЧЕХОВ

Пĕтĕм тĕнчери Мир Совечĕ йышăннă тăрăх, кăçалхи июль уйăхĕнче вырăс халăхĕн аслă писателĕ Антон Павлович Чехов вилнĕренпе 50 çул тултарнине çĕр чăмăрĕ çинчи мĕнпур ырă кăмăллă çынсем чысласа палăртрĕç.

Чехов — писатель-реалист, этем чун-чĕрине тараннăн ăнланакан, хĕн-хурти çынсен хутне кĕме, вĕсене хӳтĕлеме пĕлнĕ аслă гуманист. Унăн нумай тĕрлĕ калавĕсемпе повеçĕсене вуланă чухне çав тери ырă кăмăллă çынпа пĕр пытармасăр, чунтан калаçнă пек туятăн. Вăхăт-вăхăт вăл, хăйпе калаçакан çыннăн çитменлĕхĕсене витĕр куçпа курса илсе, юлташла та тăрăхласа кулать, йĕплĕ сăмахпа тĕртет. Хушăран вара, пурнăçри ирсĕрлĕхсем пирки е обществăри путсĕр те киревсĕр çынсем пирки сăмах хускатсан, вĕсене хаяррăн, пĕр шеллемесĕр питлет.

Аслă писателĕн мĕнпур кăмăлĕ пурнăçа хăйĕн кулленхи ĕçĕпе илемлетекен этем еннелле туртăннă. «Мĕн тери ырă ĕç вăл—çынсене хисеплесси!»—тесе çырнă вăл хăйĕн çыру кĕнекинче. Кашни çынна вăл уçăмлă та таса шухăш-кăмăллă, тулашĕнчен тирпейлĕ те илемлĕ курма ĕмĕтленнĕ. Анчах чуралăх саманинче, харампырсен пĕчĕк ушкăнĕ миллионшар ĕççыннисене пусмăрласа пурăннă чухне, çынна çын чăннипех хисеплесси пулма пултарайман. «Этемшĕн этем — кашкăр» тени буржуалла моралĕн никĕсĕ пулнă. Чехов çакна курнă, ăнланнă, вăл хĕн-хур тӳсекен çынсен пурнăçне епле пулсан та çăмăллатма тăрăшнă. Акă мĕнле çырнă вăл «Манăн пурнăç» ятлă повеçре: «Вăйлисем вăйсăррисене пусмăрламалла мар, çынсен пĕчĕк ушкăнĕ халăхăн пысăк йышĕшĕн харампыр е халăхран чи лайăх сĕткене тăтăшах ĕмсе тăракан насус пулмалла мар...»

Иртнĕ ĕмĕр вĕçĕнчи тата хальхи ĕмĕр пуçламăшĕнчи илемлĕ литературăра Чехов пирĕн çĕршывра революци хумĕсем хускалса çĕкленессине туйса тăнă вырăс писателĕсенчен пĕри пулнă. Чехов кăтартса панă ырă кăмăллă вырăс çыннисем халăх ирĕке тухасса, пурнăç чăннипех лайăхланса çуталасса хĕрӳллĕн ĕмĕтленнĕ.

Халăхăн демократилле сийĕнчен ӳссе çитĕннĕ писатель А. П. Чехов хăйĕн пĕтĕм творчествине халăх пурнăçĕпе çыхăнтарнă, вăл халăх хуйхи-суйхине, унăн сутă ĕмĕчĕсене лайăх пĕлсе тăнă. Çавăнпа та ăна Совет çĕршывĕнчи мĕнпур халăхсем ăшă кăмăллăн «пирĕн Чехов» тесе чĕнеççĕ.

Антон Павлович Чехов 1860 çулхи январĕн 17-мĕшĕнче Таганрог хулинче çуралнă. Унăн ача чухнехи пурнăçĕ çав тери тертлĕ те асаплă иртнĕ. «Ача чухне манăн ачалăхăм пулман» тесе çырнă Антон Павлович кайран, хăйĕн иртнĕ кун-çулне аса илнĕ май. Ашшĕ, Павел Егорович, «çын шутне» кĕме ĕмĕтленсе, суту-илӳ тума тăрăшнă, пĕчĕк лавкка тытнă. Вăл хăйĕн пĕчĕк ывăлĕсене лавккара черетпе ĕçлеттернĕ,—иртен пуçласа сĕм тĕттĕмччен, шартлама сивĕ-и унта е тӳсме çук шăрăх-и, пурпĕрех лавккара тăмалла. Пулас писателĕн ашшĕ хаяр кăмăллă çын пулнă, килĕнче вăл деспотла йĕрке туса хунă, çав йĕрке, яланлăха çирĕплетнĕ пек, пĕрре те улшăнман; пĕр-пĕр ачи кăшт айăпа

А. П. Чеховăн Ялтăри музей-çуртĕ.







Антон Павлович Чехова чысласа Ялтăра лартнă памятник.

С. Усов фотоӳкерчĕкĕсем.

кĕрсенех, ашшĕ ăна этемле мар хĕненĕ. Анчах унăн суту-илӳ ĕçĕ пурпĕрех ăнса пыман, вăл тата ытларах тарăхнă, шăнарайман çиллине вара пĕтĕм килйышĕн тӳсме тивнĕ.

Кăмăла лăплантаракан çын çемьере пĕр амăшĕ кăна пулнă. Çапах та йăваш кăмăллă Евгения Яковлевна пĕтĕмпех упăшкине пăхăнса тăнă, ачисене унăн хаяр çиллинчен хӳтĕлеме пултарайман. Ачисене вăл упăшки куриччен, вăрттăн кăна ачашланă.

Тăхăр çула çитсен, Антон гимназие вĕренме кĕнĕ. Урокĕсене вăл час-часах лавккара вĕренсе хатĕрленĕ. Уйрăмах литературăпа интересленнĕ, пĕчĕклех кĕнеке нумай вулама тытăннă.

Ашшĕ, Таганрогра ĕçĕ ăнман пирки тата вĕçĕ-хĕррисĕр парăмсенчен хăтăлас тесе, Мускава куçса кайнă. Çамрăк Чехов Таганрогра пĕчченех тăрса юлнă. Пурăнмалла, вĕренмелле, паян çимелĕх çăкăр тупмалла. Вăл вара тĕрлĕрен пуян çын ачисене килте вĕрентме кĕрешнĕ. Çав уроксемшĕн вăл вак-тĕвек укçа çеç пухма пултарнă. «Чухăнлăх мана шăл ыратни пекех асаплантаратчĕ», тенĕ кайран Чехов.

Кĕнекесем нумай вулани Чеховăн шухăш-кăмăлне, ĕмĕчĕсене хускатать, вăл хăй те çырса пăхма пикенет. Алăпа çырса «Заика» журнал кăларса тăрать, çав журнала Мускаври пиччĕшĕсем патне яра-яра парать. Ку вăхăтрах ăна театр та илĕртме пуçлать, вăл «Безотцовщина» драма тата «О чем курица пела» водевиль çырать те вĕсене Мускава, Александр ятлă пиччĕшĕ патне ăсатать. Лешĕ вара Чеховăн малтанхи пьесисене паллă драматурга С. Соловьева кăтартса пăхать:

— Кам пĕлет—пурăна-киле, тен, лайăх писателех пулĕ,—тет Соловьев, водевиле вуласа тухсан.

1879 çулта Чехов гимназирен вĕренсе тухать те, Мускава пырса, университета—медицина факультетне вĕренме кĕрет. Чеховсен çемйишĕн Мускаври пурнăç та çăмăл пулман. Ашшĕ, Павел Егорович, усламçă Гаврилов патне сырусă пулса ĕçе кĕнĕ те килне пачах пырса курăнман. Вара çемьери çынсен пурин те ĕçлеме тивнĕ.

Университетра вĕреннипе пĕрлех Антон Павлович та ĕç шыранă. Вăл Александрпа

Николай ятлӑ пиччӗшӗсен ҫулӗпе кайма пӑхнӑ—юмор журналӗсем валли кулӑшла «вак-тӗвексем» ҫырнӑ. «Нуша кулач ҫитерет» тенӗ пек, Чеховӑн пӗрмаях тата питӗ васкаса ҫырмалла пулнӑ: ҫав вӑхӑтра вӑл ҫулсерен 200—300-шер япала ҫырнӑ. Хӑйӗн «вак-тӗвекӗсем» валли хаҫатсенчи хроника пайӗсенче, палланӑ репортерсем патӗнче, ӑҫта май килнӗ, пур ҫӗрте те темӑсемпе сюжетсем шыранӑ. Унӑн кашни япалинче илӗртӳллӗ те витӗмлӗ кулӑ ҫиҫсе тӑнӑ. Пӗчӗкҫӗ калавсем айне вӑл «А. Чехонте» тесе алӑ пуснӑ.

Антон Павловичӑн талантне вулакансем часах туйса илеҫҫӗ, ӑна вӑл вӑхӑтри паллӑ писательсем те асӑрхаҫҫӗ, ырӑ канашсемпе пулӑшма тытӑнаҫҫӗ.

1884 ҫулта Чехов университетран вӗренсе тухать те врач пулать. Чӑн та, кайран, паллӑ писатель пулса тӑрсан, вӑл тухтӑр ӗҫӗпе ӗҫлеме пӑрахать, анчах медицинӑран вӑл пурпӗрех уйӑрӑлмасть. Антон Павлович медицина науки мӗнле аталаннине сӑнаса тӑрать, хресченсене пӗр тӳлевсӗрех тӗрлӗ чиртен пулӑшу парать, наука учрежденийӗсем уҫас тӗлӗшпе нумай тӑрӑшса ҫӳрет, больницӑсене час-часах кая-кая курать, паллӑ ученӑйӗсемпе ҫыхӑну тытать.

Литература ӗҫӗ — Чеховшӑн тӗп ӗҫ, пӗтӗм пурнӑҫ ӗҫӗ пулса тӑрать. Кӗҫех вӑл хӑйӗн пӗрремӗш пысӑк произведенине — «Степь» ятлӑ повӗҫне ҫырса кӑларать.

«Российӑра ҫӗнӗ, чӑннипех те лайӑх писатель ҫуралчӗ!»,—тенӗ Н. Гаршин «Степь» повӗҫе вуласа тухнӑ хыҫҫӑн.

Ҫӗнӗрен-ҫӗнӗ произведенисем ҫырать Антон Павлович, ывӑнма пӗлмесӗр, хавхаланса ӗҫлет. Унӑн ячӗ пӗтӗм ҫӗршыва сарӑлать.

Анчах иртнӗ ӗмӗрӗн 80-мӗш ҫулӗсем патша тытӑмӗн тискер реакцилле ҫулӗсем пулнӑ. Жандармери, полици, нумай тӗрлӗ бюрократла учрежденисем мӗнпур чӗрӗ шухӑша ирсӗррӗн таптаса, пусарса пынӑ.

Ҫав вӑхӑтра А. П. Чехов Тӑван ҫӗршывӑн кун-ҫулӗ пирки, халӑх пурнӑҫӗ пирки тарӑн шухӑшла каять, унӑн калавӗсенче уҫӑ кулӑ вырӑнне ытларах та ытларах хурлӑхлӑ сасӑ илтӗнме пуҫлать. Антон Павлович хӑйӗн чунне практикӑллӑ ӗҫре, наукӑра лӑплантарма тӑрӑшать, ҫав шутпа вӑл инҫетри Сахалин утравне тухса каять. Сахалин ун чухне ҫынсене каторгӑна ямалли вырӑн пулнӑ. Патша влаҫӗ кунта Российӑн мӗнпур кӗтесӗсенчен айӑплӑ ҫынсене хӑваласа пухнӑ.

Инҫе ҫул, йывӑр ҫутҫанталӑк Чеховӑн ахаль те хавшак сывлӑхне тата ытларах хавшатнӑ. Ҫитменнине кунта питӗ нумай ӗҫлеме тивнӗ. Чехов Сахалинти мӗнпур халӑха пӗрерӗн-пӗрерӗн ҫырса тухнӑ, пӗтӗм утрава темиҫе хутчен урлӑ та пирлӗ каҫнӑ, кашни яла ҫитнӗ, кашни пӳрте кӗнӗ, кашни каторжникпа уйрӑмах калаҫнӑ. Писатель умне вара Сахалин чӑн-чӑн тамӑк пек тухса тӑнӑ.

Хӑй курса ҫӳренисем ҫинчен Антон Павлович «Остров Сахалин» ятлӑ кӗнеке ҫырса кӑларать, унта вӑл патша йӗрки-тытӑмне пӗтӗм чунтан ылханса питлет.

Сахалинтан таврӑнсан, сывлӑхӗ япӑхса пынине кура, Чехов Мускавран ҫӗр ҫухрӑмра пӗр пӗчӗк имени туянать те унта пурӑнма куҫать. Мелиховӑра Антон Павлович халӑх пурнӑҫӗпе ҫывӑххӑнрах паллашать, литература ӗҫӗпе пӗтӗм вӑйне хурса ӗҫлет, кунта вӑл хӑйӗн чи лайӑх произведенийӗсене ҫырать, вӗсенчен чи пысӑкраххи—«Мужики» ятлӑ повесть.

Антон Павловичӑн сывлӑхӗ начарланнӑҫемӗн начарланать. Врачсем ӑна кӑнтӑрта ҫеҫ пурӑнма хушаҫҫӗ. Пӗр вӑхӑт вӑл Францие — Ницца курортне кайса пурӑнать. Анчах унӑн чунӗ Тӑван ҫӗршывалла туртӑнать, вара вӑл, Францирен таврӑнса, Крыма — Ялта хулине куҫса каять.

Кунта та — пӗччӗнлӗх, кунта та кичем. Вӑл Мускава, ҫывӑх ҫынсене, юратнӑ театра тунсӑхлать. Ӗҫре, пӗр канӑҫ пӗлмен литература ӗҫӗнче кӑна вӑл чунне ҫырлахтарать. Вӑл тӗлӗнмелле ӑста та илемлӗ произведенисем шӑрантарса кӑларать. Лев Николаевич Толстой, Чеховӑн паха калавӗсемпе повеҫӗсене вуласа хавхаланнипе ӑна «прозӑри Пушкин» тесе хак парать, Алексей Максимович Горький вара «Стиль енӗпе Чехова ҫитме май ҫук» тесе палӑртать.

Прозӑри пекех, А. П. Чехов драматургире те чаплӑ ӗҫсем тӑвать. Унӑн «Чайка», «Три сестры», «Вишневый сад» ятлӑ пьесисене ун чухне тин кӑна ҫуралнӑ Мускаври Художественнӑй театр ҫав тери хапӑлласа лартнӑ. Чехов пьесисем паян кун та ҫӗршыври театрсен репертуарӗнче чаплӑ вырӑн йышӑнса тӑраҫҫӗ.

Антон Павлович Толстойпа тата Горькипе питӗ туслӑ пулнӑ. Толстоя вӑл яланах аслӑ художник вырӑнне хурса сума сунӑ, Горький мӗнле ӳссе пынине кӑмӑллӑн сӑнаса тӑнӑ.

1902 ҫулта вара пӗр тӗлӗнмелле «мыскара» пулса иртнӗ. Ҫав ҫулхине Наукӑсен Академийӗ Максим Горькие хисеплӗ члена суйланӑ. Патша правительстви ҫакӑн ҫинчен илтсен тарӑхса кайнӑ: епле-ха пролетари революционерне ҫавӑн пек чаплӑ вырӑна суйласа лартмалла? Суйлава патша тӗрӗс мар тесе йышӑннӑ. Ҫакӑн хыҫҫӑн вара хисеплӗ академиксем — Короленкопа Чехов патша правительствине хирӗҫлесе хут ҫырнӑ, хӑйсем хисеплӗ академикрен тухасси ҫинчен пӗлтернӗ.

Ку вӑхӑта ӗнтӗ А. П. Чеховӑн сывлӑхӗ пӗтӗмпех япӑхса ҫитнӗ. Врачсем ӑна урӑх ҫӗршыва сывалма кайма сӗннӗ. Анчах писателӗн сывалас шанчӑк пулман... Вӑл Германири Баденвейлер курортӗнче 1904 ҫулхи июлӗн 2(15)-мӗшӗнче вилсе кайнӑ.

Унтанпа ӗнтӗ ҫур ӗмӗр иртрӗ. Ҫапах та Антон Павловичӑн ҫутӑ сӑнӗ пӗрре те тӗксӗмленмест, унӑн вилӗмсӗр кӗнекисенчи таса та ырӑ шухӑшсем пире паян кун та хавхалантараҫҫӗ.

А. П. Чехов творчествине пирӗн партин аслӑ ҫулпуҫӗсем пысӑка хурса хакланӑ, Тӑван ҫӗршывӑн тӑшманӗсене хирӗҫ кӗрешнӗ чухне Ленинпа Сталин аслӑ писателӗн ҫивӗч сӑмахӗпе, витӗмлӗ сӑнлӑхӗсемпе усӑ курнӑ.

Чехов ячӗ—пирӗн ҫӗршыври мӗнпур халӑхсемшӗн тӑван ят. Ытти халӑхсен писателӗсем пекех, чӑваш писателӗсем те Чеховран сӑмах ӑсталӑхӗ, шухӑш ҫивӗчлӗхне вӗренсе пыраҫҫӗ. Эпир пӗлетпӗр, пирӗн литературӑра сатирӑпа юмор ӗҫне пуҫарса яракан Иван Мучин чи малтанхи учителӗ Чехов пулнӑ, халӗ те вӑл хамӑрӑн нумай писательсемшӗн учитель пулса тӑрать.

Антон Павловичӑн произведенийӗсене эпир чылайранпа ӗнтӗ чӑвашла куҫарса пыратпӑр. Ҫапла унӑн «Ванька Жуков» ятлӑ калавӗ чӑвашла 1924 ҫулта тухнӑ. Ун хыҫҫӑн Чеховӑн ҫӗнӗрен-ҫӗнӗ произведенийӗсем пирӗн тӑван чӗлхепе ҫултан-ҫул ытларах тухса пыраҫҫӗ. Нумаях пулмасть унӑн чӑвашла куҫарнӑ калавӗсемпе пьесисем пысӑк кӗнеке пулса тухрӗҫ.

А. П. Чеховӑн пурнӑҫ ҫулӗ, Горький каларӗш, «малтан малалла та ҫӳлтен ҫӳлелле» пыракан ҫулӗ, вырӑс халӑхӗн ҫутӑ сӑнӗпе ырӑ кӑмӑлне кӑтартса парса, паянхи хӗрӳллӗ ӗҫре пӗтӗм чун-чӗререн хавхалантарать.

# А. П. ЧЕХОВ—ПИРӖН ТӐВАН ПИСАТЕЛЬ

Аслӑ вырӑс литературин классикӗсем Чӑваш театрне пуҫласа яма пулӑшрӗҫ, вӗсем ҫырнӑ драмӑсемпе комедисем чӑваш театрӗсен репертуарӗнче вӑтӑр ултӑ ҫул хушши тытӑнса тӑраҫҫӗ. Чӑваш театрӗсем вырӑс классикӗсен пьесисене лартмасӑр пӗр сезон та иртмест. Вырӑс классикӗсенчен пирӗн драматургсем пьесӑсем ҫырма вӗренеҫҫӗ, вӗсем ҫырнӑ пьесӑсенчи рольсене выляса пирӗн артистсем ҫитӗнеҫҫӗ. А. Н. Островский, Д. И. Фонвизин, Н. В. Гоголь, А. С. Грибоедов, Л. Н. Толстой, А. В. Сухово-Кобылин ячӗсене чӑваш театрӗсен афишисенче яланах курма пулать, вӗсен ячӗсем пирӗн халӑхшӑн тӑван ятсем пулса тӑчӗҫ. Паллах ӗнтӗ, вырӑссен чаплӑ писателӗ А. П. Чехов ячӗ те чӑваш театрӗсен афишисене сахал мар илемлетсе тӑнӑ, малашне те илемлетӗ.

Чӑваш театрӗ пуҫлансанах, унӑн репертуарӗнче Антон Павлович Чеховӑн калавӗсенчен майласа тунӑ пьесӑсем курӑнса кайрӗҫ. 1919-мӗш ҫултах чӑваш артисчӗсем Чеховӑн калавӗсем тӑрӑх майланӑ «Хирургия», «Злоумышленник», «Хӳтлӗхсӗр чун» («Беззащитное существо») комедийӗсене хӑйсен сцени ҫинче лартма пуҫларӗҫ. Чи малтанхи спектакль «Хирургия» пулчӗ. Вӑл спектакльте фельдшер рольне П. Н. Осипов пит аван вылятчӗ, Вонмигласов тиечук рольне те И. В. Данилов ӑста вылятчӗ. Ку комедие красноармеецсем пит хапӑл туса йышӑнатчӗҫ. Казармӑсене спектакль лартма кайсан (театр казармӑсене час-часах ҫӳретчӗ), пӗр-пӗр пьеса вылянӑ хыҫҫӑн ялан «Хирургия» лартма ыйтатчӗҫ. Ҫавӑнпа та вӑл икӗ ҫул хушши театрӑн репертуарӗнче тытӑнса тӑчӗ.

Ҫав ҫулсенчех тата Чеховӑн «Злоумышленникне» лартатчӗҫ. Пьесӑри следователь рольне Г. Тал-Мӑрса вылятчӗ, Денис Григорьева—эпӗ вылятӑм.

1920-мӗш—22-мӗш ҫулсенче Хусанта та, Шупашкарта та, «Хӳтлӗхсӗр чун» нумай хут кайрӗ. Банк управляющийӗн рольне — М. В. Кӑтнуйпа И. А. Шевле артистсем, чиновница рольне—Ева Терентьевӑпа Елена Осипова вылятчӗҫ.

Ҫак асӑннӑ комедисене 1919—1920-мӗш ҫулсенче ялти драмкружоксем те час-часах лартатчӗҫ.

Кайрахпа, Чеховӑн «Упа», «Ҫураҫу», «Юбилей» комедийӗсене колхоз театрӗсенче нумай хут лартнӑ.

Профессионалла театрсемсӗр пуҫне Чеховӑн пӗр пайлӑ комедийӗсемпе калавӗсенчен майласа тунӑ пьесисене ялти драмкружоксем пит нумай лартаҫҫӗ. Хӑшне-пӗрне, чӑвашла куҫарни пулмасан, драмкружок членӗсем хӑйсем чӑвашла куҫарса лартаҫҫӗ. Шупашкарта кашни ҫул ялти пултарулӑх кружокӗсен смотрӗ пулса иртет, вара пӗр-пӗр драмкружок Чехов пьесине кӑтартма илсе килетех. А. П. Чехов, ытти вырӑс классикӗсем пекех, пирӗн халӑхшӑн тӑван писатель пулса тӑчӗ.

Чеховӑн пысӑк пьесисенчен «Чие сачӗпе» «Ваня пиччене» те тахҫанах чӑвашла куҫарнӑ, анчах Чӑваш академи театрӗ вӗсене темӗншӗн ку таринччен те хӑйӗн сцени ҫинче лартмарӗ-ха.

Чеховӑн пысӑк пьесисемпе те пирӗн халӑха паллаштарасах пулать.

И. МАКСИМОВ-КОШКИНСКИЙ.

# МĂЙ ÇИНЧИ АННА

## А. П. ЧЕХОВ

I

Венчетрен таврăнсан, çырткалама çăмăл апат та пулмарĕ, çамрăк мăшăр пĕрер курка ĕçрĕ те, тумĕсене улăштарса, вокзала кайрĕ. Туй ячĕпе тунă хаваслă балра ĕçсе-çиес выранне, музыкăпа ташă выранне, икçĕр çухрăма, турра кĕлтума каймалла. Çакна нумайăшĕсем: Модест Алексеичăн чинĕ те пысăк, хăй те çамрăк çын мар, туя шавлă туса иртттерни, тен, пит аванах та пулмĕ, тесе ырларĕç; аллă икĕ çулхи чиновник вунсаккăр тултарса вунтăххăра çеç пусма ĕлкĕрнĕ хĕре качча илнĕ чух музыка итлеме те кичем ĕнтĕ. Çавнашкалах: Модест Алексеич йăлана пăхăнăран, мăшăрлă пурăннă чух та вăл тĕнпе тирпейлĕхе малти вырăна хунине çамрăк арăмĕ ăнланса илтĕр тесе çеç мăнастире кайма шут тытнă, тесе те калаçкаларĕç.

Çамрăк мăшăра ăсатма тухрĕç. Пĕрле ĕçлекенсен ушкăнĕпе тăванĕсем бокалсем йăтса поезд тапранса каясса кĕтсе тăчĕç, урра кăшкăрма хатĕрленчĕç; ашшĕ, Петр Леонтьич, цилиндрпа, учитель фракĕпе, ÿсĕрскер, йăлтах шурса кайнăскер, аллинчи бокалĕпе пĕрмаях кантăк патнелле туртăнса, тархаслана пек:

— Анюта! Аня! Аня, пĕр сăмах çеç!—тесе тăрать.

Аня кантăкран ун патнелле пĕшкĕнет, вăл вара ăна эрех шăршипе кӳ! çаптарса, темскер пăшăлтатать, хăлхинчен вĕрет,—нимĕн те ăнланса илме çук,—унăн пичĕ çине, кăкăрĕ çине, алли çине хĕрес хывать, çак самантра вăл чĕтресе сывлать, куçĕнче куççуль йăлтăртатать. Аня шăллĕсем, Петьăпа Андрюша, гимназистсем, хыçалта ăна фракран турта-турта именчĕклĕн пăшăлтатаççĕ:

— Аттеçĕм, çитет... Аттеçĕм, кирлĕ мар...—теççĕ вĕсем.

Поезд тапрансан, Аня, хăйĕн ашшĕ епле тайкалана-тайкалана, эрехне тăка-тăка вагон хыççăн кăштах чупнине, тата унăн мĕскĕн те айăплăрах пек ырă сăнне курчĕ.

— Ура-а-а!—кăшкăрать ашшĕ.

Мăшăрланнисем иккĕшех тăрса юлчĕç. Модест Алексеич купене пăхса çаврăнчĕ, япаласене полкăсем çине хурса тухрĕ те, йăл кулса, хăйĕн çамрăк арăмне хирĕç ларчĕ. Вăл вăтам пÿллĕ, мăнтăр та кÿпшек, вăрăм бакенлă тата майăхсăр чиновник, унăн хырнă, çаврака янахĕ ура тупанĕ майлах курăнать. Унăн питĕнчи тĕп уйрăмлăхĕ вăл — майăхĕ çукки, çавă тин çеç хырнă çара вырăн ерипен, самăр, желе пек чĕтренсе тăракан питçăмартисем. Вăл хăйне мăнаçлă тыткалать, хусканăвĕсем васкавсăр, меллĕ.

— Халĕ пĕр япалана аса илмесĕр пултараймастăп,—терĕ вăл, йăл кулса.—Пилĕк çул каялла Ķосоротов святыя Анны иккĕмĕш степеньлĕ орденне илсен, тавтума пычĕ, вара его сиятельство çапла каларĕ: «Халĕ ĕнтĕ сирĕн виçĕ Анна: пĕри кăкăр умĕнче, иккĕшĕ мăй çинче». Ķалас пулать, ун чухне Ķосоротов патне уйрăмăх харкашма юратакан тата çăмăлттай арăмĕ каялла пычĕ, ăна: Анна, тесе чĕнетчĕç. Шанатăп, эпĕ иккĕмĕш степеньлĕ Аннăна илсен, его сиятельствăн мана çавăн пек калама сăлтав пулмĕ.

Вăл хăйĕн пĕчĕк те хĕсĕк куçĕсемпе йăлйăл кулать. Анна та, çак çын кашни самантрах хулăн, йĕпе тутипе чуптума пултарасран тата ăна халĕ хирĕçлеме те май çуккине туйса, шиклĕн кулкалать. Ăна унăн кÿпшек ÿт-пĕвĕн меллĕ хусканăвĕсем хăратаççĕ, халь ăна хăрушă та йĕрĕнчĕклĕрех пек. Упăшки тăчĕ те, мăйĕ çинчен орденне васкамасăр хыврĕ, фракпа жилетне хывса халат тăхăнчĕ.

— Çапла,—терĕ вăл, Аннăпа юнашар ларса.

Венчет çав тери асаплă иртнине аса илчĕ Анна, ун çине священник та, хăнасем те, чиркӳри çынсем те хĕрхенсе пăхнăн туйăнчĕ: мĕншĕн, мĕншĕн вăл, çавтери чипер хĕр, лайăхскер, çав ватă, илемсĕр господина качча тухать? Паян ирхине çеç-ха вăл, пурте çапла аван пулса пынăшăн çав тери хаваслăччĕ, венчет тунă чух тата халĕ вагонра хăйне айăплă пек, улталаннă пек, кулăшла пек туйрĕ. Акă вăл пуян çынна качча тухрĕ, анчах унăн çав-çавах укça çук-ха, венчет кĕпине те кивçене кĕрсе çĕлеттернĕ, паян ашшĕпе шăллĕсем ăна ăсатса янă чух та ак, вĕсен пĕр пус та çук иккенне сăнĕсенченех курчĕ. Ķаçхи апат çийĕç-ши вĕсем паян? Ыран тата? Темшĕн-çке ăна ашшĕпе шăллĕсем халĕ унсăр выçă ларнă пек тата амăшне пытарса килнĕ хыççăн, малтанхи каçхи майлах хурланнă пек туйăнса кайрĕ.

«Мĕнле телейсĕр эпĕ!—шутларĕ вăл.—Мĕскершĕн эпĕ çавтери телейсĕр?».

Модест Алексеич, хĕрарăмсемпе мĕнле тыткаламаллине хăнăхман çын пек, ăна пилĕкĕнчен тыткаларĕ, хулпуççирен лăпкарĕ, Аня укçа çинчен, амăшĕ çинчен, унăн вилĕмĕ çинчен шухăшларĕ. Амăшĕ вилсессĕн, ашшĕ, Петр Леонтьич, гимназире чистописанипе рисование вĕрентекенскер, ĕçке ярăнчĕ, пуçланчĕ нуша, ачасен аттисемпе калушĕсем çук, ашшĕне мировай патне сĕтĕрме тытăнчĕç, суд приставĕ пыра-пыра сĕтел-пукансене çырса кайрĕ... Мĕнле намăс! Аньăн ÿсĕр ашшĕне пăхмалла, шăллĕсем валли чăлха сапламалла, пасара çÿремелле, хăйне илемлĕ, çамрăк тата çав тери лайăх тыткалать тесе мухтанă чухне вара, унăн йÿнĕ шлепкипе пушмакĕ çинчи шăтăксене чернилпа сăрласа лартнине пĕтĕм тĕнче курнă пек туятчĕ вăл. Ķаçсерен вара, аттене ĕçнĕшĕн гимназирен кĕçех кăларса ярĕç, вăл ăна тÿсеймесĕр, анне пекех, вилсе кайĕ, текен хăпа пĕлмен шухăш канăç памасчĕ ăна, куççуль тăкатчĕ. Акă палламан хĕрарăмсем хыпăнса укçех Аня валли лайăх çын шырама тытăнчĕç. Кĕçех çак ватă та хитре мар, анчах укçаллă Модест Алексеич тупăнчĕ. Банкра унăн çĕр пин выртать, йăхран йăха куçса пыракан имениĕ те пур, ăна арендăна парса пурăнать вăл. Çынни йĕркеллĕ, ăна его сиятельство хисеплет; его сиятельствăран гимнази директорĕ патне, кирлех пулсан попечитель патне те, Петр Леонтьича ĕçрен кăлармалла мар хут илесси уншăн нимĕн те мар, тенĕ Аньăна.

Çаксене тĕпĕ-йĕрĕпе аса илнĕ чух сасартăк, кантăкран кĕрекен шавпа пĕрле музыка илтĕнсе кайрĕ. Поезд пĕчĕк станцине чарăннă мĕн. Платформа хыçĕнче тахăшĕ купăс калать, йÿнĕ сĕрме купăсне нăйкăштарать, çÿлĕ хурăнсемпе тирексем, уйăх çутатнă дачăсем хыçĕнчен çар оркестрĕн сасси илтĕнет: дачăсенче ташă каçĕ иртттереççĕ пулмалла. Платформа çинче дачниксем, кунта лайăх çанталăкра таса сывлăшпа сывлама килнĕ хула çыннисем çÿреççĕ. Çак вырăнсен хуçи, пуян çын, çÿлĕ, хура çÿçлĕ, сăнран эрмен евĕрлĕ, тулта куçлă, тĕлĕнмелле костюм тăхăннă Артынов та кунтах иккен. Вăл кĕпе тÿммисене вĕçертсе янă, çÿлĕ кунчаллă атти шпорлă, хулпуççирен уртса янă хура плащĕ, шлейф пек, çĕртен сĕртĕнет. Ун хыççăн шĕвĕр сăмсаллă вĕшлесем çÿреççĕ.

Аньăн куçĕсенче куççулĕ йăлтăртатать, анчах вăл амăшĕ çинчен те, укçа çинчен те, туйĕ çинчен те манса кайрĕ ĕнтĕ, паллакан гимназистсемпе офицерсене алă парса, хаваслăн кула-кула хăвăрт калаçать:

— Сывлăх сунатăп! Мĕнле пурăнатăр?

Вăл площадкăна, уйăх çути айне, хăй ытарайми çĕнĕ платьепе тата шĕлепкепе иккенне пурте курмалла тухса тăчĕ.

— Кунта мĕншĕн тăратпăр эпир?—тесе ыйтрĕ вăл.

— Кунта разъезд,—терĕç ăна,—почтовăй поезда кĕтеççĕ.

Артынов хăй çине пăхнине сиссе, вăл куçне килĕшÿллĕн хĕсрĕ те хыттăнах французла калаçма тытăнчĕ. Хăйĕн сасси çав тери илемлĕ янăранинчен тата музыка илтĕннĕрен, кÿлĕ çинче уйăх курăннăран, пуллă дон-жуан тата иртĕнчĕк Артынов ун çине куç илмесĕр кăсăххăн пăхнăран тата пурте савăнăçлă пулнăран хăйне хаваслă туйрĕ, поезд тапранса кайсассăн, паллакан офицерсем сывпуллашнă май аллисене кăсăрук патне тытсан, вăл, таçта йывăççем хыçĕнче кĕрлекен çар оркестрĕн кĕвви май, шăппăн полька юрлама пуçларĕ; эпĕ кирек мĕнле пулсассăн та телейлĕ пулмалла, — ăна çак пĕчĕк станцăра çапла ĕнентерни тейĕн,—çавăн пек туйăмпа кĕчĕ вăл купене.

Çамрăк мăшăр икĕ кун мăнастирте пурăннă хыççăн хулана таврăнчĕ. Вĕсем хысна шучĕпе тытса тăракан хваттерте пурăнчĕç. Модест Алексеич ĕçе кайсан, Аня рояль калать е кичем пулнăран йĕрет, е кушетка çине выртса романсем вулать, модăсен журналне пăхать. Апата ларсан, Модест Алексеич нумай çиет тата политика çинчен, ĕçе лартни çинчен, çĕнĕ ĕçе куçарни, наградăсем çинчен сăмахлать. Çавнашкалах вăл: ĕçлемелле, çемьеллĕ пурнăçпа киленсе пурăнни çеç мар, вăл—тивĕç, пĕр пусран вунă пус пулать, çут тĕнчере тирпейлĕхе чи çÿлĕ пусăма хуратăп, тесе каласать. Аллинчи çĕççе хĕç пек тытса:

— Ķашни çыннăн хăйĕн тивĕçĕ пулмалла!—тет вăл.

Аня ун сăмахне итленĕ, хăранипе апат та çиеймен, сĕтел хушшинчен выçах тухнă. Кăнтăрлахи апат хыççăн упăшки канма выртнă, хытă харлаттарса çывăрнă, Аня вара тăванĕсем патне кайнă. Ашшĕпе шăллĕсем ун çине темле урăхла пăхнă, вăл килсе кĕриччен çеç ун çинчен: вăл укçашăн кăна юратман, йăлăхтаракан, кичем çынна качча тухнă, тесе калаçнăн туйăннă; унăн чăштăртатакан платьи, алă сулисем тата майралла сăнĕ вăтантарнă, кÿрентернĕ вĕсене; вăл пур чухне вĕсем кăштах именнĕ, унпа ним çинчен калаçма та пĕлмен; çав-çавах вĕсем ăна ĕлĕкхи пекех юратнă, унсăр апат çиме те хăнăхса çитеймен. Вăл вĕсемпе пĕрле ларнă та купăста яшки, пăтă тата çурта шăрши кĕрекен шăн çупа ăшаланă çĕрулми çинĕ. Петр Леонтьич чĕтрекен аллипе графинран тултарнă та çăткăннăн, йĕрĕнчĕклĕн, хăвăрт ĕçнĕ, кайран иккĕмĕш, виççĕмĕш черкке ĕçнĕ... Петьăпа Андрюша, ырханккахкерсем, пысăк куçлă шуранка ачасем, графина илнĕ те ним тума аптрасан:

— Кирлĕ мар, аттеçĕм... Çитет, аттеçĕм...—тенĕ

Аня та шикленнĕ: урăх ан ĕç, тесе йăлăннă, ашшĕ вара сасартăк çиленсе кайнă та чышкипе сĕтел çине çапнă.

— Эпĕ хама сыхласа тăма никама та ирĕк памастăп!—кăшкăрнă вăл.—Шăпăрлансем! Хĕрача! Эпĕ сире пурсăра та хăваласа кăларса яратăп!

Анчах унăн сасси вăйсăр та ырă пулнă, унран никам та хăраман. Апат хыççăн вăл яланах капăрланнă; шуранка, хырăннă чух янахне кăшт каснăскер, ырхан мăйне тăса-тăса, шăпах çур сехет таран тĕкĕр умĕнче юсаннă, çÿçне туранă е хура майăхне пĕтĕрнĕ, духи сапнă, галстукне бант пек туса çыхнă, вара перчеткипе, цилиндрне тăхăннă та уроксем иртттерме çынсем патне тухса кайнă. Уяв чухне вăл килтех ларнă: сăрпа ÿкернĕ е фисгармони каланă, фисгармонийĕ вара шăхăрнă, хăрлатнă; вăл илемлĕ те пĕр тикĕс сасăсем кăларма тăрăшса, хăй те пĕрле юрланă е ачисем çине тарăхнă:

— Ăнмансем! Путсĕрсем! Инструмента пăснă!

Ķаçсерен Аня упăшки хăйпе пĕрле ĕçлекен çынсемпе, хысна шучĕпе тăракан çуртра пĕрле пурăнакансемпе картла вылянă. Ун чухне вара хитре мар, тăрлавсăр тумланнă, кухаркăсем пекех çыпăçусăр чиновниксен арăмĕсем пухăннă, вара хваттере чиновниксен арăмĕсем пекех майсăр, тăрлавсăр элексем пуçланнă. Хăшпĕр чухне Модест Алексеич Аньăпа театра та çÿренĕ. Антрактсенче вăл ăна хăйĕнчен пĕр утăма та уйăрман, Аньăна хулĕнчен тытса пĕрле коридорсемпе фойере çÿренĕ. Кама та пулин пуç тайсан, вăл çавăнтах Аньăна: «Статский советник... его сиятельство йышăннă»... е: «Пурлăхлăскер... хăйĕн çурт пур...» тенĕ вăл шăппăн. Буфет умĕн иртнĕ чух Аньăн мĕнле те пулин пылак япала çиес килнĕ; вăл шоколад тата панулми пирожнăйĕ юратнă, анчах хăйĕн укçи пулман, упăшкинчен ыйтма вăтаннă. Упăшки груша илнĕ те, пÿрнисемпе пуса-пуса пăхса, иккĕленчĕклĕ ыйтнă:

— Мĕн чухлĕ тăрать?

— Çирĕм пилĕк пус.

— Хакĕ пур,—тенĕ те вăл грушăна калле хунă; анчах буфет умĕнчен ним илмесĕр кайма аван мар пулнăран, сельтер шывне ыйтса илнĕ те пĕтĕм пулăштуха пĕчченех ĕçсе янă, куçне куççуль тапса тухнă, çав самантра Аня курайман ăна.

Е вăл, сасартăках хĕрелсе кайса, ăна хăвăрт каланă:

— Çак ватă хĕрарăма пуç тай!

— Эпĕ ăна палламастăп-çке.

— Пурпĕрех. Вăл казеннăй палата управляющи арăмĕ! Пуç тай, тетĕп сана! Пуçу татăлса ÿкес çук вĕт,—çине тăрсах мăкăртатнă вăл.

Аня пус тайнă, чăнах та унăн пусĕ татăлса ӳкмен, анчах капла тума ăна асаплă пулнă. Упăшки мĕн хушнине йăлтах тунă, мана тăм ухмаха улталанă пек улталарĕ, тесе хăйне хăй тарăхнă. Вăл ăна укçашăн çеç качча тухнă, анчах халĕ унăн качча тухичченхинчен те укçи сахал пулнă. Ĕлĕк чух ашшĕ çирĕмпуслăхсем паратчĕ, халĕ—пĕр пус та çук. Вăрттăн е ыйтса илме пултарайман вăл, упăшкинчен хăраса, чĕтресе тăнă. Çак çынран вăл тахçантанпах чунтан хăраса çӳренĕн туйăннă ăна. Ача чухне уншăн гимнази директорĕ, аслатиллĕ çумăр пĕлĕчĕ пек е хăйне лапчăтса лартма хатĕрленекен локомотив пек, пысăк та хăрушла вăй евĕр туйăннă; çавнашкалах тепĕр çавăн майлă вăй его сиятельство пулнă, ун çинчен яланах калаçатчĕç, темĕн хăратчĕç; тата унран пĕчĕкрех вăйсем те тупăннă, вĕсем хушшинче мăйăхне хырнă, хаяр, тархасланине те итлемен гимнази учителĕсем тăнă, халĕ акă юлашкинчен, йĕркесене пăхăнакан, сăнĕпе те директор евĕрлĕ Модест Алексеич пулнă. Çав вăйсем Аня ăсĕнче пурте пĕр çĕре пуçтарăннă, вара вăл хăрушă та пысăк шур упа сăнлă пулса, хăйĕн ашшĕ пек вăйсăр та айăплă çынсене хупласа илессĕн туйăннă, çавăнпа вăл хăйне мелсĕр лăпкасан та, кăмăла çӳсентермелле ыталасан та, мĕн те пулин хирĕç калама шикленнĕ, вара вăл кулнă пек, юриех килĕшнĕ пек тунă.

Петр Леонтьич пĕррехинче унăн упăшкинчен аллă тенкĕ кивçен ыйтма хăюлăх çитерчĕ, унăн темле ырă мар парăма парс татмалла пулнă имĕш, анчах мĕнле хĕнпе ыйтнă вăл ăна!

— Юрать, эпĕ сире паратăп,—тенĕ Модест Алексеич, кăшт шухăшланă хыççăн,—анчах асăрхаттаратăп, эпĕ сире урăх памастăп. Патшалăх ĕçĕнче ĕçлекен çын çавнашкал хăтланни килĕшӳсĕр. Эпĕ сире пурне те паллă факта асăрхаттармасăрах хăварма пултараймастăп: эрех ĕçни пултаруллă çынсене нумайăшне пĕтерчĕ, вĕсем хăйсене алла илнĕ пулсассăн, тен, каярахпа, пысăк çынсемех пулма пултарнă.

Вăл «вăй çитнĕ таран...», «пурнăçа кура...», «халь кăна каланине шута илсе», текен вăрăм пуплевсемпе чăрăнмасăр калаçнă, мĕскĕн Петр Леонтьич чунтанах асапланнă, унăн вара татах ĕçес кăмăл çĕкленнĕ.

Шăллĕсен, шăтăк атăпа, кивелнĕ шăлаварпа, Аня патне хăнана пырсан, çав-çавах вăл ăса вĕрентнине итлеме тивнĕ.

— Кашни çыннăн хăйĕн обязанноçĕсем пулмалла!—тенĕ вĕсене Модест Алексеич.

Укçа паман. Ун вырăнне вăл Аньăна çĕрĕсем, алă суллисем, брошкăсем парнеленĕ, хăй: çак япаласем хура кун çитсен кирлĕ пулĕç, тенĕ. Час-часах вăл ун комодне уснă та ревизи тунă: япаласем пурте пур-ши-ха, тесе тĕрĕсленĕ.

## II

Кĕçех хĕл ларчĕ. Раштав çитиччен чылай малтан вырăнти хаçатра: декабрĕн 2-мĕшĕнче дворянсен пухăвĕнче яланхи пекех хĕллехи бал «пулма тивĕç», тесе пĕлтерчĕç. Кашни каçах картла выляма хыççăн Модест Алексеич, Аня çине канăçсăр пăха-пăха, чиновниксен арăмĕсемпе пăшăрханарах пăшăлтатать, кайран, тем çинчен шухăшласа, кĕтесрен кĕтесе çӳрет. Пĕррехинче вара каç пулсан, вăл Аня умĕнче чăрăнса тăчĕ те:

— Санăн балсене çӳреме платье çĕлетмелле. Ăнланатăн-и? Çавăн пирки тархасшăн Марья Григорьевнăпа тата Наталья Кузьминишнăпа канашласа пăх,—терĕ.

Ăна вăл çĕр тенкĕ пачĕ. Аня илчĕ; анчах никампа канашламасăрах, хăйĕн амăшĕ бала кайма епле тумланнă пулĕччĕ-ши, тесе куç умĕнче курма тăрăшса, ашшĕпе калаçрĕ те ятарласах балсене çӳремелли платье çĕлетме пачĕ. Аньăн амăшĕ яланах аван тумланнă, вăл Аньăна та чипер пăхнă, ăна пукане пек чипер тумлантарнă, французла калаçма та, мазуркана ăста ташлама та вĕрентнĕ (качча тухиччен хăй вăл пилĕк çул гувернанткăра ĕçленĕ). Аня амăшĕ пекех кивĕ платьеren çĕнĕ пек тума, перчеткесене бензинра çума, вăхăтлăха усă курма bljoux* илме пултарнă, çавнашкалах, амăшĕ пек куç хĕсме, селĕп калаçма, курмăçланса тăма, кирлĕ чухне хавасланма, хурлăхлăн тата ытарлăн пăхма та пĕлнĕ. Çӳçĕпе куçĕ унăн ашшĕнни пекех хура, унран вăл час шăртланма тата яланах юсанас йăлана вĕреннĕ.

Бала каяссийĕ çур сехет юлсан, Модест Алексеич трюмо умĕнче мăйне орден çакма тесе ун патне сюртуксăрах кĕчĕ, вара унăн илемĕпе çĕнĕ, чаплă тумĕнчен тĕлĕнсе, бакенсене киленчĕкĕн турарĕ те:

— Акă еплескер эсĕ манăн... акă еплескер! Анюта!—тесе сасартăк хавхаланса мухта пуçларĕ вăл.—Эпĕ сана телейлĕ турăм, паян эсĕ мана телейлĕ тума пултаратăн. Тархаслатăп сана, его сиятельство арăмĕпе паллашсамччĕ! Туршăн та! Ун урлă эпĕ аслă докладчике кĕме пултаратăп!

Бала тухса кайрĕç. Акă дворянсен пухăвĕ, алăк патĕнче швейцарсем тăраççĕ. Малти пӳлĕмре—тумтир çакмаллисем, кĕрĕксем, хĕвĕшсе çӳрекен лакейсем тата витĕр çилтен веерпа хупланса тăракан декольтеллĕ хĕрарăмсем; çутатмалли газпа салтаксен шăрши кĕрет. Упăшкипе хулран тытăнса картлашка тăрăх çӳлелле хăпарнă чух Аня музыка сассине илтрĕ, унтан кĕçех çутăра ялкăшакан тĕкĕр çинче хăйне курчĕ те унăн чунĕнче хаваслăх тата леш уйăхлă каç пулнă пĕчĕк станцăри пек телейлĕ туйăм вăранчĕ. Вăл пĕрремĕш хут хăйне хĕрача пек мар, мăнкăмăллăн та шанчăклăн, хĕрарăм пек туйса, амăшĕ евĕр типтерлĕн утса пычĕ. Хăйне хăй вăл пурнăçра пĕрремĕш хут пуян та ирĕклĕн туйрĕ. Упăшки пĕрле пулни ним чухлĕ те кансĕрлемерĕ ăна, мĕншĕн тесен, алăк тупанĕ урлă каççассăнах, вăтă упăшкапа юнашар пыни унăн тивĕçне чакарма мар, йăлтах урăхла, ăна хавхалантаракан вăрттăнлăх панине, вăл уйрăмах арçынсене килĕшнине чун-чĕрипех туйса илчĕ. Пысăк залра оркестр кĕрлеме тытăннă ĕнтĕ, ташă пуçланнă. Хысна шучĕпе тăракан хваттертен тухнă хыççăн, çутта, тĕрлĕ тĕсе, музыкăна, шава курни-илтнипе кăмăлĕ хускалчĕ, Аня пĕтĕм зала пăхса илчĕ те: «Ах, мĕнле аван!» тесе шухăшларĕ, вара ушкăнра хăй паллакан, халиччен вечерсенче тата уçăлса çӳренĕ чух тĕлпулнă çынсене: офицерсене, учительсене, адвокатсене, чиновниксене, помещиксене, его сиятельствăна, Артынова тата аслă обществăри капăр тумланнă, йăлтах декольтеллĕ, хитрисемпе хитре мар хĕрарăмсене пурне те тӳрех палласа илчĕ, вĕсем чухăнсене пулăшас ятпа сутă тума уснă пасарăн çурчĕсемпе павильонĕсенче хăйсен вырăнĕсене йышăннă та ĕнтĕ. Эполетлă капмар офицер—унпа гимназире вĕреннĕ чухне, Старо-Киевский урамĕнче паллашнăччĕ, халĕ ун хушаматне астумасть ĕнтĕ вăл—çӳлтен вĕçсе аннă пек ун умне тухса тăчĕ те вальс ташлама чĕнчĕ, вăл вара упăшкинчен вĕçнĕ евĕр уйрăлса кайрĕ, çав самантра вăйлă тăвăлра парăс карнă кимĕпе шунă евĕр, упăшки çыран хĕррине инçете тăрса юлнă пек туйăнчĕ ăна... Вăл кăшкăрпех вальс та, полька та, кадриль те, музыкăпа шавран канăça пĕлмесĕр, вырăслапа французла хутăш селĕппĕн калаçса, кулса, упăшки çинчен тата нимĕн çинчен шутламасăр, хĕрӳллĕн те хавхаланса ташларĕ. Арçынсем ăна пит килĕштерчĕ, хĕпĕртенипе унăн сывлăшĕ пӳлĕннĕ, аллинчи веерне вăйпах чăмăртанă тата унăн ĕçесси килнĕ. Ашшĕ, Петр Леонтьич, бензин шăрши кĕрекен кăшт лӳчĕркеннĕ фрак тăхăннăскер, ун патне пĕчĕк чашăкпа хĕрлĕ мороженăй илсе пычĕ.

— Ытармалла мар эсĕ паян,—терĕ вăл, ун çине хаваслăн пăхса,—эсĕ качча тухма васканăшăн хальхи пек нихçан та шеллемен эпĕ... Мĕншĕн? Эпĕ пĕлетĕп, эсĕ пирĕншĕн çапла турăн, анчах...—вăл чĕтрекен аллисемпе укçа туртса кăларчĕ те:—паян эпĕ урокsем ирттенĕшĕн илтĕм, санăн упăшкунтан илнĕ парăма татма пултаратăп,—терĕ.

Аня ăна чашăк тыттарчĕ те тахăшĕнпе самантрах инçете кайса çухалчĕ, вара вăл, хăй кавалерĕн хулпуççийĕ урлă, ашшĕ пĕр хĕрарăма ыталаса паркет çийĕн залра вĕçнĕ пек ташлама пуçланине курчĕ.

«Урă чухне епле аван вăл!»—шухăшларĕ Аня.

Мазуркăна вăл çав пысăк офицерпах ташларĕ, лешĕ танлăн та йывăррăн çӳрерĕ, мундир тăхăнтартнă каска пек хулпуççипе кăкăрне хускаткаласа, урисемпе аран-аран тапса илсе ташлать—çав тери ташлас килмен унăн, Аня ăна хăйĕн илемĕпе, хăйĕн уçă кăмăлĕпе йĕкĕлтесе, ун çывăхĕнче вĕçнĕ пек çӳрерĕ; куçĕсем унăн харсăррăн ялкăшаççĕ, лешĕ вара сивĕнсех пынă, ун патнелле аллисене король пек тăснă.

— Браво, браво!..—терĕç халăх хушшинчен.

Анчах пысăк офицерăн та тӳсĕм çитеймерĕ; вăл илĕртӳллĕ вăя пăхăнса, çĕкленсе, хавхаланса, хĕрӳлленсе кайрĕ те çăмăллăн çӳре пуçларĕ. Аня хулпуççине вылятса чеен кăна пăхса илчĕ, халĕ вăл королева пек, лешне чура тейĕн; çак самантра вĕсем çине пĕтĕм зал, мĕнпур çынсем хытса кайса тата кĕвĕçсе пăхнăн туйăнчĕ ăна. Пысăк офицер ăна тав тума кăна ĕлкĕрнĕччĕ, сасартăк халăх сирĕлсе кайрĕ, арçынсем, аллисене усса, тĕлĕнмелле тӳрленсе тăчĕç... ун патнелле фракĕ çине икĕ çăлтăр çакнă его сиятельство пырать. Çапла, его сиятельство чăнахах та ун патнелле пырать, мĕншĕн тесен вăл тӳрех ун çине пăхса йăл кулчĕ, тутипе чăмларĕ—хитре хĕрарăмсене курсан яланах çавăн пек тăвать вăл.

— Питĕ хавас, питĕ хавас...—калаçма пуçларĕ вăл.—Çакăн пек пуянлăха çак таранччен пирĕнтен пытарса усранăшăн, эпĕ сирĕн упăшкăра гауптвахтăна лартма хушатăп. Эпĕ сирĕн пата арăм хушнипе килтĕм,—калаçăва малалла тăсрĕ вăл алă парса.—Эсир пире пулăшма тивĕç... М-да... Хитре пулнăшăн сире преми памалла... Америкăри пек... М-да... Американецсем... Манăн арăм сире çав тери кĕтет.

Вăл ăна, вăтă сăн çапнă хĕрарăм патне, пĕчĕк пӳрте илсе пычĕ, хĕрарăм пичĕн аялти пайĕ пысăк пулнăран, çаварне пысăк чул хыпнă пек туйăнать.

— Пулăшăр пире, — терĕ его сиятельство арăмĕ сăмсапа, юрланă евĕр. Мĕнпур чипер хĕрарăмсем пирĕн пасарта ĕçлеççĕ, пĕр эсир çеç темшĕн пăрăнса çӳретĕр. Мĕскершĕн эсир пире пулăшасшăн мар?

Вăл тăрса кайсассăнах, ун вырăнне Аня чей чашкисемпе кĕмĕл сăмавар сывăхне ларчĕ. Тӳрех вирлĕ суту-илӳ пуçланчĕ. Пĕр курка чейшĕн Аня пĕр тенкĕрен кая илмест, пысăк офицера вара пусахласах виçĕ курка ĕçтерчĕ. Пуян, чакăр куçлă, кăкăр пӳлĕннипе тертленекен Артынов çитсе тăчĕ, анчах вăл халĕ çуллахи пек тĕлĕнмелле костюмпа мар, çынсем пекех, фракпа. Аня çинчен куçне илмесĕр, вăл пĕр бокал шампански ĕçрĕ те çĕр тенкĕ тӳлерĕ, кайран, пĕр сăмах хушмасăр, астмăпа аптра-аптра, пĕр курка чей ĕçрĕ те каллех çĕр тенкĕ пачĕ... Аня хăнасене чĕнет, вĕсенчен укçа илет, халĕ хăй кулни тата пăхни çынсене савăнтарнине хытă шанса тăрать вăл. Хăй çак шавлă, йăлтăркка илемлĕхре, музыкăпа ташăра, хăйне юратакансем хушшинче, кулса тăракан пурнăçпа пурăнма çуралнине ăнланса илчĕ ĕнтĕ вăл, пасăрхи хупласа тата лапчăтса лартассипе хăратакан вăйран шикленни уншăн кулăшла кăна туйăнчĕ; вăл никамран та хăрамасть ĕнтĕ, амăшĕ çукки çеç шел, вăл халĕ унпа пĕрле унăн ăнăçăвĕсемшĕн савăннă пулĕччĕ.

Петр Леонтьич, шуралса кайнăскер, çaпах та ура çинче çирĕп тăрать-ха, вăл пĕчĕк çурт патне пычĕ те пĕр черкке коньяк ыйтрĕ. Аня, вăл мĕн те пулин усал калассине кĕтсе, хĕрелчĕ (хăйĕн ашшĕ çапла чухăннишĕн тата ыттисенчен нимпе те уйрăлса тăманнишĕн намăс пулнă ăна), анчах вăл ĕçрĕ те хăйĕн укçа сыххинчен вунă тенкĕ пăрахса, пĕр сăмах чĕнмесĕр, мăнкăмăллăн пăрăнса кайрĕ. Кăшт тăхтасан Аня grand rond** варринче ашшĕ мĕнле çӳренине курчĕ, ку хутĕнче вăл тайкалана та пуçланă ĕнтĕ тата хăйпе пĕрле ташлакан хĕрарăм питне хĕретсе, темĕн кăшкăрашать, вара Аня: виçĕ çул каялла балра вăл çакнашкалах тайкаланнине тата кăшкăрашнине аса илчĕ, юлашкинчен, околоточнăй ăна киле илсе кайнă, тепĕр кунне директор ĕçрен кăларассипе хăратнăччĕ. Епле вырăнсăр пулчĕ çак асаилӳ!

Пĕчĕк çуртсенче сăмаварсем сӳнсессĕн, пасарта сутă туса ывăннă çынсем пухăннă укçисене вăтă сăн çапнă, çаварне пысăк чул хыпнă хĕрарăма пачĕç, Артынов Аньăна хулĕнчен тытрĕ те пасара хутшăннă çынсем валли каçхи апат хатĕрлесе лартнă зала илсе кайрĕ. Сĕтел хушшинче çирĕм çынтан ытлах та мар, çапах та питĕ шавлă. Его сиятельство тост çĕклерĕ: «Çак чаплă столовăйра йӳнĕ хакпа сутă тăвакан столовăйсем чечекленсе пырассишĕн ĕçни вырăнлă, паянхи пасарта вĕсем пы-

---

* хаклă япаласем.

** «Пысăк ункă» (кадриль ташлакансен пысăк унки).

сăк вырăн йышăнчĕç». Бригада генералĕ «артиллери те парăнтарайман вăй-халшăн» ĕçме сĕнчĕ, вара пурте куркисене хĕрарăмсен черккисемпе шаккама тертăнчĕç. Питех те, питех те хаваслă пулчĕ!

Аньăна киле ăсатса янă чух тул çутăлса çите пуçланă ĕнтĕ, кухаркăсем пасара каяççĕ. Хавасланăскер, ÿсĕрскер, çĕннине нумай курнăилтнĕскер, ырнăскер, тÿшек çине выртрĕ те çав самантрах çывăрса кайрĕ...

Кăнтăрла иртсен, икĕ сехет тĕлне, горничнăй ăна вăратрĕ те Артынов господин визитпа килни çинчен пĕлтерчĕ. Вăл хăвăрт тумланчĕ, гостинăя тухрĕ. Артынов хыççăн кĕçех его сиятельство ĕнер пасарта пулăшнăшăн тав тума килчĕ. Вăл, ун çине çуланса тата тутипе чăмла-чăмла пăхса, унăн аллине чуптурĕ, малашне килме ирĕк ыйтрĕ те, кайрĕ. Аня хăйĕн пурнăçĕнче сакнашкал улшăну, çав тери лайăх улшăну, хăвăрт пулса иртнĕрен, ĕненмесĕр, тĕлĕнсе, киленсе, гостинăй варринче тăрать; сак вăхăтра упăшки, Модест Алексеич килсе кĕчĕ... Халĕ вăл ун умĕнче юрама тăрăшса, пылаккăн, чура пек сăнпа тăрать, вăйлă тата ятлă çынсем пур чухне кăна çапла пăхнă вăл; вара Аня хĕпĕртесе, çиленсе, йĕрĕнсе, уншăн ăна нимĕн те тума пултарайманнине шанса, кашни сăмахне пат татса:

— Тасалăр кунтан, тăмсай! — терĕ ăна.

Çакăн хыççăн Аньăн пĕр пушă кун та юлмарĕ, мĕншĕн тесен вăл е пикнике, е уçăлса çÿреме каять, е спектаклсене хутшăнать. Вăл киле кашни кунах ир еннелле таврăнать те гостинăй урайне çывăрма выртать, кайран, хăй чечексем айĕнче епле çывăрни çинчен пурне те чуна хускаттармалла каласа паратчĕ. Укса питĕ нумай кирлĕ пулнă, анчах вăл халĕ Модест Алексеичран хăрамасть, унăн укçине хăйĕнни евĕрех тăккалать; ни тархасламасть, ни хистесе ыйтмасть, ун патне: «сак хута паракана 200 тенкĕ парăр» е: «ним тăхтаса тăмасăрах 100 тенкĕ тÿлемелле», текен счетсемпе запискăсем кăна ярать вăл.

Мункун эрнинче Модест Алексеич иккĕмĕш степеньлĕ Анна илчĕ. Вăл çавăншăн его сиятельствăна тав тума пырсан, лешĕ хаçатне аялалла хучĕ те креслора шаларах сиксе ларчĕ.

— Халĕ ĕнтĕ сирĕн виçĕ Анна,—терĕ вăл, хăйĕн кĕрен чĕрнеллĕ аллисем çине пăхса,—пĕри тум çинче, иккĕшĕ мăй çинче.

Модест Алексеич, хытă кулса ярасран сыхланса, икĕ пÿрнине тута патне тытрĕ те каларĕ:

— Халĕ çут тĕнчене пĕчĕк Владимир килессе çеç кĕтмелли юлать. Ваше сиятельствăна хреснашшĕ пулма ыйтма хăятăп.

Вăл IV-мĕш степеньлĕ Владимир пирки шахвăртрĕ ĕнтĕ; сак сивчĕ, ăслă тата хăюллă каламбура таçта та каласа çÿресси çинчен хăй ăшĕнче шухăшларĕ, татах тепĕр ăнăçлă сăмах калама та хатĕрленнĕччĕ, анчах его сиятельство каллех хаçат пăхма тытăнчĕ те пуçĕпе сулчĕ...

Аня вĕçĕмсĕрех тройкăпа ярăнать, Артыновпа сунара çÿрет, пĕр пайлă пьесăсенче вылять, хăналанса çÿрет, ашшĕ патне те сайра хутра кăна кайкалать. Вĕсем унсăрах апатланаççĕ ĕнтĕ. Петр Леонтьич тата хытăрах ĕçме пуçларĕ, укçасăр ларать, фисгармонине те парăмшăн сутса янă. Ачисем ăна урама пĕччен кăлармаççĕ, вăл урараи ÿкесрен ăна яланах сыхласа çÿреççĕ; пичеве кÿлнĕ пар лашапа, кучер вырăнне ларчăк çинеларнă Артыновпа пĕрле Аня Старо-Киевский урамĕнче ярăннă чухне вĕçнĕ пек пынине курсан, Петр Леонтьич цилиндрне хыватчĕ, темскер кăшкăрма хатĕрленетчĕ, анчах Петьăпа Андрюша ăна хулран тытса, йăлăнсах çапла калаччĕç:
— Кирлĕ мар, аттеçĕм... Çитет, аттеçĕм...

*Г. ЕФИМОВ куçарнă.*

# Ĕç çинче



## Н. ДОБРОХОТОВ

Пулса çитрĕ ыраш, сĕлĕ сăхрĕ пуçне,
Çуллахи ĕç кĕрлевĕ пуçланчĕ;
Ырă ĕмĕт кĕрсе вырнаçать чĕрене,
Куçăма йăпатать тулли шанчăк.
Ешĕл тинĕселле ишсе тухрĕ карап,—
Кам ларать-ши çÿлте—савни мар-ши?—
Хура куçăм, кăçал эп санпа вырмара
Чун пек çывăх пулса ăмăртасшăн.
Вăйăм-халăм вĕрет иксĕлми хăватпа,
Тусăм, тусăм, санран юлас марччĕ...
Ахаль мар, ирхине, сар хĕвел тухаспа,
Килĕштерчĕ мăшăр кăвакарчăн.

# *Савнă тусăм*

## Валентин УРДАШ

Савнă тусăм, йĕпкĕн çĕмĕрт куçăм,
Кăлăхах чуна эс ан çунтар.
Сан патна çитмест-им манăн юррăм,
Куç умне тухмасть-им Шупашкар?

Савнă тусăм, йĕпкĕн çĕмĕрт куçăм,
Ман пата, тем, почта та килмест.
Тантăшсем куллен çыру илеççĕ,—
Сан тусу пĕрре те илеймест.

Савнă тусăм, йĕпкĕн çĕмĕрт куçăм,
Манăн хамăн куçăм çĕмĕрт пек:
Ĕмĕтсем пĕр саншăн çеç çунаççĕ,—
Эс çÿрен пуль урăх ĕмĕтпе.

Савнă тусăм, йĕпкĕн çĕмĕрт куçăм,
Тÿррипе калатăп, суйса мар.
Тăвансем сана чунтан кĕтеççĕ,
Вĕсем çеç-и—пĕтĕм Шупашкар!



# Телей

## Аркадий МАЛОВ

Сулхăн çилĕ вĕрет кассăн-кассăн,
Кăвак каç лăпкăн-лăпкăн сывлать.
Савни куçĕ пек çăлтăр хавассăн
Сан çине пăхса вăрттăн кулать.

Таврана эс сăнаи юратуллăн:
Умăнтах-çке илемлĕн, хитрен
Пĕве ситнĕ пике пек сар тулă
Хумханать пурçăн тумлă хирте.

Хумханать вăл тулли тинĕс майлăн,
Тем çинчен калаçать ăш çилпе,
Ахăртнех, тав тăвать пуль сăпайлăн
Вăл сана хăй йăваш чĕлхипе.

Кăмăлна ачашлать уй-хир чапĕ,
Ырă туйăм лăпкать чĕрене.
Эс чунтăвăттăн ăшшăн, ача пек,
Ылттăн туллăн кашни пĕрчине.

Килсе çитрĕ тинех кĕтнĕ ĕмĕт,—
Ĕмĕт çитрĕ—ăшчик савăнать:
Ав, епле юмахри пек илемлĕн,
Уçă çилĕ хуллен вĕрнĕçемĕн
Эс ÿстернĕ тырпул хумханать.

Сарлака шоссе, тăрăх иртетĕн,
Васкамастăн. Утан ерипен.
Сĕм çĕрле, вĕç-хĕррисĕр хирте те
Эс чунтан савăнса хĕпĕртетĕн
Умăнти телее курнипе.

Пурнăç çулĕ сан анлă та тикĕс,
Эс хăюллă, эс çамрăк, хитре.
Колхозра чи маттур бригадир эс—
Эс ĕçлен, тăрăшан каçăн-ирĕн,
Эс тырпул ÿстерен уй-хирте.

Хускалми тĕлĕрет ешĕл улăх.
Кĕмĕл сывлăм шăрçа пек чипер.
Телейпе çиçекен лăпкă кулă
Йĕр хывать мăшăр куç хĕррипе.

Эс телейлĕ.
Çĕршывăмăр пирĕн
Ирĕк пурнăçшăн, миршĕн тăрать.
Сăмах татнă каччу каçăн-ирĕн
Сан ĕçне чикĕре хураллать.



# УҪНӐ ҪЕРЕМ

*Романӑн 2-мӗш кӗнекинчи сыпӑксем*

МИХАИЛ ШОЛОХОВ

Пӗлӗтсене ҫил сирме тытӑнсанах ҫумӑрпа шӳнӗ ҫӗр, хӗвел ҫуттинче типсе, кӑваккӑн пӑсланса тӑрать. Ҫырма тӑрӑх, шурлӑхлӑ, йӳҫлӗхлӗ лапамсем тӑрӑх ирсерен тӗтре карӑнать. Тӗтре, ҫеҫенхирти тӗмесем ҫинелле васкаса, Шырланпуҫӗ урлӑ хумлӑн-хумлӑн мӑкӑрланса шуса иртет, унта шупка сенкеррӗн шевлеленсе куҫа курӑнми шӑранса пӗтет, йывӑҫ ҫулҫисем ҫинче, хӑмӑшпа витнӗ ҫурт-йӗр тӑррисенче, пур ҫӗрте те, ҫунакан етре тӑкӑннӑ пек, сывлӑм ешӗл курӑка тӑхланӑн пусарса, мӗн кӑнтӑрлаччен выртать.

Ҫеҫенхирти шурут чӗркуҫҫинчен ҫӳлӗ хӑпарнӑ. Кӗтӳ ҫӳрекен вырӑнтан леререх пыллӑ ҫеҫке чечеке ларнӑ. Каҫ кӳлӗм пыл шӑрши пӗтӗм хутор тӑрӑх сарӑлса хӗрупраҫ чӗрине тунсӑхлӑн хускатать. Кӗрхи тырӑсем горизонт патне ҫитиех тӗттӗм-симӗс стена евӗр тӑсӑлаҫҫӗ, пӗр тикӗс шӑтнӑ ҫурхи калча куҫа илӗртет. Тӗме аяккипе тип айлӑмсенче иртнӗ кунсенче ҫеҫ акнӑ вир сӑмсаланнӑ. Кӑвак хӑйӑр лаптӑкӗсем ҫинче ҫамрӑк кукуруза йӗпленсе тухнӑ.

Июнӗн ҫур уйӑхӗ иртсе пынӑ тӗлелле ҫанталӑк уяртрӗ, тӳпере пӗр татӑк пӗлӗт те курӑнмарӗ, чечекленекен ҫеҫенхир, ҫумӑрпа тасалнӑскер, хӗвел ҫуттипе ытарма ҫук илемлӗн ялкӑшма тытӑнчӗ. Халь вӑл ача ӗмӗртекен ҫамрӑк хӗрарӑм пекех пулчӗ,—кулленхинчен илемлӗ, шӑппӑн, кӑштах ӗшеннӗ пек, ача амӑшӗ майлах таса та телейлӗ кулӑпа ҫуталса тӑрать.

Яков Лукич Островнов кашни ир, хӗвел тухиччен, хулпуҫҫийӗ ҫине кивӗ брезент плащне уртса ярать те хир пӑхса киленме тесе хутор тулашне тухать. Чылайччен чарӑнса тӑрать вӑл сывлӑм тумламӗпе ялтӑртатакан кӗрхи туллӑн ейӳ кайнӑ чухнехи пек ем-ешӗл калча пусин йӑранӗ патӗнче. Тӑрасса вӑл ырса ҫитнӗ ватӑ лаша пек, пуҫне чиксе тӑрать те ҫапла шухӑшлать: «Пӗрчӗ тулнӑ чух «калмӑк»[1] пулмасан, тулла типӗ ҫил ӗнтмест, колхоз нумай тырӑ пуҫтарса кӗртет, уяр аҫа ҫаптӑрах ӑна! Ӑнать-ҫке ҫак каяннӑй Совет влаҫӗн! Харпӑр хӑй хуҫалӑхпа уйрӑм пурӑннӑ чухне миҫе ҫул хушши кирлӗ вӑхӑтра ҫумӑр пулмарӗ, кӑҫал ав, тӗпсӗр ҫырмана тултарасшӑн пулнӑ пекех тӑкать! Тырӑ лайӑх пулать ӗнтӗ, колхозниксене те чылай тивет, ун чухне вӗсене ырӑ сӑмах каласа Совет влаҫне хирӗҫ тӑратма пулать-и? Нихҫан та пулмасть! Выҫӑ ҫын вӑл, вӑрманти кашкӑр пек, кирек ӑҫта та каять;тутӑ ҫын—валашка умӗнчи сысна пек, ӑна вырӑнтан та хускатаймастӑн. Мӗн шухӑшласа тӑратьха Половцев господин, мӗне кӗтеҫҫӗ вӗсем—ӑс ҫитерейместӗп! Шӑпах халь Совет влаҫне тапӑнмалли вӑхӑт-ҫке, вӗсем пур—ӗҫсӗр лараҫҫӗ...»

Яков Лукич акӑ Половцев тума пулнӑ улшӑнӑва кӗтсе ывӑнса ҫиленнипе ҫапла шухӑшлать ӗнтӗ. Половцев ӗҫсӗр марринe чухлать-ха вӑл, ахальтен мар вӑл темӗн кӗтнине те пит лайӑх пӗлет Яков Лукич. Тусем хушшипе Островнов сачӗ хӗрринчен иртсе каякан тип вар тӑрӑх кашни каҫ тенӗ пек инҫетри хуторсемпе ют станицасенчен хыпарҫӑсем килсе тӑраҫҫӗ. Вӗсем хӑйсен лашисене вар пуҫӗнчи вӑрмана хӑварнӑ пулмалла, кунталла ҫуранах утаҫҫӗ. Систерсе хуллен шаккасан, Яков Лукич вӗсене алӑк уҫса кӗртет те лампа ҫутмасӑрах Половцев вырнаҫнӑ пӳлӗме ӑсатса ярать. Ҫав пӳлӗмӗн картишнелле тухакан икӗ чӳречин хупписене кӑнтӑрла та ҫӗрле те хупса тӑраҫҫӗ, шал енчен кӑвак кӗҫҫепе таччӑн карса хунӑ. Хӗвеллӗ кунсенче те унта нӳхрепри пек тӗттӗм, нӳхрепри пекех кӑмӑсак шӑрши ҫапать, сайра хутра ҫеҫ усӑлтаракан пӳлӗмри пек пӑнтӑхнӑ нӳр шӑрши ҫапать. Кӑнтӑрла Половцев та, Лятьевский те килтен тухса курмаҫҫӗ; хӑйсен ирӗкӗпе хупӑнса ларакансен тула тухмалла пулсан—тӗпсакайӗнче цинкланӑ витре ларать.

Яков Лукич каҫсерен вӑрӑ пек вӑрттӑн килекенсене кашнинех, ҫенӗкре шӑрпӑк ҫутса, хӑвӑрттӑн пӑхса илчӗ, хӑй паллакансене пӗрре те тӗл пулмарӗ вӑл; пурте вӗсем палламан ҫынсем, инҫетрен килнӗскерсемех пулас. Пӗррехинче Яков Лукич пӗринчен ҫапах та шӑппӑн кӑна:

— Ӑҫтан эсӗ, станишник?—тесе ыйтма хӑюлӑх ҫитерчӗ.

Шӑрпӑкӑн чӗтрекен ҫути чаппан тӑхӑннӑ ватӑ казакӑн башлык айӗнчен курӑнакан сухаллӑ сӑнне, питрен пӑхма ырӑ кӑмӑллӑ пек туйӑнаканскере, ҫутатса илсен, Яков Лукич унӑн хӗсӗк куҫӗсене тата виртлешсе кулнӑ май ялтӑртатакан шӑлӗсене курчӗ.

— Леш тӗнчерен, станишник!—ҫавӑн пекех шӑппӑн тавӑрса каларӗ те килнӗ ҫын, хуҫа пекех:—Мана халех ун патне илсе кӗр, сахалтарах интереслен!—тесе хушса хучӗ.

Тепӗр икӗ талӑк иртсен ҫав сухаллипе пӗр ҫамрӑкрах казак каллех килсе кӗчӗҫ. Вӗсем ҫенӗке темӗн йывӑрскер йӑтса кӗчӗҫ пулсан та шӑппӑн, ура сасси тумасӑр утрӗҫ. Яков Лукич шӑрпӑк ҫутрӗ те сухаллӑ казакпа пӗрле тепӗр ҫынна курчӗ; сухалли офицерсем ҫӳрекен йӗнер йӑтнӑ, кӗмӗлпе эрешленӗ йӗвенӗсене хулпуҫҫи урлӑ уртса янӑ, тепри—хулпуҫҫийӗ ҫине ҫӑмламас хура буркӑпа чӗркенӗ темле вӑрӑм та илемсӗр япала хунӑ.

Сухалли, тахҫантанпах палланӑ ҫынна тӗл пулнӑ пек, Яков Лукича куҫ хӗсрӗ, унтан:

— Хӑй патӗнче-и? Иккӗшӗ те килте-и?—тесе ыйтрӗ те хирӗҫ тавӑрса каласса кӗтмесӗрех, малти пӳлӗмелле иртрӗ.

Шӑрпӑк, Яков Лукич пӳрнисене пӗҫертсе, ҫунса пӗтрӗ, сӳнсе ларчӗ. Сухалли, тӗттӗмре тем япала ҫине ҫитсе такӑнсан, ҫурма сасӑпа ятлаҫса илчӗ.

— Тӑхта, эпӗ халех,—терӗ Яков Лукич, чӗтрекен пӳрнисемпе тепӗр шӑрпӑк кӑларса.

— Кӗрӗр,—терӗ Половцев, алӑка шӑппӑн уҫса.—Кӗрӗр ара, мӗн хӗвӗшетӗр унта? Яков Лукич, эсӗ те кӗр, эс кирлӗ пулатӑнха .Шӑппӑнрах, эпӗ халех хӑйӑ ҫутатӑп.

Вӑл «ҫара ҫерҫи» текен хунарне ҫутса ячӗ те, ӑна, ҫиелтен курткӑпа витсе, сарӑпа сӑрланӑ урайне чалӑшшӑн ҫутӑ ӳкмелле турӗ.

Кӗнӗ ҫынсем хисеплӗн сывлӑх сунчӗҫ, хӑйсемпе илсе килнӗ япалисене алӑк патне хучӗҫ. Сухалли икӗ утӑм малалла ярса пусрӗ, атӑ кӗлисемпе шаклаттарса илчӗ, унтан хӗвӗнчен кӑларнӑ пакета тӑсса пачӗ. Половцев конверта уҫса, ҫырӑвне хунар ҫывӑхнерех тытрӗ, хӑвӑрттӑн пӑхса:

— Ваттине ятран тав тӑвӑр. Ответ ҫырмастӑп. Вуниккӗмӗшӗнчен кая юлмасӑр унран хыпар кӗтетӗп. Кайма пултаратӑр. Ҫуталиччен ҫитетӗр-и эсир?—тесе ыйтрӗ.

— Ҫитетпӗр. Унччен ҫитетпӗр. Лашасем лайӑх пирӗн,—тавӑрчӗ сухалли.

— Ну, кайӑр. Службӑшӑн тав тӑватӑп.

— Чӗререн тӑрӑшатпӑр!

Лешсем иккӗшӗ те харӑссӑн ҫаврӑнчӗҫ, кӗлисемпе шаклаттарса, тухса кайрӗҫ. «Вӑт ӑсталаннӑ та!—хӗпӗртесе шухӑшларӗ Яков Лукич.—Стройпа ҫӳреме ӗлӗкхи шкулсенче вӗренни хӑтланнинчен курӑнать! Анчах мӗншӗн вӗсем ӑна нимле те хисеплесе чӗнмеҫҫӗ-ха?».

Половцев, Яков Лукич патне пырса, йывӑр аллисене ун хулпуҫҫийӗ ҫине хучӗ. Яков Лукич ирӗксӗрех вара аллисене йӑрст усса тӳрӗрех тӑма тӑрӑшрӗ.

— Куртӑн-и ӑмӑрткайӑксене?—шӑппӑн кулса ячӗ Половцев.—Кусем улталамаҫҫӗ. Кусем ман хыҫҫӑн вута та, шыва та кӗреҫҫӗ, леш, Войсковой хуторти хӑшпӗр йӗксӗксемпе ӗненмесӗр тӑракансем пек мар. Халь ӗнтӗ вӗсем мӗн илсе килнине пӑхар...

Половцев, хӑрах чӗркуҫҫи вӗҫҫӗн чӗркуҫленсе, хыттӑн туртса чӗркенӗ буркӑн сӑран ҫыххисене салтрӗ те шалтан ҫӑмӑл пулемет пайӗсене кӑларчӗ, ҫупа шӳтернӗ михӗрен тӗксӗммӗн йӑлтӑртатакан тӑватӑ диск илчӗ. Унтан вара икӗ хӗҫ туртса кӑларчӗ. Вӗсенчен пӗри казаксем ҫакса ҫӳрекен ахаль хӗҫ, лапчӑнса пӗтнӗ йӗнеллӗ, тепри—офицерсен хӗҫӗ, вӑл кӗмӗл тыткӑчлӑ, тыткӑчӗ ҫинче ярапаллӑ георгиевски хӑю, йӗннине кӗмӗлпе сӑрланӑ, ҫакки Кавказра пурӑнакансен хӗҫӗнни пек хура.

Половцев ӗнтӗ икӗ чӗркуҫҫийӗпе те чӗркуҫленчӗ, малалла тӑснӑ аллисем ҫине хӗҫне хучӗ, унӑн йӑлтӑртатакан кӗмӗлне пӑхса киленнӗ пек, вӑл пуҫне каҫӑртрӗ, унтан вара ӑна кӑкӑрӗ ҫумне чӑмӑртарӗ те чӗтрекен сассипе:

— Эх, савнӑ сарпикесӗм! Манӑн шанчӑклӑ тусӑм! Маншӑн эсӗ малашне те тӳррӗн те тӗрӗссӗн ӗҫлӗн!—терӗ.

Унӑн самӑр янахӗ хуллен чӗтренчӗ, куҫӗсенче хаяр та хавхалануллӑ куҫҫуль йӑлтӑртатрӗ, ҫапах та вӑл хӑйне аран-аран алла илчӗ, чалӑшса кайнӑ шуранка пичӗпе Яков Лукич енне ҫаврӑнса, хулӑн сассипе:

— Яков Лукич, эс ҫакна паллатӑн-и?—тесе ыйтрӗ.

Яков Лукич темӗн ҫӑтнӑ пек турӗ, пуҫне шӑппӑн сулса илчӗ: палларӗ ҫак хӗҫе, пирвайхи хут вӑл ӑна 1915-мӗш ҫулта, Австри фронтӗнче, маттур та ҫамрӑк Половцев хорунжий ҫумӗнче курнӑ...

Кровать ҫинче шӑппӑн выртакан Лятьевский, маншӑн пурпӗрех тенӗ пек, пӑхкаласа,

[1] «Калмӑк»—кӑнтӑр-хӗвелтухӑҫӗнчен вӗрекен ҫил.

тăрса ларчĕ, карăнса анасларĕ те ҫара урисене ҫĕрелле усрĕ, пĕртен пĕр куҫне вылятса илчĕ.

— Манăҫми курнăҫу!—терĕ вăл хăйăлтатса.—Восстани идиллийĕ темелле ĕнтĕ кăна. Юратмастăп эпĕ айванла хавхаланнине пула тухса тăракан сентименталлĕ сценăсене!

— Чарăнăр!—хыттăн пӳлчĕ ăна Половцев.

Лятьевский хулпуҫҫине хĕскелесе илчĕ:

— Мĕншĕн чарăнмалла-ха манăн? Тата мĕн тума чарăнмалла?

— Чарăнăр, сĕнсе калатăп!—пăшăлтатрĕ Половцев, урайĕнчен тăрса, кровать патнелле йăпшăнса утнă май.

Чĕтрекен сулахай аллинче унăн хĕҫ, сылтăм аллипе — кăвак толстовкин тӳммисене вĕҫертрĕ, ҫухине туртса ҫурчĕ. Половцев витерес пек тинкерсе пăхнине, шыҫмак пичĕ кăвакарса толстовки тĕслĕ пулнине Яков Лукич хăраса асăрхарĕ.

Лятьевский лăпкăн та васкамасăр кровать ҫине выртрĕ, аллисене пуҫ вĕҫне тытрĕ.

— Театрти пекех хăтланатăр!—терĕ вăл виртлешсе кулса, пĕртен-пĕр куҫĕпе маччана пăхса.—Эпĕ ҫакăн пек хăтланнине провинци театрĕсенчех-ха темиҫе хут та курнă. Мана ку йăлăхтарсах ҫитерчĕ!

Половцев унран икĕ утăмра чарăнса тăчĕ, ытла ĕшеннĕ аллине ҫĕклесе тарланă ҫамкине шăлчĕ, унтан ҫемҫелнĕ алли хăех аялалла шуса анчĕ.

— Нервăсем...—ийе чăмланă ҫын пек, ăнланса илмелле мар тытăнчăклăн каларĕ вăл, унăн пичĕ, кулнă чухнехи пек, чылайччен турткаланса тăчĕ.

— Ҫакна та эпĕ пĕр хутчен кăна мар илтнĕ. Ҫитĕ ĕнтĕ, Половцев, хĕрарăм пек хăтланма! Тыткалама пĕлĕр хăвăра!

— Нервăсем...—мăкăртатрĕ Половцев.—Нервăсем йĕркерен тухнă... Хама та йăлăхтарчĕ ҫак тĕттĕмре, ҫак виле шăтăкĕнче...

— Тĕттĕм—ăслă ҫынсен тусĕ. Пурнăҫ ҫинчен вăл философилле шухăшлама пулăшать, ҫĕткеленесси вара сăмах тытма пултарайманнипе те мигреньпе аптракансен, шатра питлĕ нишлĕ хĕрарăмсен кăна пулать. Нервăсене пула ҫĕткеленни — офицера намăс! Тепĕр тесен, эсир, Половцев, юри тăватăр, сирĕн нимле нерва та ҫук, ухмахла ҫеҫ хăтланатăр. Сирĕн сăмахăра шанмастăп! Офицерăн чăн сăмахне калатăп, шанмастăп!

— Офицер мар эсир, вырьăх!

— Ҫакна та эпĕ пĕр хутчен кăна мар илтнĕ сиртен, апла пулсан та дуэле чĕнместĕп-ха, мур ҫисе кайтăрах сире! Дуэле чĕнесси—кивелнĕ йăла, пирĕн унтан кирлĕрех ĕҫсем пур. Ҫитменнине тата, эсир ăна хăварах пĕлетĕр, хисеплĕ ҫыннăм, халь эсир кăмăлăра ҫемҫетсе кăкăр ҫумне чăмăртакан полицейски селедкăпа мар, шпагăсемпе ҫапăҫассĕ. Эпĕ, ватă артиллерист пулнă май, илемшĕн ҫеҫ ҫакакан ҫакăн пек хĕҫпăшала кураймастăп. Сире дуэле чĕнме чарса тăракан тепĕр сăлтав та пур: эсир юнăрпа та йăхăрпа та плебей, эпĕ — поляксен дворянинĕ, чи авалхи чаплă йăхран тухнă, ҫав...

— Итле мана, с.....шляхтич!—хыттăн кăшкăрса чарчĕ ăна Половцев; унăн сасси кĕтмен ҫĕртен ĕлĕкхи пек, хушма хăнăхнă пек ҫирĕпленчĕ.—Георгиевски хĕҫрен мăшкăлласа кулма-и? Тепĕр сăмах чĕнсенех, эпĕ сана, йытта касса вакланă пек тураса тăкатăп!

Лятьевский ларнă ҫĕртен сиксе илчĕ. Унăн тути ҫинче унччен йĕрĕнсе кулнин йĕрĕ те юлмарĕ. Вара витĕмлĕн, нимĕнех те мар пек ҫапла каларĕ:

— Ҫакна ĕненетĕп вара! Сасартăках туйса илме пулать сирĕн хĕрӳллĕ те ырă ĕмĕтĕрсене, ҫавăнпа та эпĕ шăпланатăп.

Вăл каллех выртрĕ те кивĕ байк утиялпа янахĕ таранах витĕнчĕ.

— Эпĕ сана пурпĕрех вĕлеретĕп,—ҫине тăчĕ Половцев, пуҫне вăкăр пек аяккинелле пăрса.—Шăпах акă ҫак хĕҫпе эпĕ пĕр ясновельможнăй вырьăхран труках иккĕ туса хуратăп; хăҫанне пĕлетĕр-и? Дон таврашĕнче Совет влаҫне сирпĕтсе антарсан!

— Апла пулсан эпĕ ватăличченех пурăпма пултаратăп иккен-ха, тен, ĕмĕрĕпех те пурăнăп,—терĕ Лятьевский шăл йĕрсе. Унтан, намăс сăмахпа вăрҫса илсе, стена еннелле ҫаврăнса выртрĕ.

Яков Лукич, вĕри кăвăр ҫинче тăнă пек, урисене улăштаркаларĕ. Пӳлĕмрен тухса кайма темиҫе хутчен те тытăнса пăхрĕ вăл, анчах Половцев ăна аллипе сулса чарчĕ. Каярахпа текех тӳссе тăраймарĕ.

— Тухса кайма ирĕк парăр мана, ваше благородие!—терĕ вăл.—Часах тул ҫутăлать, манăн ирех тăмалла...

Половцев тенкел ҫине ларчĕ, хĕҫне чĕркуҫҫи ҫине хурса аллисемпе ун ҫине тĕренчĕ те, ҫĕрелле ӳпĕнсе, чылайччен сăмах чĕнмерĕ. Вăл, манка чирĕпе чирлекен лаша пек, сăмса витĕр йывăррăн сывлани тата сĕтел ҫинче хăй кĕсйине чиксе ҫӳремелли пысăк сехечĕ шаккани илтĕнсе тăчĕ. Половцев тĕлĕрсе кайнă пулĕ, тесе шухăшларĕ Яков Лукич, анчах лешĕ самăр та йывăр кĕлеткипе тенкел ҫинчен ҫĕкленсе калаҫа пуҫларĕ:

— Лукич, йĕнерсене йăт, эпĕ ыттисене илетĕп. Вĕсене шанчăклă вырăна кайса пытарăр. Тен, вĕсене лере, ăҫтаччĕ-ха... Э, мур илесшĕ, кизяксем купаланă сарайне пытарсан, э?

— Шанчăклă вырăн, атьăр,—кăмăллăн килĕшрĕ Яков Лукич, пӳлĕмрен тухса каясса кĕтменскер.

Вăл пĕр йĕнерне ҫĕклесе алли ҫине майласа хунăччĕ ĕнтĕ, ҫав вăхăтра Лятьевский, вĕри шывпа пĕҫертнĕ пек, сиксе тăчĕ те, куҫне урнă пек вылятса мăкăртатма пуҫларĕ:

— Мĕн тăватăр эсир? Мĕн тăвасшăн тесе ыйтатăп эпĕ сиртен?

Буркăна илме тесе пĕшкĕннĕ Половцев тӳрĕленсе тăчĕ.

— Ну, мĕн тата? Мĕн сире ҫав териех пăшăрхантарса пăрахрĕ?—тесе ыйтрĕ вăл сиввĕн.

— Мĕнле ăнланмастăр-ха эсир? Сире кирлех пулсан, йĕнерсемпе акă ҫак тимĕртăмăра пытарăр, пулеметпа дисксене кунта хăварăр! Эсир хăвăр пĕлĕш патĕнче дачăра пурăнмастăр вĕт, пулемет сире кашни минутрах кирлĕ пулма пултарать. Эсир ҫакна ăнланатăр пуль?

Кăштах шухăшласа тăнă хыҫҫăн, Половцев килĕшрĕ:

— Эсир тĕрĕс те калатăр пулас, радзивилловский йăхĕнчен тухнăскер. Апла пулсан, пĕтĕмпех кунта юлтăр. Ҫывăрма кай, Лукич, эсĕ халь кирлĕ мар ĕнтĕ.

Мĕн тери ҫирĕп сыхланса юлма пултарать иккен ĕлĕк ҫарта хăнăхса ҫитнĕ йăла! Яков Лукич мĕн ҫинчен те пулин шухăшласа илме те ĕлкĕреймерĕ, унăн ҫара урисем хăйсене хăйсемех «налево кругом» ҫаврăнчĕҫ те ĕшеннĕ кĕлисем ирĕксĕрех пĕрин ҫумне тепри сассăр перĕнчĕҫ. Яков Лукич хăй хыҫҫăн алăк хупăнсанах, йăнăш тунине ăнланса, именнĕ пек кĕхлетсе илчĕ. «Аташтарчĕ мана ҫав сухаллă шуйттан хăйне тӳрĕ тытнипе!» тесе шухăшларĕ.

Мĕн тул ҫутăличченех куҫ хупмарĕ вăл. Пăлхав ăнăҫлăн пулса иртессине шанса тăни хăйсем пăчланса ларассинчен, хăйĕн шăпине ним шухăшласа тăмасăрах ҫав Половецпа Лятьевскисем пек пĕтнĕ ҫынсемпе ҫыхăнтарнăшăн кая юлса ӳкĕннинчен хăранипе улшăнса тăчĕҫ. «Эх, васкарăм эпĕ, яшкана кĕрсе ӳкнĕ чăхă пек кĕрсе ӳкрĕм!»—хуйхăрчĕ Яков Лукич хăй ăшĕнче.—Манăн, ватă ухмахăн, аяккинчен кĕтсе тăмаллаччĕ, Александр Анисимовичпа малтанах килĕшмелле марччĕ. Вĕсем коммунистсене ҫĕнтерсе ҫиеле тухнă пулсан — акă ҫавăн чухне вĕсем ҫумне, янти ҫине, хутшăннă пулăттăм, капла акă — вĕсем мана нимĕнсĕрех улталаса хăварĕҫ... Ҫавнашкал шутлани те аван мар: эпĕ аяккинче пулам, тепри, виҫҫĕмĕш аяккинче пултăр — мĕн пулать-ха вара? Совет влаҫне ĕмĕрĕпех хамăр ĕнсе ҫинче ҫĕклесе ҫӳремелле-и? Капла та юрамасть! Вăл ĕнсе ҫинчен ыррăн анас ҫуках ĕнтĕ, ах, анас ҫук ҫав! Хăвăртрах мĕнле те пулин вĕҫлентĕрччĕ... Александр Анисимович ют патшалăхран десант антарасса, кубанецсем пулăшасса шантарать, ҫемҫе сарать те, ҫывăрма мĕнле пулать-ши? Ун пирки пĕр ырă турă ҫеҫ пĕлет! Эхер те союзниксем десант антарма килĕшмесен — ун чухне мĕн тумалла? Вунтăххăрмĕш ҫулхи пек, акăлчан шинелĕсем ярса парĕҫ, хăйсем вара килте кофе ĕҫсе ларĕҫ, арăмĕсемпе йăпанĕҫ,—ун чухне мĕн тăвăпăр-ха ĕнтĕ эпир вĕсен шинелĕсемпе? Шинель аркисемпе юнлă манкасене шăлса тасатăпăр ҫав, ҫавă ҫеҫ. Пĕтерсе хураҫҫĕ пире большевиксем, турă курать, пĕтерсе хураҫҫĕ! Вĕсемшĕн ку хăнăхнă япала. Ун чухне вара кам вĕсене хирĕҫ тăнă — пурте пĕтетпĕр. Дон таврашĕ тĕтĕмпе йăсăрлана пуҫлĕ!»

Ҫак шухăшсене пула Яков Лукич хуйха ӳкрĕ, вăл йĕрсе ярас пек хăйне хĕрхенчĕ. Чылайччен кĕхлетрĕ, йынăшрĕ, кĕлĕ сăмахĕсем пăшăлтатса сăхсăхрĕ, ҫакăн хыҫҫăн каллех пуҫĕнчен тухма пĕлмен шухăшне ырăпа татса пама хăтланса пăхрĕ: «Мĕн уйăрать Александр Анисимович ҫав хăрах куҫлă полякпа? Мĕншĕн вĕсем пĕрмай харкашаҫҫĕ? Малта мĕнле пысăк ĕҫ тăрать, вĕсем пурпĕр йăвари икĕ йытă пек тулашаҫҫĕ. Ялан ҫав хăрах куҫли пуҫарса ярать, суеҫҫĕ вăл, пĕрре пĕр майлă, тепре — тепĕр майлă ҫаптарать. Ирсĕр ҫын, эпĕ ăна ним чухлĕ те шанмастăп. Ахальтен мар ĕнтĕ ваттисем: «Хăрах куҫлă ҫынна, курпуна тата хăвăн арăмна ан ĕнен», тенĕ. Вĕлерет ăна Александр Анисимович, тупата, вĕлерет! Ну, ан тив, турăпа пĕрле пултăр, пĕрех пирĕн тĕне тытакан ҫын мар».

Чĕрине лăплантаракан ҫакнашкал шухăшсемпе Яков Лукич юлашкинчен кĕске вăхăта йывăр ыйхăпа ҫывăрса кайрĕ.

* * *

Хĕвел тухса сарăлсан тин Яков Лукич ыйхăран вăранчĕ. Пĕр сехет тенĕ пек ҫывăрсах вăл темĕн чухлĕ тĕлĕк курма пултарчĕ, тĕлĕксем те пĕринчен пĕри килĕшӳсĕр, ирсĕр пулчĕҫ. Е ăна хăй, ҫамрăк та капăрскер, авланакан каччă тумĕпе, чиркӳре

аналой умĕнче тăнă пек курăнчĕ, унпа юнашар — вечете тăмалли вăрăм кĕпе тăхăннă Лятьевский, вăл çӳхе пĕркенчĕк пĕркеннипе шурă пĕлĕт айĕнче пек туйăнать, вăл шуххăн пускаласа тăрать, аскăннăн мăшкăлласа кулакан куçĕпе пăхать, пĕрмаях намăссăррăн илĕртсе мăчлаттаркаласа илет.

Яков Лукич ăна ак çапла калать пек: «Вацлав Августович, пире иксĕмĕре вечечете тăни килĕшмест: эсĕ, начар арçын пулсан та, арçынах. Мĕне юратăр çакнашкал хăтланни? Авланнă çын-çке эпĕ. Çакăн çинчен пĕтĕмпех пупа каласа пĕлтерер эппин, унсăр вăл пире мăшăрлантарса çын кулли тăвĕ». Анчах Лятьевский хайĕн сивĕ аллипе ун аллине тытать те ун патнелле ӳпĕнсе, ĕнентермелле çапла пăшăлтатать пек: «Ху авланни çинчен никама та ан кала! Манран, савнă Яша, питĕ лайăх арăм пулать, тĕлĕнсе кайăн!»—тет пек. «Мур çиесшĕ, хăрах куçлă ухмах!»—тесе кăшкăрасшăн пек Яков Лукич, аллине Лятьевский аллинчен туртса илесшĕн хăтланса пăхать пек, анчах туртса илеймест,—Лятьевский пӳрнисем сивĕ, çирĕп, Яков Лукичăн сасси илтĕнмест те, тути те мамăкран тунă пек... Яков Лукич тарăхнипе лачлаттарса сурчĕ те вăранса кайрĕ; унăн сухалĕ çинче те, минтерĕ çинче те лăймака сурчăк...

Вăл сăхсăхса хĕрес хума тата «свят, свят» тесе пăшăлтатма та ĕлкĕреймерĕ, каллех тĕлĕк курчĕ. Вăл хăйĕн Семен ятлă ывăлĕпе Агафон Дубцовпа тата тăван хуторĕнчи ытти çынсемпе темле пысăк плантаци тăрăх çӳрет пек, шурă тумтир тăхăннă çамрăк хĕрарăм-надсмотрщицăсем хушнипе помидор пуçтарать. Яков Лукич та, ун тавра тăраканисем те, темшĕн çаппа-çарамас, анчах хăйсем çаплинчен Яков Лукичран урăх никам та вăтанмасть. Дубцов ун еннелле тӳртĕн тăрса помидор тĕмĕ патне пĕшкĕнет, Яков Лукич вара, кулнипе те тарăхнипе пӳлĕнсе, çапла калать пек ăна: «Эсĕ çав териех ан пĕшкĕн-ха, намăса пĕлменскер! Хĕрарăмсенчен те пулин вăтан!»—тесе калать пек.

Яков Лукич помидорсене татнă чухне кукленсе ларать, хăрах аллипе кăна ĕçлет, сулахай аллине вăл, шыва кĕме хатĕрленсе кĕпи-йĕмне хывса пăрахнă çын пек, тытса тăрать...

Ыйхăран вăрансан, Яков Лукич чылайччен кровать çинче ларчĕ, хăранă чухнехи пек пĕр тĕлсĕр пăхрĕ. «Çакăн пек ирсĕр тĕлĕксем ырра курăнмаççĕ. Инкек пулать»—тесе шутларĕ вăл чĕрине пуснă йывăрлăха туйса тата халь çеç курнă тĕлĕксене аса илнипех урайне суркаласа.

Вăл çав тери салху кăмăлпа тумланчĕ, хăй патне пырса ачашланасшăн пулнă кушака тапса ячĕ, ирхи апат вăхăтĕнче пĕр сăлтавсăрах арăмне «ухмах» тесе хучĕ. Кинне вара, вăл хĕрарăм мар, пĕчĕк хĕрача пулнă пек, хуçалăх ĕçĕсем çинчен калаçнă чухне калаçăва вирăнсăр хутшăннăшăн, кашăкпа хăмсарчĕ. Ашшĕ хăйне чараксăр тытни Семена хаваслантарчĕ: вăл, пит-куçне хăраса ӳкнĕ чухнехи пек айванла чалăштарса, арăмне куç хĕсрĕ, арăмĕ сасăсăр кулса пĕтĕм кĕлеткипе чĕтренсе ларчĕ. Çак вара Яков Лукича йăлтах тарăхтарса çитерчĕ; вăл кашăкне сĕтел çине пăрахрĕ те çиленнипе тытăнчăклăн кăшкăрса тăкрĕ:

— Шăл йĕретĕр иккен-ха, акă часах макăрмалла пулĕ!

Вара çисе тăранмасăрах мăнаçлăн тăрса, Яков Лукич сĕтел хушшинчен тухасшăн пулчĕ, анчах, инкеке пула, асăрхамасăр алтупанĕпе чашăк хĕрринчен тĕренчĕ те çисе пĕтермен вĕри купăста шӳрпине йĕмĕ тăрăх тăкса ячĕ. Çакăн хыççăн кинĕ, питне аллисемпе хупласа, çенĕке тухса сирпĕнчĕ. Семен пуçне аллисем çине усса сĕтел хушшинчех ларса юлчĕ; кулнипе унăн çирĕп çурăмĕ чĕтренчĕ, сарлака хулпуççийĕ турткаланса тăчĕ. Яков Лукичăн яланах çирĕп кăмăллă арăмĕ те кулмасăр чăтса тăраймарĕ.

— Мĕн пулчĕ сана паян, ашшĕ?—кулса ыйтрĕ вăл.—Кăмăлу пăсăлчĕ-и, е усал тĕлĕксем куртăн-и?

— Эс ăçтан пĕлетĕн, ват тухатмăш?—çав тери тарăхса кăшкăрчĕ Яков Лукич, çавăнтах сĕтел хушшинчен сиксе тухрĕ.

Кухня алăкĕ умĕнче вăл алăк янахĕнчи пăтаран çакланса çĕнĕ сатин кĕпи çаннине чăвси таранах çурса пăрахрĕ. Вара хăй пӳлĕмне кайса арчара кĕпе шыра пуçларĕ те, стена çумне тирпейсĕррĕн таянтарнă арча хуппи ун ĕнси çине хыттăн лаплатса ӳкрĕ.

— Мур шăлса каясшĕ! Мĕнле кун килсе тухрĕ паян!—чĕререн татăлса каларĕ Яков Лукич тенкел çине ларнă май, ĕнси хыçне сиксе тухнă пысăк мăкăльне ерипен хыпашласа.

Вăл аран-аран тумланчĕ: купăста шӳрпипе йĕпеннĕ йĕмне, çурса пăрахнă кĕпине улăштарса тăхăнчĕ, çав тери васканипе йĕм катине тӳмелеме те манса кайрĕ. Яков Лукич çаплипех тухса утрĕ, тĕл пулса сывлăх сунакан хĕрарăмсем мĕншĕн вăрттăн кулкаласа хăйĕнчен хăвăрттăн пăраннинчен тĕлĕнсе, колхоз правлени патнелле çитнĕччĕ ĕнтĕ... Хĕрарăмсем мĕншĕн кулнине ăна хăйне хирĕç сĕнкĕлтетсе килекен Щукарь мучи пĕр именмесĕр кăтартса пачĕ.

— Ватăлатăн пулас çав, савнă Яков Лукич?—хĕрхеннĕ пек ыйтрĕ вăл чарăнса тăрса.

— Эсĕ çамрăкланатăн-и вара?—Сăнунтан темшĕн курăнсах каймасть! Куçусем, кролик кăпни пек, хĕрелсе кайнă, йĕпенсе тăраççĕ.

— Куçăмсем çĕрле вуланипе йĕпенеççĕ çав. Ватлăхăмра тĕрлĕ пысăк ăс паракан кĕнекесем вулатăп, çапах та хама тирпейлĕн тытатăп, эсĕ акă, старик пекех, манакан пулнă...

— Мĕн енчен манакан пултăм вара эпĕ?

— Кĕçĕн алăкна хупма манса кайнă, выльăхна урама кăларатăн...

— Семен хупать,—калас килменрен каласа хучĕ Яков Лукич.

— Сан хапхуна Семен хупса çӳрес сукха...

Тем ырă марра сиснипе тĕлĕннĕ Яков Лукич пуçне пĕшкĕртсе ахлатса ячĕ те, пӳрнисене хăвăрттăн вылятса, йĕм катине тӳмелеме тытăнчĕ. Çак телейсĕр ир хăй çине тиеннĕ инкек-синкекпе йывăрлăхсем хыççăн, Яков Лукич правлени картишĕнче тата тахăм ӳкерсе хăварнă çĕрулми çине пусса ăна лапчăтрĕ, ури шуса кайнипе тăсăлсах ӳкрĕ.

Чăнах та, ку ытлашшипех пулчĕ ĕнтĕ, çаксем пĕтĕмпе ахальтен мар килсе тухрĕç! Тĕшмĕшлĕ Яков Лукич хăйне питĕ пысăк инкек кĕтнине шанса тăчĕ. Вăл, мĕскĕн, тутине чĕтретсе, Давыдов пӳлĕмне кĕрсе тăчĕ.

— Чирлерĕм эпĕ, Давыдов юлташ, паян мана ĕçрен хăтарăр. Ман вырăна кладовщик юлать,—терĕ вăл.

— Эсĕ чăнах та сăнтан ӳкнĕ,—Лукич,—хĕрхенсе хирĕç тавăрчĕ Давыдов.—Кайса кан. Фельдшер патне ху кĕрсе тухатăн-и, килне пыма калас-и?

Яков Лукич аллине шанчăксăр сулчĕ.

— Фельдшер мана пулăшас çук, хамах вырта ирттерсе ярăп...—терĕ вăл.

Килне çитсен вăл чӳречесене пурне те хуптарчĕ, хывăнса кровать çине выртрĕ те тасăта ытла инçетрех мар çӳрекен инкеке чăтăмлăн кĕте пуçларĕ... «Пĕтĕмпех çак ылханлă власть айăплă!—ӳпкелешрĕ вăл.—Ăна пула кăнтăрла та, çĕрле те канăç çук! Каçсенче темле ухмахла тĕлĕксем курăнаççĕ, çакнашкал ирсĕр тĕлĕк вăл ĕмĕрне те курман; кăнтăрла, кăкарса янă пекех, пĕр инкек хыççăн тепĕр инкек хыçалтанах йĕрлесе çӳрет... Ку власра эпĕ хама пурăнма турă çырнă вăхăтчен пурăнаймастăп! Вăхăт çитичченех хутланса выртăп!»

Анчах Яков Лукичăн пăшăрханса кĕтни паян ахалех пулчĕ: инкек тасăта чарăнса тăнă-мĕн, ун патне вăл тепĕр икĕ талăкран кăна тата пачах хăй кĕтмен енчен килсе тухрĕ...

Çывăрас умĕн Лукич паттăрланма тесе пĕр стакан эрех ĕçрĕ, çĕре лăпкăн, тĕлĕк курмасăрах ирттерчĕ, ирхине вара кăмăлне пусарса: «Иртсе кайрĕ!» тесе хаваслăн шухăшласа илчĕ. Кулленхи ĕçсемпе хĕвĕшсе кун ирттерчĕ, анчах тепĕр кунне, вырсарникун, касхи апат вăхăтĕнче арăмĕ темшĕн пăшăрханса ӳкнине асăрхарĕ те, унран çапла ыйтрĕ:

— Мĕн эсĕ, амăшĕ, кăмăлсăр пек туйăнатăн? Ĕне чирлемен пулĕ те? Ĕнер эпĕ те асăрханăччĕ: вăл кĕтӳрен темле сĕлкĕш таврăнчĕ.

Хуçа арăмĕ ывăлĕ енне çаврăнчĕ:

— Сема, пĕр самантлăха тух-ха, асупа калаçмалли пур...

Тĕкĕр умĕнче çӳçне тураса тăракан Семен кăмăлсăррăн каласа хучĕ:

— Мĕн эсир яланах темле вăрттăн калаçатăр? Леш пӳлĕмре — атте тусĕсем кунĕнçĕрĕн пăшăлтатаççĕ, шуйттан вĕсене пирĕн ĕнсе çине утлантарнă пек, эсир — кунта... Сирĕн вăрттăнлăхăра пула часах килтен тухса тарма тивет пулĕ. Кил мар ĕнтĕ, хĕрарăм мăнастирĕ: пур çĕрте те пăшăлтатни те вăрттăн калаçни кăна...

— Ну, ку вара санăн выльăхла ăсупа тавçăрса илмелли ĕç мар!—хĕрсе кайрĕ Яков Лукич.—Тухса кай, терĕç пулсан — тух! Темме эс нумай калаçакан пулнă-ха... Асту, чĕлхӳне çырт, унсăрăн ăна часах хĕстерсе лартатăп!

Семен çиленсе, ашшĕ енне çаврăнчĕ те хупă сасăпа çапла каларĕ:

— Эсир те, атте, сахалтарах хăратăр! Пирĕн çемьере хăравçăсемпе пĕчĕк ачасем çук. Эпир пĕрне-пĕри хăратма пуçласан, пире пурне те начар пулса ан тăтăр...

Вăл, алăка хыттăн хупса, тухса кайрĕ.

— Акă, пăхса савăн ĕнтĕ ывăлна! Мĕнле паттăрланнă йытă çури!—терĕ Яков Лукич чĕререн тарăхса.

Яков Лукичпа нихçан та хирĕçмен арăмĕ лăпкăн сăмахлама тытăнчĕ:

— Шухăшласа пăхсан, Лукич, санăн ĕçсĕр-мĕнсĕр тăранса пурăнакан çыннусемпе пурăнма пире питех савăнăçлă мар. Вĕсемпе эпир сехĕрленсе кăна пурăнатпăр,—кăмăл пăтранать! Хуторти влаçсем ухтарса вĕсене кунта тупсан, кĕтсе кăна тăр,—пĕтрĕмĕр вара! Пурнăç мар пирĕн, чĕтресе кăна тăр, кашни чăштăртатнă сасăран, алăк шаккаснине илтмессерен шартах сикетĕп! Çакнаш-

кал пурнăçа курма никама турă ан хуштăр! Саншăн та, Семушкăшăн та чĕре ыратать. Пирĕн патăрта пурăнакансем ҫинчен пĕлсенех вĕсене тытса каяççĕ, вĕсемпе пĕрле сире те илсе каяççĕ. Мĕн тăвăпăр вара эпир, хĕрарăмсем, ун чухне? Хутаç ҫакса тĕнче тăрăх ҫӳрĕпĕр-и?

— Чарăн!—пӳлчĕ ăна Яков Лукич.—Хам мĕн тунине эпĕ санпа Семкăсăрах пĕлетĕп. Эсĕ мĕн ҫинчен каласшăнччĕ? Кала!

Вăл икĕ алăка та таччăн хупрĕ, унтан арăмĕ ҫумне пырса ларчĕ. Малтанах вăл хăй шикленнине палăртмасăр итлерĕ, унтан текех лăпланса лараймасăр, сак ҫинчен сиксе тăчĕ те ним тума пĕлмесĕр пăшăлтатса, кухня тăрăх хăвăрттăн утса ҫӳре пуçларĕ.

— Пĕтрĕмĕр! Тăван анне пĕтерчĕ! Пуça ҫирĕ!

Вăл, кăштах лăпланнă хыççăн, икĕ пысăк курка умлăн-хыçлăн сивĕ шыв ĕçрĕ, унтан, тарăн шухăша кайса, каллех сак ҫине ларчĕ.

— Халь мĕн тăвас тетĕн, ашшĕ?

Арăмĕ ыйтнине хирĕç Яков Лукич тавăрса каламарĕ. Вăл ăна илтмест...

Арăмĕ каласа панинчен вăл ҫакна пĕлчĕ: нумаях та пулмасть вĕсем патне тăватă карчăк килнĕ те хăйсене офицер господинсем патне ертсе кĕме ҫине тăрсах ыйтнă. Офицерсем хăйсене пытарса усракан Яков Лукичпа Шырланпуҫĕнчи ытти казаксем пулăшнипе восстани пуçарса ярса, турра ĕнентермен Совет влаçне хăçан сирпĕтсе антарма шутланине ҫав тери пĕлесси килнĕ карчăксен. Яков Лукич арăмĕ хăйсем патĕнче нимле офицерсем те пурăнман, пурăнмаççĕ те тесе ĕнентерме кăлăхах тăрăшнă. Ҫакна хирĕç курпун та усал Лущилина карчăк ҫиленсе ҫапла каланă: «Эсĕ ҫамрăк-ха, матăшка, мана суйма! Офицерсем хĕллеренпех сирĕн горницăра пурăнни ҫинчен хăвăн тăван пăянаму пире каларĕ. Пĕлетпĕр эпир вĕсем ҫынсенчен пытанса пурăннине, анчах вĕсем ҫинчен эпир никама та каласа парас ҫук. Ертсе кĕр пире асли патне, Александр Анисимович тесе чĕнекенни патне!»

...Половцев патне кĕнĕ чух Яков Лукич хăй унчченхи пекех чĕтренине туйса тăчĕ. Половцев, мĕн пулса иртнине илтсенех, урса кайса, чăмăрĕсене ирĕк парĕ тесе шутларĕ вăл, тата, ăна йытă пекех пăхăнакансекер, хăйне пĕтерсе хурасса кĕтрĕ. Анчах Яков Лукич пăлханнипе сăмахсене пăтраштаркаласа, арăмĕнчен мĕн илтнине ним пытарса хăвармасăр каласа кăтартсан, Половцев кулса ҫеç илчĕ:

— Ним те калаймастăн, лайăх конспираторсем эпир... Мĕн вара, ҫапла пулса тăрасса кĕтмеллеччĕ те. Сирĕн аннĕр пире улталарĕ эппин, Лукич? Пирĕн халь, сан шутупа, мĕн тумалла?

— Сирĕн ман патăртан тухса каймалла, Александр Анисимович,—терĕ Яков Лукич хăйне ҫапла кĕтсе илнипе хăюланса.

— Хăçан?

— Мĕн чухлĕ хăвăртрах, ҫавăн чухлĕ лайăхрах. Шухăшласа тăма кăшт та вăхăт ҫук.

— Кăна эпĕ сансăр та пĕлетĕп. Ăçта каймалла?

— Пĕлме пултараймастăп. Ăçта вара юлташ... Айăп ан тăвăр-ха, тархасшăн, йăнăш каланăшăн! Вацлав Августович господин ăçта вара?

— Ҫук вăл. Çĕрле килет, ыран эсĕ ăна сад патĕнче курма пултаратăн. Атаманчуков та хутор хĕрринче пурăнать-и? Ик-виçĕ кун хушши ҫавăнта пулатăп... Ертсе кай!

Вĕсем пытанкаласа ун патне ҫитрĕç, Яков Лукичран уйрăлас умĕн Половцев ҫапла каларĕ:

— Ну, сывлăхлă пул, Лукич! Аннӳ пирки шухăшласа пăх эс, Лукич... Вăл пирĕн мĕнпур ĕçе путарса лартма пултарать... Эсĕ ҫакăн ҫинчен шухăшласа пăх... Лятьевские кĕтсе ил, эпĕ халь ăçта иккенне пĕлтер.

Вăл Яков Лукича ыталарĕ те унăн хырăнман кăштăркка питне типĕ тутипе сĕртĕнчĕ, унтан аяккинелле пăрănса, ҫуртăн тахçантанпах шуратман стени ҫумне ҫыпçăнса ларнă пек, куçран ҫухалчĕ...

Яков Лукич килне таврăнса ҫывăрма выртсан, арăмне яланхи пек мар ҫиллессĕн стена ҫумнелле хĕстерсе ҫапла каларĕ:

— Эсĕ, акă мĕн... эсĕ аннене текех апат ан пар... шыв та ан пар... пурпĕрех вăл паян пулмасан, ыран вилет...

Яков Лукич арăмĕ, арçыннипе вăрăм та ҫăмăл мар пурнăçа пурăннăскер, ахлатса ҫеç ячĕ:

— Яша! Лукич! Эс унăн ывăлĕ-ҫке!

Ҫакăн хыççăн Яков Лукич, тен, хăйсем пĕрле килĕштерсе пурăннă вăхăтра пирвайхи хут пулĕ, хăйĕн ватăлнă арăмне вăйпах сулса ҫапрĕ те тытăнчăклăн:

— Шăплан! Вăл пире пĕтерсе хурать! Шăплан! Ссылкăна лекес тетĕн-им?—терĕ хăйăлтатса.

Яков Лукич вырăн ҫинчен тăрса арчана питĕрнĕ пысăкăх мар ҫăрана уҫрĕ, унтан ăшă ҫенĕке ерипен тухса, амăшĕ пурăнакан пӳлĕм алăкне ҫăраласа илчĕ.

Ватă карчăк ура сассине илтрĕ. Тахçантанпах хăнăхса ҫитнĕ вăл ăна ура сассинчен паллама... Епле вĕренсе ҫитмелле мар пулнă-ха унăн ывăлĕ мĕнле утнине? Аллă ҫул каялла вăл, ун чухне ҫамрăк та чипер казачка, кил хушшинчи ĕçсенчен е апат пĕçерессинчен пăрăнса, хăйĕн малтанхи пĕртенпĕр ытараймн ывăлĕн, тин çеç упаленме пăрахса утма вĕренекен Яшенькин, ҫара урисем юнашар пӳлĕмри урайĕнче чарăна-чарăна ҫатлаттарса пуснине хаваслăн итлесе тăратчĕ. Кайрантарах вăл шкултан таврăнакан Яшуткăн пĕчĕк урисем крыльца ҫине сиккелесе хăпарнине илтетчĕ. Ун чухне вăл, качака путекки пекех, лара-тăра пĕлместчĕ, савăнăçлă ачаччĕ. Амăшĕ астумасть вăл ҫав ҫулсенче хăçан та пулин утса ҫӳренине, яланах сиккелесе чупатчĕ, качака путекки пекехчĕ ҫав ĕнтĕ... Кашни пурăнакан ҫыннăнни пекех, пурнăç малалла шурĕ, инкек-синкекĕ унăн вăрăма пычĕ, савăнăçĕ кĕске вăхăтлăха ҫеç, акă вăл—ватăлас енне сулăннă хĕрарăм, ирĕксĕрех вара каçсерен Яшăн, кĕрнеклĕ те тĕреклĕ каччăн, хăй вăрттăн мухтакан ывăлĕн, шуса пынă чухнехи пек ҫăмăл уттине итлесе выртать. Вăйăран чылай каçа юлса таврăнсан, унăн ҫемçе атти урай хăмине перĕнмен пекех туйăнать—ҫавăн пек ҫăмăл та хăвăрттăн утма пултарнă ун ывăлĕ каччă чухне. Ывăлĕ ҫитĕнсе ҫын пулнине сисмерĕ те вăл. Ывăлĕ йывăррăн пусса утма тытăнчĕ. Унтан арлăарăмлă пулчĕ, унтан вăтам ҫулсене ҫитсе хуçа пулчĕ. Нумайранпа илтет вăл ывăлĕ ҫиреппĕн пусса утнине, уншăн пулсан вара вăл халь те унченхи пекех Яшенька, вăл ăна тăтăшах тĕлĕкре лара-тăра пĕлмен шурă ҫӳçлĕ пĕчĕк ача пек курать...

Акă халь те, ун ури сассине илтесе, вăл халсăр та ватă сассипе:

— Яша, эсĕ-и ку?—тесе ыйтрĕ.

Ывăлĕ ăна хирĕç чĕнмерĕ. Вăл кăштах алăк патĕнче тăчĕ те, темшĕн хăвăрттăн утса, картишне тухрĕ. «Лайăх казак, ырă хуçа ҫуратрăм,—шухăшларĕ карчăк йăхи витĕр,—тав турра, пăхса ҫитĕнтертĕм! Пурте ҫывăраççĕ, вăл акă витене кайрĕ, хуçалăхри ĕçпе тăрмашать». Вара ача амăшĕсен пулакан мăнаçлă кулă унăн типнĕ тĕссĕр тутине кăштах хускатса илчĕ...

Ҫав каçран килти пурнăç япăхланчĕ...

Чирлĕ те хевтесĕр карчăк ҫаплах пурăнчĕ-ха; вăл татăк ҫăкăр та пулин, пĕр сыпкăм шыв та пулин пама ыйтрĕ, Яков Лукич вара, пăлтăрта ерипен утса иртнĕ чух, унăн аран-аран кăна тухакан шăпланнă сассине илткелерĕ:

— Яшенька! Ывăлăм! Мĕншĕн-ха ку? Шыв та пулин парăр-ха!

Пурте тенĕ пекех пысăк та ирĕк пӳртре пулма пăрахрĕç. Семенпа арăмĕ кăнтăрла та, ҫĕрле те картишĕнче иртерчĕç, Яков Лукич арăмĕ вара, хуçалăх ĕçĕпе пӳрте кĕме тĕл килсен, унтан макăрнипе чĕтреве ерсе тухать. Анчах иккĕмĕш талăк вĕçленес умĕн, каçхи апат ҫинĕ чухне, пĕр сăмах калаçмасăр чылай вăхăт иртсен, Яков Лукич: «Ҫак вăхăта кунта, лаçăра пурăнса иртерер», тесен, Семен пĕтĕм кĕлеткипе ҫӳҫенсе илчĕ, сĕтел хушшинчен тăчĕ те, такам тĕртнĕ пек, сулăнса тухса кайрĕ...

...Тăваттăмĕш кунне пӳрт шăпланчĕ. Яков Лукич чĕтрекен аллисемпе ҫăрана уçса арăмĕпе пĕрле амăшĕ пурăннă пӳлĕме кĕчĕ. Карчăк алăк урати патĕнче, урайĕнче, выртать; хĕл кунĕсенчех сак ҫине такам ăнсăртран манса хăварнă кивĕ сăран алсишне вăл хăйĕн шăлсăр шăлтунисемпе чăмласа пĕтернĕ... Шыв ĕçме вăл, пур енчен илсе пăхсан та, чӳрече хупписем хушшинчи хушăкран кантăк сакки ҫине сăрхăнакан шывпа ҫырлахнă пулас; ҫав хушăкран куçа курăнман вĕтĕ ҫумăр сăрхăннă, тен, ҫак тĕтреллĕ ҫуллахи ир сывлăм та ӳкнĕ пулĕ...

Карчăкăн тантăшĕсем унăн типнĕ, пĕркеленнĕ ӳтне ҫуса тасатрĕç, тумлантарчĕç, макăрса илчĕç, анчах пытарнă чухне Яков Лукич пек чĕререн татăлса йĕрекен урăх пĕр ҫын та пулмарĕ. Чĕри ыратни те, ӳкĕнни те, амăшне ҫухатнăшăн хуйхăрни те, пурте—ҫак кун унăн чунне йывăррăн пусрĕ.

* *
*

Тăван ҫĕршывăма чунтан саватăп.
Ун евĕр туйăм тек пĕлместĕп эп.
Йывăрлăхра унпа хавхаланатăп,
Хавасланатăп унăн чапĕпе.

Йăлтăртатса кулса хĕвел тухать-и,
Укеççĕ-и садра сар ҫулçăсем;
Е чалăш ҫумăр чашлатса ҫăвать-и,
Пурте—чĕре ытараймн сăнсем.

Хĕпĕртесе сĕм вăрмана кĕретĕп:
Уй-хирпеле утатăп ярăнса.
Йĕри-таврa тулли телей-тивлетĕм.
Тăван ҫĕршывăм, тĕнчере ку чух

Чуна савать юмах пек курăнса:
Санран чаплăраххи ниçта та ҫук.

**Федор ТИХОНОВ.**

# ĔÇЧЕН ХАЛĂХ УЯВĔ

Шупашкарти юрă уявне пĕтĕм республикăри колхозниксем, рабочисемпе служащисем, çамрăксемпе ваттисем кăçал пĕлтĕрхинчен те лайăх хатĕрленчĕç. Çуракине аначлан вĕçленĕ хыççăн республикăри пур районсенче те юрă праçникĕсем пула-пула иртрĕç. Ку уявсенче колхозлă ял çыннисем ялхуçалăхĕнче тунă ÿсĕмсене, ĕçчен чăваш халăхĕ ĕçре кăна мар, вăйăра та, ташă-юрăра та маттур иккенне кăтартса пачĕç.

Шупашкарта çак куна чăтаймасăр кĕтрĕç. Унта та кунта, юрă уявĕ пулассине пĕлтерекен пысăк та капăр афишăсем курăнма пуçларĕç. Етĕрне çулĕ çинче, юрă уявне ирттермелли вырăнта, виçĕ сцена-площадка туса лартрĕç. Суту-илÿ палаткисемпе столовăйсем ĕçле пуçларĕç, кĕнеке киоскĕсемпе спорт площадкисем уçăлчĕç. Шупашкарти юрă уявне республикăри художествăллă пултарулăх кружокĕсенчен виçĕ пин çын ытла столицăна поездсемпе, машинăсемпе пухăнчĕç те, пĕтĕм хула юрă-кĕвĕ шавĕпе тулса ларчĕ.

Кĕтнĕ кун, июнĕн 27-мĕшĕ, çитрĕ. Анчах хĕвел тухнă-тухманах пĕтĕм тавралăха çумăр пĕлĕчĕ хупăрласа илчĕ. Тÿлек те ăшă çумăр шăпăртатса çăвать. Çумăр хула урамĕсене, вăрманти йывăçкурăка çуса тасатрĕ, колхоз хирĕсенчи парка ÿсекен тырпула, ешĕл сад пахчисене шăварчĕ. Çак чаплă уяв кунĕнче çутçанталăк ĕççыннисене юриех сиплĕх шывĕпе сапса хăварнăн туйăнчĕ. Шăрăх çанталăк сасартăк уçăлса кайрĕ, пĕтĕм тавралăх таса та уçă сывлăшпа сывласа ячĕ. Тÿлек çумăр чарăннă чарăнманах, юрă уявĕ пулмалли вырăна вĕçĕ-хĕррисĕр халăх хускалчĕ. Машинăсемпе те, мотоциклсемпе те, велосипедсемпе те, çуран та—пиншер çын ешĕл уçланка пухăнма тытăнчĕ. Пур çĕрте те юрă кĕвви янăраса тăрать.

Сехет йĕпписем ерипенех вуник-





Етĕрне çулĕ çинче халăх юрă уявне йышлăн пухăнчĕ.



Улатăр çамрăкĕсем «Гопак» ташша питех те ăста ташласа кăтартрĕç.

Улатăрти культура çуртĕ çумĕнчи художествăллă пултарулăх кружокĕн членĕсем Хмаровпа Сагитова «Подмосковный перепляс» ташша ташлаççĕ.



кĕ тĕлне çывхараççĕ. Трибуна çине республикăри юрă уявне ирттерекен комисси председателĕ М. Романова юлташ улăхать. Вăл Совет халăхĕ, çав шутрах чăваш халăхĕ те, иртнĕ çулталăк хушшинче тунă ÿсĕмсем çинчен калать.

Романова юлташ, юрă уявне пуханнисене саламласа, праçник уçăлнине пĕлтерет.

Пĕтĕм тавралăха янăратса Совет Союзĕн гимнĕ илтĕнсе каять. Хăватлă юрăпа пĕрле çÿлĕ мачта тăрăх Совет Союзĕн пысăк ялавĕ шуса хăпарать те лăпкă çилпе мăнаçлăн вĕлкĕше пуçлать. Унăн икĕ енĕпе тăванла республикăсен ялавĕсем вĕлкĕшеççĕ.

Пысăк сцена-площадка çине тăватă пин çынтан пĕрлештернĕ хор йĕркеленсе тăнă. Таврара Гимн кĕвви шăпланма кăна ĕлкĕрет, дирижер паллă парсанах тă-

Чăваш ташши те, украинецсен ташши пекех, кăмăла каять.







Волковпа Мясников юлташсем чăваш халăхĕн çĕнĕ юррисене калаççĕ.

Пĕрлештернĕ хор хыççăн сцена-площадка çине районсенчен килнĕ художествăллă пултарулăх кружокĕсем тухрĕç. Акă сцена çинче Улатăр районĕнчи пĕрлештернĕ хор вырăн йышăнать. Вăл А. Новиков композитор çырнă «Есть такая партия» ятлă юрра юрласа парать.

Улатăр çамрăкĕсем пĕрин хыççăн тепри хăйсен пултарулăхне кăтартаççĕ, пĕр юрă хыççăн тепĕр юрă шăранать, тем тĕрлĕ ташăсем кăтартаççĕ вĕсем. Уçланкăри репродукторсенчен сатур ташă кĕвви шăранса тухать те ташлакан хĕрпе качча курасшăн пурте сцена еннелле туртăнаççĕ. Хмаровпа Сагитова çамрăксем «Подмосковный переапляс» ташша ташла пуçлаççĕ. Вĕсене пăхатăн та чун савăнать: мĕн чухлĕ вăй, хастарлăх, савăнăç çиçсе тăрать вĕсен пичĕсем çинче. Чăнах та, пурăнмашкăн пирĕн пурнăç тулăх пулнине, юрлама та аваннине чĕрепе туйса илетĕн.

Сцена çине çамрăксен çĕнĕ ушкăнĕ йĕркеленсе тăрать. Вĕсем украина ташшине ташлаççĕ. Халь ĕнтĕ чăннипех кунта украинецсем те хăнана килнĕн туйăнса каять.

Варринчи сцена-площадка пушанма çеç ĕлкĕрет, виççĕмĕш площадкăна Ĕçлĕх Хĕрлĕ ялав орденлĕ Шупашкарти электроаппаратура заводĕнчи художествăллă пин çын пĕр харăс юрласа ярать. Пĕрлештернĕ хор В. Мурацелин «Партия наш рулевой» ятлă юррине юрланипе уяв пуçланчĕ. Хора Чăваш АССР искусствисен тава тивĕçлĕ деятелĕ, Сталинла премии лауреачĕ Ф. Лукин композитор ертсе пычĕ. Ку юрă хыççăн хор Ф. Лукинăн «Тăван хула», Чăваш АССР искусствисен тава тивĕçлĕ деятелĕ Г. Хирбю композиторăн «Атăл» юррисене юрласа пачĕ. Çав хушăра хора Ф. Лукин, Ф. Чемоданов, Г. Хирбю композиторсем ертсе пычĕç.

M. Глинка çырнă «Иван Сусанин» оперăри «Славься» ятлă финал юррине шăрантара пуçласан, пĕтĕм уçланкă сывлама чарăннă пек пулчĕ. Хăватлă музыка таçти-таçти çĕрсене юхса кайнăн туйăнчĕ, вăл вырăс халăхĕн вăйне, пĕтĕм халăх тĕрекне кăтартса пачĕ.



А. Акрамовская «Как пойду я на быструю речку» ятлă вырăс халăх юррине юрлать.



«Броневик» колхозри художествăллă кружок хăйĕн пултарулăхне кăтартать.



Кĕслеçĕсен ансамблĕ чăваш композиторĕсен юррине калать.

Шупашкарти 1-мĕш номерлĕ типографи хорĕ.



рă пултарулăх коллективĕ йышă-нать. Вĕсем 19 номер кăтартаççĕ. Çав вăхăтра пĕрремĕш площадкă-ра Канашри вагонсем юсакан завод клубĕн хорĕ Ф. Лукинăн «Пире парти ырлăх пачĕ» юрра юрлать.

Виççĕ площадка-сцена çинче те, черетпе ылмашăнса, районсенчен килнĕ художествăллă пултарулăх кружокĕсем хăйсен ăсталăхĕпе халăха тĕлĕнтереççĕ. Пĕлтĕр кĕслеçĕсен ансамблĕ юрă праçникĕнче пулманччĕ-ха, кăçал вăл та пур, Кĕслеçĕсем вырăсла та чăвашла кĕвĕсене каласа кăтартаççĕ.

Сцена çине икĕ ватă çын тухсан, пурте вĕсене саламласа алă çупма тытăнчĕç. Вĕсенчен пĕри учитель, тепри колхозник. Пĕри шăпăр калать, тепри кĕсле калать. Пĕри çамрăк ăрава вĕрентсе ӳстерет, тепри колхозра çултан-çулах тухăçлă тырпул туса илет.

Волковпа Мясников юлташсем малтанах авалхи чăваш кĕввине каласа параççĕ. Кĕсле, хурланса макăрнă евĕр, ерипен, çурма сассăн тĕнкĕлтетет, ахăрнех вăл хăй сассинчен хăй хăрать темелле, шăпăр чĕрене ыраттарса йĕрет. Мĕн тери хурлăхлă та мĕскĕн пулнă ĕлĕк-авал чăваш халăхĕн кун-çулĕ. Çавăн çинчен кĕвĕлеççĕ кĕслепе шăпăр. Анчах çав вăхăтра, йывăр пĕлĕтсене сирсе, сасартăк сарă хĕвел йăлкăшса тухнăн, пĕтĕм таврари репродукторсенчен, çурхи вăрман симфонийĕ евĕрлĕ хаваслă та хăватлă кĕвĕ янăраса каять. Волковпа Мясников чăваш халăхĕн çĕнĕ юррисене шăрантараççĕ. Халь кĕсле пĕтĕм таврана янăратса, пĕтĕм хĕлĕхсемпе выляса савăнăçлăн юрлать, шăпăр сасси те таврана ян каять. Ирĕклĕ саманара кĕслепе шăпăр та хаваслăн юрлаççĕ иккен.

Юрă уявĕнчи хаваслăха та, унти юрă-кĕвĕ хăвачĕпе çынсен пултарулăхне те пурне çырса кăтартма май та çук. Акă Элĕк районĕнчен культура çуртĕнчи художествăллă пултарулăх кружокĕнчи А. Акрамовская «Как пойду я на быструю реченьку» ятлă вырăс халăх юррине юрласа ярать те, сцена çинче пĕр-пĕр ăста артистка тăрать пуль, тесе шухăшласа илетĕн. Мĕн тери янăравлă та илемлĕ унăн сасси?!

Кăçалхи юрă уявĕнче вуншар çул хушши ĕçлекен художествăллă пултарулăх кружокĕсемпе пĕрле, кăçал çеç ĕçле пуçланă коллективсем юнашар тăрса савăнаççĕ. Ялти художествăллă пултарулăх коллективĕсен Пĕтĕм Союзри смотрне хутшăннă Ленин ячĕпе тăракан колхоз хорĕпе Чкаловски тата Етĕрне районĕсенчен килнĕ художествăллă коллективсем пĕр-пĕринпе ăмăртаççĕ. Вĕсем пĕтĕм халăха тĕлĕнтереççĕ.

Праçник иртекен вырăнта халăх пит нумай. Хуларан çынсем çаплах килсе тăраççĕ-ха. Каярах юлнисем, сцена çинчи коллективсене курайммасан та репродукторсемпе трансляциленекен юрăсене хапăлласа итлеççĕ. Вăрманти ешĕл çерем çинче пĕр ушкăн пухăнса ларнă. Кусем—Шупашкарти электроаппаратура заводĕнче ĕçлекенсемпе пир-авăр комбинатĕнчи рабочи çемйисем. Вĕсем темиçе çул хушши туслă ĕнтĕ. Çак праçникре те пĕрлех тĕл пулчĕç.

— Кунтан итлеме авантарах,— килĕшет комбинатра ĕçлекен Кузьма Толстов çерем çине вырнаçса.—Уява пирĕн те палăртмалла пулать, пĕр-пĕр тутлă шыв пурах ĕнтĕ кунта.

Праçникре тутлă шыв кăна мар, тем тĕрлĕ ĕçме-çиме те илме пулать.

«Союзпечать» киоскĕ умĕнче те, кĕнеке палатисем патĕнче те халăх йышлă. Пĕри хаçатсене илме васкать, тепри хăйĕн кăмăлне каякан кĕнеке суйлать.

Инçех те мар—спортплощадка, Кунта волейболистсен командисем паянхи уявра мала тухассишĕн тăрăшаççĕ, акробатсем те ĕççыннисене тĕрлĕ номерсем туса кăтартаççĕ. Леререх, вăрман сулхăнĕнче, пĕр çемье вырнаçнă та, пĕри хĕрсе кайсах хуткупăсне туртать. Йĕри-таврах хаваслă шав кĕрлесе тăрать.

Етĕрне çулĕ çинчен мĕн каç пуличченех халăх саланмарĕ. Уявра художествăллă пултаруллăх кружокĕсем тăватçĕре яхăн выступленисем пачĕç.

Кăçалхи юрă уявĕ республикăри художествăллă пултарулăх кружокĕсем тата ытларах йышлăланнине, вĕсен репертуарĕ анлăланнине кăтартса пачĕ.

Çамрăк акробаткăсем сцена çине тухас умĕн.



Вăрманта та ташă-юрă чарăнмасть. Сулхăнра ташлама хуткупăс çеç пултăр.



«Ялав» журнал фотокорреспонденчĕ **П. Ефремов** тата **Г. Зиньков, М. Егоров, П. Матюхин, Ф. Иванов, И. Никифоров** фотоӳкерчĕкĕсем.

Союзпечать» киоски умĕнче.



# САЛАМПИ

*Повесть*

Александр АРТЕМЬЕВ

## ИККĔМĔШ ПАЙĔ

Ах, яту хитре-çке санăн!
Тупса хунă-мĕн такам...
П. Хусанкай, «Саламли»

### «САЛАМПИ — САЛАМЛА ЯТ»

1945 çул. Кĕркунне...

...Вăрçă анчахрах чарăнни кашни утăмрах сисĕнет. Хулара та, ялти евĕрлех, шинеллĕ çынсем нумай, вăйпитти арçынсем, çамрăксем — пурте тенĕ пекех шинельпе çÿреççĕ; вĕсен хулпуççийĕсем çинче пакун йĕрĕсем те çухалман-ха. Студентсем хушшинче те çар тумне хывманни сахал мар, фронтран таврăннă каччăсем института полевой сумкăпах çÿреççĕ, портфĕлли сайра курăнкалать. Студентсен йышĕ вăрçăччченхи пек мар: пĕр аудиторинчех — вăтам шкултан тин çеç вĕренсе тухнă çамрăкпа юнашар вăрçă хирĕнче тăватă çул пиçĕхнĕ салтак е командир ларать. Студентсен йышĕ чĕлхе тĕлĕшĕнчен те вăрçăччченхи пек мар, унччен кунти аслă шкулсенче чăвашсемпе вырăссем ытларах пулнă пулсан, халĕ ĕнтĕ тем тĕрлĕ чĕлхепе калаçакан та пур, уйрăмах хĕвеланăç енчи облаçсенчен куçса килнисем чылай.

Вăрçă анчахрах чарăнни кашни çын сăнĕнчех курăнать: кашниех аслă çĕнтерÿшĕн савăнать, тăватă çул пысăк йывăрлăх тÿснĕ хыççăн çăмăллăн сывлать, малалла телейлĕн туртăнать, пысăк ĕмĕтсемпе пурăнать. Çав хушăрах кашнин сăнĕнче хăрушă вăрçă хăварнă паллă пур: хăшĕ çапăçура йывăр аманнă е сывăх тăванĕсене çухатнă, хăшĕ çамрăклах вăрçă асапне тÿссе ирттернĕ е хăй ĕмĕтне çитереймен...

Вăрçă анчахрах чарăнни кашнин пурнăçĕнчех сисĕнет. Студентăн ахаль те кăрăсрах пурнăçĕнче вăл пуринчен те ытларах палăрать.

Саламли хула хĕрринчи йывăç пÿртре, пĕр ватă карчăк патĕнче хваттере вырнаçрĕ. Унпа пĕрле тата икĕ студентка пурăнаççĕ. Пĕри, Соловьева Нина—ялхуçалăх институтĕнче вĕренет, тепри, Петрова Нина — педагогика институтĕнче. Соловьева—çарта пулнă хĕр, арçын пек патвар кĕлеткеллĕскер, салтакла çирĕп утать, сăмаха пат тÿрĕ татса калать. Петрова — тăпăл-тăпăл кĕлеткеллĕ, шурă çÿçлĕ хĕрача, икĕ пĕчĕк çивĕтне хĕрлĕ лента таткипе çыхса çÿрет. Ку пуринчен те иментет, часах хĕрелет, шăппăн калаçать, ют çынсем умĕнче пытанарах ларма тăрăшать. Ăна ку çуртра пурте Пĕчĕк Нина тесе чĕнеççĕ.

Хваттер хуçи карчăкĕ — Анна Ивановна, утмăлсенчен иртнĕ тулли кĕлеткеллĕ хĕрарăм. Вăл пуринпе те питĕ кăмăллă, тараваt, нихçан çынпа хирĕçмен пуль темелле; ялан студентсене хваттере ярса пурăнаканскер, ют çынсене пĕрре-иккĕ курсах хăнăхса çитет, хăй патĕнче тахçан пурăннă студентсене те астăвать, вĕсене ырăпа кăна асăнать. Хăй вăл те вырăс, те тутар, те чăваш: вырăсла та, тутарла та, чăвашла та лайăх калаçать. Хăйĕн ачипăчи пулманран, вăл кашни студентах е студенткăнах тăван ачи вырăнне хума хатĕр... Анчах хĕвел çинче те хура пăнчăсем пур, теççĕ — çак ырă чунлă карчăкăн та пĕр айăп пекки пур. Кăнтăрла-и, çĕрле-и — Анна Ивановна яланах кухньăра тĕрмешет: тем пĕçерет, тем ăшалать, тем вĕретет; пĕрмай çиет, пĕрмай ĕçет. Çамрăксем ăна, шÿтлесе, Аннă Йăваннă тесе чĕнеççĕ.

Хваттерĕ икĕ пÿлĕмлĕ. Малти пÿлĕмĕнче хĕрсем пурăнаççĕ. Тепринче, кухня пеккинче, Анна Ивановна плита умĕнче аппаланать. Унта примус кĕрлесе çунни, çатма çинче тем чашкăрса ăшаланни, чашăк-тирĕк шăкăртатни таттисĕр илтĕнсе тăрать. Унта кунĕнçĕрĕн тĕтĕм йăсăрланать, кукар шăрши е ыхра-сухан шăрши сăмсана çурать. Алăк уçса хупмассерен йÿçĕ тĕтĕм малти пÿлĕме те кĕркелет.

Пĕр уйăх хушшинче Саламли хула пурнăçне хăнăхса çитрĕ, нумай студентсене паллакан пулчĕ. Яланхи именчĕклĕхĕ те çухалчĕ ĕнтĕ, анчах темле вăрттăн именчĕклĕх, шавлă çамрăксем хушшинче, палламан çынсем умĕнче имеенсси çаплах пĕтмерĕ унăн. «Ытла именчĕк-çке эсĕ, пĕчĕк Нинăран та ытларах именчĕк», тет ăна хăшпĕр чухне Соловьева. Саламли кăшт кăна йăлкăшса кулать те хирĕç чĕнмест. Валерий фронтра вилнине пĕлнĕ хыççăн вăл сахал калаçакан пулчĕ, вăхăтăн-вăхăтăн йывăр шухăша кайса, хăй ăçтине те манать.

Пĕр вырсарникун икĕ Нина ирех магазина тухса кайрĕç, хваттере Саламлипе Анна Ивановна иккĕшех юлчĕç. Карчăк кухньăра хăй ĕçĕпе тĕрмешетчĕ, Саламли кĕнеке вуласа ларатчĕ.

— Здрасте, Аннă Йăваннă! — илтĕнчĕ кухньăран шăнкăрав пек янравлă сасă.

Саламли кăртах сикрĕ. Институтра пĕр-пĕр лекцие тимлесе итленĕ чух сасартăк коридорта шăнкăрав янăрани студентсене çапла шартах сиктерет.

— Хунемÿ ырă пулать пуль санăн, Муза, шăпах апат çинĕ тĕле çитрĕн, Яшка çиме лар!—илтĕнчĕ тараваt карчăк сасси.

Муза, карчăкпа сăмах вакласа тăмасăрах, малти пÿлĕм алăкне шаккарĕ. Вăл хăйне евĕр, пионерсем стройпа утнă чух параппан çапнă пек, алăка икĕ аллипе те тăнкăртаттарса шаккать.

— Кĕрĕр,—терĕ те Саламли, хăйĕн кивелнĕ кăвак кофтинчен вăтанса, хулпуççи çине хулăн çăм тутăр уртса ячĕ.

Муза пÿлĕме çавраçил пек вĕçсе кĕчĕ те, Саламлие ыталаса илсе, ун кăкри çумне пăчăртанчĕ. Унăн сап-сарă кăтра çÿç пайăркисем Саламли пит-куçне сĕртĕнсе кăтăкларĕç. Пÿлĕме хаклă духи шăрши çапрĕ.

— Фу, каллех сирĕн пÿлĕмре тĕтĕм, хăçан хутма чарăнать вăл Анна Йăваннă? Ун плити, домна кăмаки пек, таттисĕр çунать пулас... Канмалли кун та пÿртре пăчăхса ларатăн-çке, Саламли! Мĕнле йăлăхтармасть сана? Мĕнле роман вулатăн? Кăтарт-ха! Фу! «Шкул тавра сад лартса тăвасси». Мĕнле кичем мар сана хĕр пуççăн çакнашкал ăслă кĕнекесем вуласа ларма, чăнах та? Тупăннă Мичурин, тепĕр тесен.

Муза кĕнекене хупса хучĕ те сĕтел айне пăрахрĕ.

— Паян институт садĕнче йывăçсем лартмалла пирĕн, эпир сад эрни иртеретпĕр,—терĕ Саламли лăпкăн.

— Сад эрни! Аппаланаççĕ çав ним çукран, чăнах та. Пединститут студенчĕсем иртнĕ çуркунне мĕн чухлĕ улмуççи лартрĕç пуль—пĕри те чĕрĕлмен, теççĕ. Пирĕн патра кăнтăр енчи йывăçсем ăçтан ÿсме пултарччăр! Тупăннă Мичуринсем...

Муза тĕкĕр умне пырса тăчĕ те хитреленме пуçларĕ. Вăл Атăл хăви пек çинçе те яштак пÿлĕ; кăвак драп пальто, ятнех çĕлетнĕскер, хĕр кĕлеткине пушшех йăрăс та илемлĕ кăтартать. Муза ÿт тĕслĕ капрон чăлхапа, йăлтăртатса тăракан çÿлĕ кĕлеллĕ пушмакпа. Çавна курсан, Саламли ирĕксĕрех хăйĕн чалăшма пуçланă кĕлеллĕ аттисене сак айнерех пытарчĕ.

Муза, хăйпе хăй киленсе, тĕкĕр умĕнче хаваслăн çаврăнкаларĕ, Саламли ун çине куç айĕн кăна пăхса илчĕ.

Музăн тăрăхларах çÿхе пичĕ ачаш та шуранка; питне пудра сĕрнĕрен пуль, хĕп-хĕрлĕ тути йĕкĕр чие сырли майлах; тута хĕррисем, яланах кулнă евĕр, кăштах çÿлелле çĕкленсе тăраççĕ, йăлкăшса кулнă чух вара икĕ питçăмарти пăт путать; куçĕсем йĕтĕн çеçки пек сенкер-кăвак; куçхаршисене çинçе хăварса хуп-хура сăрланă, вĕсем икĕ çунат пекех; тикĕс кастарнă вăрăм куç хăрпăкĕсем çÿлелле авăнса тăраççĕ; кĕске çÿçĕ кĕрхи уяр кун хĕвел çинче йăлтăртатакан сап-сарă хурăн çулçи пек курăнать.

Саламли Музăна малтанхи хут тĕл пулсан, çакнашкал сăнлă чиперкке хĕре хăй ăçта курнине аса илме тăрăшрĕ, анчах ниепле те аса илеймерĕ. Халĕ вăл сасартăках астурĕ: шăпах çакăн евĕрлĕ чечен майра-хĕр сăнне вăл ача чухнех канфет хучĕ çинче курнăччĕ,—çав канфет хучĕсемпе Саламли пуканелле вылятчĕ...

— Саламли,—терĕ Муза кÿреннĕ пĕ-

* Малалли. Пуçламăшĕ 5, 6-мĕш номĕрсенче.

чек ача сассипе.—Ах, сан ҫӳҫӳ питӗ чаплӑ-ҫке! Санӑнни пек вӑрӑм ҫивӗтшӗн эпӗ тем парӑттӑм халӗ. Нихҫан ан кӑтралаттар, чӑнах та! Эпӗ хамӑнне кӑтралатсах пӗтертӗм, халӗ ак йӑлт юхса пӗтрӗ, тепӗр пилӗк ҫултан кукшалансах юлатӑп пулӗ. Пӗлетӗн-и, виҫӗмҫул мӗнлеччӗ ман ҫивӗт! Салатса яраттӑм та ҫурӑм тӑрӑх — ыраш кӗлти пекчӗ! Тураса уҫӑлми хулӑнччӗ. Истори пекки те пулчӗ пӗрре вӑл ҫивӗт пирки... Эп сана каласа кӑтартманччӗ-и?

Муза хӑй ӑссӗн кулса илчӗ те васкаса калама пуҫларӗ.

— Пирӗн ял станцӑран инҫех марҫке-ха. Эпир, хӗрсем, яланах пушӑ вӑхӑтра, пуйӑс килнӗ вӑхӑтра, вокзал патне ҫырла сутма каяттӑмӑр. Пӗрре ҫапла воински эшелон ҫитрӗ, перрон ҫине тем чухлӗ салтак анса тулчӗ. Ман пата пӗр ҫамрӑк салтакӗ чупса пычӗ те пӗр стакан ҫырла илчӗ. Илнӗ те—каймалла ӗнтӗ, анчах уйӑрӑлмасть манран салтак. «Тата тепӗр стакан парӑрсамччӗ, йӑмӑкӑм», тет. Хӑй, тен, манран аслӑ та мар пулӗ. Кулӑшла. Тата тултарса патӑм. Салтак ҫаплах каймасть. «Фронта каятпӑр, ҫырла ҫисе курманни нумай пулать», тет. Сисетӗп ӗнтӗ мӗнле ҫырла кирлине, ҫапах шӳтлесе калатӑп: «Илӗрсем эппин татах!». «Укҫа ҫитмест-ҫке, йӑмӑкӑм», тет салтак. Эпӗ ӑна укҫасӑрах тултарса патӑм—вӑл илмест. «Ахаль илместӗп, укҫаллах сутӑр — сире кӗнеке илме укҫа кирлӗ пулӗ. Вӗренетӗр пуль-ха, ӑҫта вӗренетӗр?» тет. Сӑмах ҫине сӑмах — калаҫу пуҫланса кайрӗ. Хам ҫинчен йӑлтах каларӑм, кула-кулах адреса та пӗлтертӗм. Салтакӗ питӗ хитрескер вара, ҫи-пуҫӗ те тирпейлӗ, таса, пакунӗ урлӑ темле шурӑ хӑю пур. «Ахаль салтак мар пулас ку», тетӗп хам ӑшра савӑнса. «Эсир командир пуль», ыйтатӑп хайхинчен. «Эпӗ ефрейтор», тет каччӑ. Маншӑн пулсан мӗн ун чухне — те ефрейтор аслӑрах, те лейтенант аслӑрах,—ӑнланнӑ пек пуҫа султӑм анчах. «По ваго-о-нам!» тесе кӑшкӑрчӗҫ. Пуйӑс та тапранчӗ, ман ефрейтор ҫаплах уйӑрӑлмасть. Хам та ватанса кайрӑм. «Пуйӑсран юлатӑр вӗт!» тетӗп хӑраса. «Сирӗн ҫивӗте тытса пӑхма юрать-и? Эп кун пек ҫивӗт хамӑр Алтайра та курман», тет хайхи, ҫырла ҫиесшӗн пулнӑ салтак. «Эшелонтан юлатӑр вӗт, эшелонтан юлатӑр!» тетӗп, ним калама пӗлмесӗр. Пуйӑс хытах кайма пуҫларӗ. Ефрейтор ман хулӑн ҫивӗте тытса ачашларӗ те чӑп! чуптуса илчӗ. Эпӗ хӑраса вилсех кайрӑм, чӑнах та! Унтан вӑл хыҫалти вакуна хуса ҫитсе, тӳрех картлашки ҫине сиксе хӑпарчӗ. Курӑнми пуличченех пилоткипе сулса пычӗ, хам та вара алӑ сулсах ӑсатрӑм. Питӗ кулӑшла, кайран тин асӑрхарӑм: эпӗ ҫырла пакетне аллӑмрах тытса тӑнӑ-мӗн, парса яма та астуман...

Муза калама чарӑнсах кулса илчӗ, юлташӗ салхуланнине сисеймерӗ вӑл. Салампи ҫав вӑхӑтра хӑй Валерие юлашки хут станцӑра мӗнле курнине аса илчӗ те, унӑн пырне тем капланса хӑпарчӗ, чунӗ тӑвӑрланса килчӗ.

— Кайран ҫав ефрейтора тӗлӗкре пӗр виҫӗ хут куртӑм, чӑнах та! Тепӗр уйӑхран хайхи фронтран ҫыру ячӗ. Эх, пӗлесчӗ эсӗ, Салампи, ман савӑнӑҫа! Фронтри савниран ҫыру илесси — мӗн тери пысӑк телей, чӑнах та!

Салампи пыра тулнӑ куҫҫульне ҫӑтса ячӗ. Вӑл чӳрече витӗр курӑнакан шурӑ пӗлӗтсем ҫинелле пӑхать, анчах вӗсене курмасть. «Ман пекех савӑннӑши эсӗ те, Муза? Ман чухлех юратнӑши?» теҫҫӗ унӑн пысӑк кӑвак куҫӗсем.

— Кайран вара тем пулчӗ, те хам вӑхӑтра ҫырайманшӑн кӳренчӗ, те вилчӗ пуль-и — пирӗн ҫыхӑну татӑлчӗ. Ҫапла пӗтрӗ вара ман пӗрремӗш юрату... Юрататтӑм эп ӑна, чӑнах та.

Салампи халӗ юлташӗ ҫине тинкерсе пӑхрӗ. «Юратнӑ-ши эсӗ ӑна? Мӗншӗн эсир ҫавнашкал виҫӗ эрнелӗх тунсӑха та юрату тетӗр? Пӗлетӗр-ши эсир чӑн юрату мӗнлине?»

— Ҫапла пӗтрӗ ман пӗрремӗш юрату. Кайран, хам ухмаххӑмпа, ҫивӗтӗме те пӗтертӗм, ҫынсене курса кӗске кастартӑм та кӑтралатрӑм. Йӑлт юхса пӗтрӗ халь хулӑн ҫӳҫӗм. Качча кайиччченех кукшаланса юласран чун ҫук, чӑнах та. Ҫӳҫсӗр хӗр кама кирлӗ вӑл? Ӗлӗк качча каймасӑр ача ҫуратнӑ хӗрсене ҫапла ҫӳҫне шакла касса янӑ, теҫҫӗ... Халь ӗнтӗ шӑрӑхра та газовӑй косынкӑсӑр ҫӳреме лайӑх мар пек темле...

Муза ҫавӑнтах янравлӑ ҫинҫе сассипе хуллен юрласа ячӗ:

Ты смотри, никому не рассказывай,
Что душа лишь тобою полна,
Что тебя я в косыночке газовой
Дожидала порой у окна.
Никому не скажи, что я нежная,
Что безумно люблю я тебя...

Алӑка шакканине илтсен, вӑл юрлама чарӑнчӗ те: «можно!» терӗ хаваслӑн.

Пӳлӗме тӗлӗнмелле хӳхӗм йӗкӗт кӗрсе тӑчӗ. Хӗрсем ӑна иккӗшӗ те пӗрре пӑхсах пуҫ тӳпинчен ура тупанне ҫити асӑрхарӗҫ.

Каччӑ питӗ таса тумланнӑ, вӑл йӑрӑс пӳлӗ те сарӑ кӑтра. Темле хӗр те ӑна пӗрре курсах юратса пӑрахмалла. Муза каларӗшле, ун пеккипе пӗрре тӗл пулса калаҫсанах, кайран ӑна тӗлӗкре куратӑн.

Палламан йӗкӗт кӑмӑллӑ ҫемҫе сасӑпа Соловьева Нина ҫинчен ыйтрӗ; вӗсем пӗр ялсем иккен; вӑл Нина валли ялтан ҫыру илсе килнӗ. Виҫӗ кӗтеслӗ канверта каччӑ Салампи умне, сӗтел ҫине, меллӗн хучӗ.

Пӗр самант ним калама аптраса тӑнӑ Муза сасартӑках хастарланчӗ, унӑн сенкер куҫӗсем хаваслӑн ҫиҫме пуҫларӗҫ, ахаль те кулса тӑракан тута хӗррисем илӗртӳллӗн сиккелеме тытӑнчӗҫ, икӗ питҫӑмарти илемлӗн пӑт путрӗ.

— Эсир Нина землякӗ-и вара! Ой, питӗ хавас! Паллашар. Муза Любимова... Нина тусӗ.

Хӗр хӑйӗн хӗретнӗ чӗрнеллӗ пӗчӗк аллине каччӑ еннелле тӑсрӗ.

— Леон Вирьялов,—терӗ лешӗ, вара аллине шурӑ тутӑрпа шӑлса илчӗ те хӗр аллине ачашшӑн чӑмӑртарӗ, ытлашширех тытса тӑчӗ.

Сывлӑмлӑ йӗтӗн чечекӗ ҫине хӗвел ҫути ӳкнӗ пекех, Муза куҫӗсем илемлӗн йӑлкӑшма пуҫларӗҫ.

— Вирьялов? Темле илтнӗ хушамат пек туйӑнать. Эсир Хусан университетӗнче вӗреннӗ-и?

— Вӗреннӗ пек астӑватӑп,—терӗ шӳтлесе каччӑ.—Эсир те унта вӗреннӗ-им?

— Ҫук, пирӗн кукка хӗрӗ вӗреннӗ унта, вӑл темле Вирьялова асӑнатчӗ,—пӗлтерчӗ хӗр васкаса, унтан сӑмаха урӑх еннелле пӑрма тӑрӑшрӗ.

— Паллашӑр, ку — пирӗн юратнӑ хӗр-тус — Салампи Акрамова,—терӗ вӑл илемлӗ сасӑпа.

Салампи сӑмах хушмасӑр тӑрса алӑ пачӗ. Каччӑн шап-шурӑ ачаш алли ҫумӗнче хӑйӗн ӗҫпе хуралнӑ аллишӗн кӑштах именнӗ пек пулчӗ, анчах ку самантлӑх туйӑм ҫавӑнтах сирӗлсе кайрӗ. «Чечен алӑллӑ арҫынтан хӗрарӑм шӑрши кӗрет», тени аса килчӗ ӑна сасартӑк, Павӑл ҫапла калатчӗ.

— Салампи?! Мӗнле хитре ят!—терӗ каччӑ, хӗр аллине вӗҫертмесӗр, унтан, кӑшт шухӑшласа, хушса хучӗ:

— Салампи — саламлӑ ят.

— Эсир поэт!—терӗ, илӗртӳллӗн еппресе Муза.

— Ҫылӑхӑм пур, тунмастӑп: кӑштах ҫыркалатпӑр.

Вирьялов кӑна Муза еннелле ҫаврӑнса тӑрса каларӗ.

— Анчах ӗҫӗм ытла поэтичнах мар манӑн. Ялти учитель эпӗ. Ботаника-биологи тавраш ӗпе аппаланатӑп—проза, одним словом.

Каччӑн тарланӑ аллинчен йӗрӗннӗ пек пулса, Салампи хӑй аллине вӑрттӑн, сӗтел айӗпе, юбка ҫумне сӑтӑрса илчӗ.

— Алӑка ма хупмастӑр, алӑк уҫах тӑрать-иҫ, тӗтӗм кӗрсе тулӗ!—терӗ кӗтмен ҫӗртенех Анна Ивановна, анчах икӗ хӗр умӗнче тӑракан ют качча асӑрхарӗ те кухньӑна кӗрсе кайма васкарӗ. Ҫапах лешӗ карчӑкӑн ҫуланса, сӑранланса, хӑрӑмланса пӗтнӗ саппунне те, унӑн аллинчи пӑсланакан пӑтӑ кашӑкне те курса юлма ӗлкӗрчӗ. Каччӑн тута хӗррисем кӑшт ҫеҫ сиккелесе илчӗҫ, ҫапах вӑл кулмарӗ.

— Кам пулчӗ ку сирӗн?

Муза хӗрелсе кайрӗ.

— Так пустуй карчӑк вӑл, хваттер хуҫи, «Аннӑ-Йӑваннӑ» тетпӗр эпир ӑна,—терӗ кулса.

— Питӗ кӑмӑллӑ ҫын,—хушса хучӗ чӗнмесӗр ларнӑ Салампи.

Каччӑ сӑмах пӗтнине сисрӗ те хӗрсемпе васкасах сывпуллашрӗ. Вӑл ҫапла кӗтмен ҫӗртенех каясса пӗри те шутламанччӗ.

— Каҫарӑр, мана юлташсем кӗтеҫҫӗ. Хӑвӑрт уйӑрӑлмалла пулнишӗн питӗ шеллетӗп. Каҫарӑр, пардон... Тепре курса калаҫасса шанатӑп. Ауф федерзеен!

— Чипер кайӑр.

Алӑк хыҫӗнче каллех Анна Ивановна сасси илтӗнчӗ:

— Ытла час кайрӑр-иҫ, кӑшт та лармарӑр? Пӑтӑ ҫиме килсемӗр! Сӗлӗ пӑтти... питӗ сиплӗ, теҫҫӗ тухтӑрсем...

Муза пӗчӗк чышкипе сӗтеле ҫапрӗ.

— Эх, ҫав карчӑка! Ялан ҫапла ыр ҫынсем умӗнче намӑс кӑтартать, чӑнах та! Тӗтӗм кӑларса тултарнӑ пӳрте, сухан шӑрши, фу!.. Пӗсехесӗр кӑвакал

пек, пĕрмай çиет, пĕрмай çиет—мĕнле хырăм тирĕ чăтать-ши унăн? Хырăмне çурăлса каясран кăшăллать пулĕ вăл! Хĕр кăмăлĕ çавăнтах улшăнчĕ.

— Ой, Саламппи! Мĕнле каччăсем пур иккен! Культура... образовани... поэт! Куртăн-и, аллине париччен малтан шур тутăрпа шăлса илчĕ... Эх!.. Эсĕ пĕрре те кулмарăн, Саламппи... Ой, пĕтрĕ пуç!—терĕ Муза, сасартăк тĕкĕр умне пырсан.—Намăса ăçта чикес? Çавăн пек чаплă каччă умĕнче эпĕ... пăхха, Саламппи, ман çўç... хыçалти йăлт сапаланса кайнă-мĕн, тăрмаланса тăратьмĕн... Ма систермерĕн? Ой, намăс! Ой, намăс, чăнах та!

— Эпĕ те асăрхаман,—терĕ Саламппи, пĕрремĕш хут йăлкăшса кулса.

Çав вăхăтра тулти пўлĕмре шавласа калаçнисем, ура сассисем илтĕнчĕç.

— У-у-у, ман ачасем çитрĕç! Чей ĕçме килĕр!—йыхăрчĕ кухньăран карчăк сасси.

Пўлĕме икĕ Нинăпа пĕрле Петя Казаков шавласа кĕчĕ.

— Салам, Саламппи!—терĕ вăл, кĕнĕкĕмен аллине тăсса, унтан Муза енне çаврăнчĕ:—О, Муза!.. Любимова, конешно... Поэт каларĕш:

Всегда томительно волнуют нашу кровь
Неразделимые и Муза и Любовь.

Казаков ялхуçалăх институтĕнче вĕренет, вăл тахçантанпах Соловьевăпа туслă, иккĕшĕ пĕр-пĕринчен ниçта уйрăлмаççĕ. Фронтра ураран аманнăскер, вăл кăштах уксахлать, çавăнпа тума çўрет. Казаков вырăс, çапах чăвашла та пуплекелет; калаçасса вăл ялан шўтлесе калаçать, вара ăна курмассерен Саламппи хăйсен ялĕнчи Павăла аса илет.

— Стоп, хĕрсем! Çыру! Пĕчĕк Нина, ташла: сан патна килнĕ, каччăран!—терĕ Казаков, Саламппипе Музăна куç хĕссе.

Ташличченех Пĕчĕк Нина хĕрелсе кайрĕ, пĕрре-иккĕ çаврăнкаласа илчĕ те: «халь пар ĕнтĕ, Петя», теме пуçларĕ. Анчах Казаков ăна тата тепре ташлаттарчĕ, вара тинех каларĕ:

— Спасибо, лайăх ташлатăн, çапах та çырăвĕ Пысăк Нина валли иккен. Ак, ĕненместĕн пулсан, адресне вула... Стоп! Канвертне чустапа çыпăçтарнă, пĕр пашалу тумалăх чуста пĕтернĕ. Мĕнле каччă-ши ку, савнийĕ патне те маркăсăр çыру ярать? Капла вара, кашни каччă тўлесе илмелле çыру ярсан, чухăн студенткăн ăçта кайса кĕрес? Канверчĕ çинче нимле штамп та çук... Анна-Ванна! Кам илсе килчĕ ку çырăва?

Муза Саламппие куç хĕссе систерчĕ: «ан шарла!»

Ултă пăт кĕрекен ыраш миххи пек тулли кĕлеткеллĕ Анна Ивановнаваскамасăр кăштăртатса кĕчĕ те аллинчи стаканĕнчен вĕри чей сыпа-сыпа кала пуçларĕ.

— Ах, хĕрĕмсем, паян пĕр яш çын килчĕ кунта — ну каччă та каччă! Пĕр тумлам шывпа çătса ямалла!

— Эпĕ япăх-им вара? Мана хĕрсем умĕнчех ан пĕтерĕр ĕнтĕ, Анна-Ванна,—тĕртсе илчĕ Казаков.

— Э-эй, эсĕ терĕн!—кулса ячĕ карчăк.—Алăк хушăкĕпе кăшт пăхрăм та хам çамрăкланса кайрăм. Каччă мар, уйăх та хĕвел! «Вăт Пĕчĕк Нина валли мăшăр!» тесе шутларăм.

Пурте кулса ячĕç, Пĕчĕк Нина мăкăнь çеçки пек хĕрелсе кайрĕ, вăтанса Саламппи хыçне пытанчĕ.

— Икĕ хĕр хушшинче çаврăнкаласа тăрать ça-ав, ах, турă!

— Буридан ашакĕ пек-и?—каллех тĕртсе илчĕ Казаков.

— Эс ан чăрмантар-ха. Мĕнле ашак тата вăл?

— Вăл-и? Буридан ятлă художникăн çавнашкал картина пур: пĕр ашак икĕ утă купи хушшинче «хăшне малтан çием-ши?» тесе аптраса тăрать.

Каллех пурте ахăлтатса кулса ячĕç.

— Эсĕ тем те шухăшласа кăларăн, сăмахшăн кивçене кĕместĕн. Чим-ха, каласа пĕтерем. Тăрать ça-ав, икĕ хĕр хушшинче аптраса: пĕринчен тепри хитререх, хăшне савмалла? Шухăшлăн та, ачам! Петя, хăшне савăттăн эсĕ ху пулсан?

— Эпĕ çук-им вара? Эпĕ иккĕшне те савăттăм та, анчах виççĕмĕшĕ пур ман.

Хĕрсем каллех кулса ячĕç.

— Саламппипе Муза пĕр пекех-ши вара?—ыйтрĕ карчăк, çăвар патне çитернĕ стаканне каялла илсе.

— Çук, Анна-Ванна, пĕр пек теместĕп-çке! Муза — çурхи хаваслă кун пек, Саламппи—кĕрхи салхуллă кун пек.

— Кĕрхи кун тутă пулать, теççĕ ваттисем,—татса каларĕ карчăк.

— Эсир, Анна-Ванна, поэт! Пушкин пекех, кĕркуннене юрататăр.

Карчăк кăмăллăн кулкаласа тухса кайрĕ.

— Сирĕнпе калаçса тăрса, нимĕр те каструль тĕпне çунса ларчĕ пуль. Пăрça нимĕри лăкарăм, нимĕр çиме пырăр!

— Кам килсе пачĕ ку çырăва, Саламппи?—ыйтрĕ Соловьева, карчăк хыççăн алăк хупăнсанах.

— Темле Леон Вирьялов.

— А-а, Левен,—терĕ те Нина, çыру вулама тытăнчĕ.

— Эсир сад эрнине хутшăнмастăр-им?—ыйтрĕ Казаков Музăран.—Е пединститут студенчĕсем панулми юратмаççĕ-и?

— Эпĕ пасăрах сада кайма хатĕр. Пĕчĕк Нинăна кĕтрĕм, эпир унпа пĕр группăра, вăл пирĕн профорг. Ма апла ыйтатăр?

— Хăвăр филармонине кайма хатĕрленнĕ пекех тумланнă та... Кун пек çўлĕ каблукпа садра ĕçлеме йывăртарах пулĕ тетĕп, хитре урăрсене мăкăлтама пултаратăр. Атă тăхăнмаллаччĕ.

— Çук ман атă тавраşĕ.

— Хамăнне парам-и?—сĕнчĕ Соловьева, çыру çинчен куçне илмесĕр.

— Ой, Нина, пур-и санăн?

— Акă!—терĕ те Казаков, сак айĕнчен пысăк кирзă атă илсе кăтартрĕ.

Пурте ахăлтатса кулса ячĕç.

— Ку атта эпĕ çĕклеес те çук, вăл пушшех урана мăкăлтаса, шăйăрса пĕтерĕ,—терĕ Муза.

Пысăк Нина çавăнтах пат татса каларĕ:

— Вăл атăпа эпĕ çур Европа чухлĕ çуран утса тухрăм—ура мăкăлтанман!

Музăна кўрентерес мар тесе, Саламппи сăмаха аяккалла пăрчĕ:

— Сирĕн группăна садра кам ертсе пырать, Нина?

— Саланов, терĕç,—именсе пĕлтерчĕ Пĕчĕк Нина.

— Мĕнлескер вăл?

— Курман эпĕ, Петя пĕлет пулĕ? Петя?

— Виççĕмĕш курсра вĕренет, пирĕн студент, отличник,—терĕ Казаков.

— Вăрçăччен çав-и виноград лартса ўстернĕ, теççĕ?—ыйтрĕ Муза.

— Çавă,—терĕ Пысăк Нина.—Пирĕн ял каччи вăл. Хастарлă мичуринец, новатор. Часах нумай садоводсене тĕлĕнтерĕ-ха вăл. Çемйи вĕсен çавнашкал, ашшĕ те садовод. Хамăр колхозра иккĕшĕ таврара çук чаплă сад ўстереççĕ.

— Ой, Нина!—тĕлĕнчĕ Муза.—Мĕнле сирĕн ял каччисем пурте чаплă: поэтсем, ученăйсем...

— О, Муза! Сирĕн Пысăк Нинăсен ялĕнче, поэтсен çывăхĕнче, çуралмалла пулнă-мĕн,—тĕртсе илчĕ Казаков. Ыттисем кулса ячĕç.

Часах вĕсем шавласа, кулкаласа институт садне тухса кайрĕç.

— Нимĕр çисех каймаллаччĕ!—тесе юлчĕ Анна Ивановна.—Нимĕр çиме! Пăрса нимри... Тухтăрсем сиплĕ теççĕ ăна!..

Кунĕпех садра улмуççи лартма шăтăк чавса, Саламппин ывçă тупанĕсем хĕрелсе, хăпарса тухрĕç, пилĕкĕ те кăштах ыратакан пулчĕ. Анчах хаваслă çамрăксем хушшинче тимлесе ĕçлени ун кăмăлне йăлтах уçса ячĕ. Кăнтăрла иртсен, Пысăк Нина ăна кĕтмен хыпар пĕлтерчĕ.

— Саламппи, эсĕ пĕлетĕн-и, Семен Саланов Порт-Артуртан таврăннă вĕт?

— Чăнах-и?—терĕ Саламппи, сасартăк пăлханса ўксе. «Маньчжури... Порт-Артур» тенине илтсенех Валерий аса килет. Кам та пулин Инçет Хĕвелтухăçĕнче пулнă пулсан, Саламппи шучĕпе, вăл вара Валерие курма тивĕçех. Ĕç пĕтиччен Саламппи тек сăмах вакламарĕ, юлташĕсем ыйтнине хирĕç кăна кĕскен сасă паркаларĕ. Нина хыпарĕ ăна хытах шухăшлаттарчĕ. «Мĕнлескер вăл, Саланов? Унпа курса калаçас пулать. Тен, вăл Валерие тĕл пулман-ши? Вăрçă хирĕнче те пĕр енчи çынсем ăнсăртран тĕл пулнине калаççĕ. Тен, вăл Валерий çинчен çĕнĕ хыпарсем пĕлтерĕ...»

Ĕç пĕтерсен, Казаковпа Нина ытти студентсемпе пĕрле хулана таврăнчĕç, Саламппи вĕсенчен уйрăлчĕ.

— Эпĕ пединститут садне кĕрсе тухатăп, Пĕчĕк Нинăпа киле пĕрле таврăнма калаçса татăлсаттăмăр,—терĕ вăл.

Хĕвел анса ларнă ĕнтĕ. Хула тўпинчи радио мачтисем çинче кăна, икĕ çўлĕ мачтă çинче, кăштах шевле вылять. Аякри вăрман хуралма пуçланă, çĕре кĕр сулхăнĕ çапнă. Катаран кĕрхи каç çывхарать.

Саламппи çамрăк сада пырса кĕнĕ чух пединститут студенчĕсем кайса пĕтнĕ пекехчĕ, ик-виçĕ ушкăн çеç кая юлнă.

— Кунта! Кунта!—кăшкăрчĕ аякранах Пĕчĕк Нина, хăйĕн тусне курсан.

Саламли ун патне чупнӑ пекех васкаса пычӗ.

— Ну, мӗнле ӗҫлерӗр, Нина, аласем ыратмаҫҫӗ-и?

— Ҫук, ма ыратчӑр, эпӗ колхозра сахал ӗҫленӗ-им?—терӗ Нина кулкаласа.—Муза, авӑ, йӑлтах аптраса ҫитрӗ, ни шӑтӑк алтаймасть, ни шыв йӑтаймасть, йӗтӗр ҫӑтнӑ пек, кӑшт та пӗшкӗнесшӗн мар. Кулса пӗтрӗмӗр ҫав унран. Кӗреҫе тытайми пулчӗ; «маникюр пӑсӑлать», тет. Чӗрнисем ун вӑрӑмҫке-ха. Вара Саланов ӑна шыв йӑтма хушрӗ (улмуҫҫисене эпир лартнӑ хыҫҫӑнах шӑварса пытӑмӑр). Пирӗн Муза хӑйӗн ҫӳлӗ каблукӗсемпе такӑна-такӑнах шыв хӗррине каять те ҫуршар витре ҫеҫ ӑсса килет. «Ма тулли ӑсса килместӗн?» тетпӗр те: «Сирӗн улмуҫҫи тесе, манӑн фигурӑна пӑсас-и?» тет. «Фигури» хӑйӗн... чӑнах та ӗнтӗ пилӗкӗ сӑпсанни пекех ҫинҫе. Пирешкел колхозра тырӑ миххисем ҫӗкленӗ пулсан, ҫапла пулас ҫук та ҫав...

— Халь ӑҫта вара вӑл?

— Кӑнтӑрла ҫитичченех пӑрахса кайрӗ,—терӗ те Пӗчӗк Нина ахӑлтатсах кулса ячӗ.—Ун хӗвне ӳркев йӑва ҫавӑрнӑ.

— Саланов та кайрӗ-и?—пӑлханса ыйтрӗ Саламли. Нина вӑл пӑлханса ыйтнине сисеймерӗ.

— Саланов-и? Кайман. Авӑ, ун шинелӗ йывӑҫ ҫинче ҫакӑнса тӑрать. Хӑй урӑх группӑсем патне пирус туртма кайрӗ пуль-и... Э-э, ҫырмана алӑ ҫума аннӑ-иҫ, авӑ хӑпарать. Тӗлӗнмелле питӗ кӑмӑллӑ ҫын иккен вӑл Саланов. Манпа пӗрле ӗҫлерӗ те, улмуҫҫисем ҫинчен мӗн кӑна каласа кӑтартмарӗ пулӗ! Ӗҫлеме те хытӑ ӗҫлет, калама ҫук вӑйлӑ, ҫынсем пӗр шӑтӑк алтиччен вӑл иккӗ алтса хатӗрлет. Музӑна ҫеҫ килӗшмерӗ вӑл. «Чикан урапи ҫинчен ӳксе юлнӑ пекех хуп-хура-иҫ, кӗл-тӑррипе ҫусан та шуратаяс ҫук», терӗ Муза, ӑна курнӑ-курманах... «Хора полсан та хороши», теҫҫӗ пирӗн енче ун пеккисене.

Вӗсем умне вӑтам пӳллӗ, хуп-хура ҫӳҫлӗ, кӗре ӳтлӗ, кӗрнеклӗ каччӑ пырса тӑчӗ. Вӑл салтакла тумланнӑ. Унӑн шупкалнӑ гимнастерки ҫинче Мухтав орденӗпе медаль выранӗсем раснах палӑрса тӑраҫҫӗ. Каччӑ пысӑк кунчаллӑ кирза аттисене ҫырмара шывпа ҫуса тасатнӑ, питне те ҫунӑ пулас: ҫамка ҫине усӑнса аннӑ хура ҫӳҫ пайӑркисем йӗпеннӗ. Акӑ мӗнле иккен вӑл, ялхуҫалӑх институтӗнчи чи паллӑ студент!

— Каҫарӑр, эпӗ сирӗнпе курса калаҫасшӑнччӗ,—терӗ ӑна Саламли.

Пӗчӗк Нина аяккарах кайса тӑчӗ.

— Паллашар эппин: Семен Саланов,—терӗ каччӑ, алӑ парса.

— Саламли. Акрамова.

— Саламли? Питӗ хитре ят. Иккӗмӗш хут илтетӗп ку ята. Чӑваш хушшинче ун пек ят ҫук пулӗ тесе шутлаттӑм.

— Ӑҫта илтӗнеччӗ эсир ӑна малтан?—хыпӑнса ыйтрӗ Саламли.—Нумай пӗлме хапсӑнать, тесе ан шутлӑр, ан айӑплӑр. Эпӗ ҫакна пӗлесшӗн ҫеҫ сирӗнпе тӗл пулма шут тытрӑм.

Хӗр сасартӑках салхуланса, пӑлханса кайнине, унӑн сасси чӗтреме пуҫланине сиснӗ каччӑ хӑй те кӑштах салхуланчӗ, хура куҫхаршийӗсем пӗрӗнсе илчӗҫ.

— Эпӗ вӑл ята чи малтан Маньчжурире илтрӗм,—терӗ Саланов, хӗр куҫӗнчен пӑхса.

— Камран? Валерирен-и?

Саламлин кӑвак куҫӗсем сасартӑках пысӑкланса, ҫуталса кайрӗҫ, чӗри хӑварт-хӑварт тапма пуҫларӗ, пӑчӑртаса тытнӑ тута хӗррисем чӗтреме тытӑнчӗҫ.

Аманнӑ кайӑк ҫапла, тӗттӗм ту хушшине ӳксен, ту тӑрринче хӗвел шевли вылянине курса, сывлӑша ҫӗкленме мӗнпур чун хавалӗпе тӑрӑшать, йӑлтӑртатса, ҫуталса ларакан ту тӑррине халь-халь вӗҫсе ларас тенӗ чух ӑна тепӗр сӑнӑ пырса тивет те—суранланнӑ ҫунат лӑштӑрах усӑнать, мӗскӗн кайӑк ҫӗрелле персе анать.

Саланов сӑмахӗ Саламлишӗн ҫав сӑнӑ пекех пулчӗ.

— Ҫук. Эпӗ нимле Валерие те пӗлместӗп, курман-илтмен.

Хӗр пӗр самант ним чӗнмесӗр тӑчӗ, пыра тулса ларнӑ куҫҫульне аран ҫӑтса ячӗ те чӗтрекен сасӑпа ыйтрӗ:

— Камран илтрӗр-ха вара?

— Пӗр салтакран илтрӗм. Эпир унпа Порт-Артуртан пӗрле таврӑнтӑмӑр. Чӑваш ачиччӗ вӑл. Темле Салампие ҫавӑ асӑнатчӗ. Саламли ятлӑ хӗрпе пӗр салтак юратӑвӗ ҫинчен каласа панӑччӗ вӑл мана. Салтакӗн ятне астумастӑп ӗнтӗ, хӗр ячӗ ҫеҫ асра юлчӗ: ытла темле илтмен ят та, ҫавӑнпа астӑватӑп пулӗ.

— Сирӗнпе калаҫнӑ... сирӗнпе пӗрле ҫартан таврӑннӑ салтакӑн хушамачӗ мӗнле? Ячӗ?

— Алмазов... Анатолий Алмазов.

— Алмазов?! Калӑр, тархасшӑн, ӑҫта тӗл пулма пулать-ши ӑна? Тен, ун адресне пӗлетӗр?

— Питӗ шел, пӗлместӗп,—терӗ каччӑ, хӑй пӗлменшӗн ӑнннипех кулянса.—Анчах, акӑ мӗн, вӑл ку хуларах пулма кирлӗ, музыка училищине вӗренме килетӗп, тесе калатчӗ пулас. Вӑл кунтах пулсан, эпӗ ӑна шыраса тупма пултаратӑп.

— Тархасшӑн! — терӗ Саламли.— Эпӗ сире тем пек тав тунӑ пулӑттӑм! Эпӗ ялхуҫалӑх институтӗнче пӗрремӗш курсра зоотехника отделенийӗнче вӗренетӗп. Эсир мана, тен, асӑрхаман пулӗ, эпӗ те халиччен сире пӗлменччӗ. Эпир иксӗмӗр пӗр районсемех иккен. Тупса паллаштарсамӑрччӗ мана вӑл ҫынпа!

Салампие тепӗр хут чун кӗнӗ пек пулчӗ.

Аманнӑ кайӑк ҫапла, юлашки вӑйне пухса, сӗм-тӗттӗм ту хушӑкӗнчен хӗвел шевлипе йӑлтӑртатакан ту тӑррине вӗҫсе хӑпарма тӑрӑшать. Акӑ ҫуррине вӗҫсе хӑпарчӗ те ӗнтӗ вӑл, анчах малалла ҫӗкленме вӑйӗ ҫук—вара вӑл, аманнӑ ҫунатне сӗтӗрсе, ҫурма тӗттӗм ту хысакне ҫитсе канма ларать. Ту тӑррине кӑна ҫитсе ӳкесчӗ: унтан инҫетри-инҫетри пӗтӗм тавралӑх курӑнать, унта хӗвел ӑшши, унта пурнӑҫ! Ҫапла ӗмӗтленет аманнӑ кайӑк, анчах хӑй ҫав ту тӑррине хӑпарса ҫитнӗ ҫӗре хӗвел анса ларасса, хӑй каллех тӗттӗмре тӑрса юласса пӗлмест.

*(Малалли пулать.)*



## *Пур ӗҫре те машина*

**Константин Николаевич Кузнецов ертсе пыракан 2-мӗш трактор бригади «Красное Сормово» колхозра ӗҫлет. Кӑҫал ҫав бригада ялхуҫалӑхӗнчи пур ӗҫе те машинӑпа тӑвать.**

**Колхозра кӑҫал 94 гектар ҫинче ҫӗрулми тӑваткал тӗммӗн лартса хӑварчӗҫ. Вӗсенчен 28 гектар СКГ-4 маркӑллӑ машинӑпа, 65 гектар трактор окучникӗпе лартнӑ.**

**Халь «Красное Сормово» колхозра ҫуллахи уй-хир ӗҫӗ пырать. Кунта ҫӗрулмипе кукурузӑна кӑпкалатассине те механизациленӗ.**

Ӳкерчӗкре: Г. Фазанов тракторист ҫӗрулми кӑпкалатать.

**Г. Зиньков** фотоӳкерчӗкӗ.

# АБАЙ КУНАНБАЕВ

Кӑҫалхи июль уйӑхӗнче казах халӑхӗн ҫырулла ҫӗнӗ литературипе литература чӗлхине пуҫарса яракан Абай (Ибрагим) Кунанбаев вилнӗренпе 50 ҫул ҫитрӗ. Ҫак куна Совет Союзӗнчи пур тӑванла халӑхсем те чысласа палӑртрӗҫ.

Казах халӑхӗн аслӑ поэчӗ Абай 1845 ҫулта, хальхи Семипалатинск облаҫӗнчи Чингис тӑвӗсем хушшинче, вырӑнтан вырӑна куҫса ҫӳрекен Тобыкты йӑхӗнчен ҫуралнӑ. Абайӑн ашшӗ, Кунанбай, казахсен пӗр йӑхӗн хаяр та ҫирӗп тытӑмлӑ пуҫлӑхӗ (старшини) пулнӑ. Поэт ҫураличчен нумаях та мар малтан ҫав йӑх вырӑс государствине пӑхӑнса тӑма пуҫланӑ. Кунанбайӑн пурӗ тӑватӑ арӑм пулнӑ, ҫавӑн пек нумай арӑмлӑ ҫемьере ашшӗ хӑйӗн ывӑлне питех те начар пӑхнӑ. Пулас поэт тӑван амӑшӗ тата Зере ятлӑ асламӑшӗ пӑхнипе ӳссе ҫитӗннӗ. Асламӑшӗ халӑх сӑвви-юррисене, халапӗсемпе юмахӗсене питӗ лайӑх пӗлнӗ, вӗсене вӑл Абая тӑтӑшах кала-кала кӑтартнӑ е юрла-юрла панӑ.

Малтанлӑха Абай хӑйсен аулӗнчех, тара тытнӑ мулла патӗнче хут вӗреннӗ, кайран вара ашшӗ ӑна Семипалатинск хулине, Ахмед-Риза иманӑн шкулне (медресене) вӗренме ӑсатнӑ. Абай, вӗренсе ӑс илес тесе, питӗ тӑрӑшнӑ, кӗнекесем нумай вуланӑ, вӗренӳре ҫирӗп утӑмсем тунӑ, анчах медресерен вӗренсе тухма унӑн пурпӗрех май килмен. Ашшӗ, хӑйне пулӑшакан ҫын кирлӗ тесе, ывӑлне пилӗк ҫултанах аула калле илсе таврӑннӑ. Ҫамрӑк Абай, медресене вӗреннӗ вӑхӑтрах сӑвӑсем ҫырма тытӑннӑскер, ашшӗне пулӑшакан ҫын пулма шутламан, часах вӑл ашшӗнчен пуҫӗпех уйрӑлса кайнӑ.

Абай ҫамрӑклах вырӑс халӑхӗпе унӑн культури патнелле туртӑннӑ. Семипалатинск хулинче, Ахмед-Риза медресинче чухнех вӑл хӑйне вӗрентекен мулларан вӑрттӑн вырӑс училищине ҫӳренӗ, вырӑс ҫырулӑхне вӗреннӗ. Кайрантарах Абай вырӑс культурин пуянлӑхӗсене хӑй тӗллӗн тӗпчесе вӗренсе пынӑ. Хӑйӗн «Гаклия» («Ӑс вӗрентсе каланисем») ятлӑ прозӑлла произведенийӗнче, 1894 ҫулта, вӑл ҫапла ҫырнӑ: «Асра тыт, чи кирли—вырӑс наукине вӗренесси. Вырӑссен мӗн пуррине пӗтӗмпех—наукине, пӗлӳлӗхне, пурлӑх-ырлӑхне, искусствине вӗренмелле. Усал-тӗселтен тасалас тесен, ырлӑха ҫитес тесен, вырӑс чӗлхипе вырӑс культурине пӗлмелле. Вырӑссем тӗнчене витӗр курса тӑраҫҫӗ. Эсӗ вӗсен чӗлхине вӗренсе ҫитсен, сан куҫусем те тӗнче курма уҫӑлаҫҫӗ».

Абай 70—80-мӗш ҫулсенчи вырӑс революционерӗсемпе, Чернышевскин ученикӗсемпе—Михаэлиспа, Долгополовпа, Леонтьевпа тата ыттисемпе, ҫав вӑхӑтра ссылкӑра пурӑннӑскерсемпе, ҫывӑххӑн паллашса туслашнӑ. Пархатарлӑ туслӑх Абая пӗтӗм творчество ӗҫӗнче питех те пысӑк пулӑшу панӑ. Вырӑс революционерӗсем казах поэтне вырӑс культурипе, вырӑссен классикӑлла литературипе паллаштараҫҫӗ, малашне вара Крыловпа Пушкин, Лермонтовпа Некрасов, Салтыков-Щедринпа Лев Толстой кӗнекисем Абайӑн чи юратнӑ кӗнекисем пулса тӑраҫҫӗ. Ҫав вӑхӑтра унӑн ӗнтӗ хӑйӗн творчестви те вӑйлӑн ӳссе пырать. Унччен вӑл хӑй сӑввисене урӑх ҫынсен, юлташӗсен ячӗсемпе ҫырса кӑларнӑ пулсан, 1886 ҫултанпа вара сӑвӑсем айне хӑйӗн ятнех лартма пуҫлать. Ашшӗне пӗрле пурӑннӑ чухне Абай хӑй поэт иккенне пытарма тӑрӑшнӑ, мӗншӗн тесен казах байӗсем (улпутхуҫисем) акын ӗҫне пархатарсӑр ӗҫ тесе шутланӑ.

Абайӑн творчестви питех те нумай енлӗ. Поэт, казахсен унченхи поэзи формисене малалла аталантарса пынипе пӗрлех, ҫӗнӗ формӑсемпе жанрсем шыранӑ. Вырӑс классикӗсен произведенийӗсене казахла куҫарас тӗлӗшпе ӗҫлени Абая уйрӑмах пысӑк пулӑшу панӑ. Вӑл Пушкинӑн «Евгений Онегин» романне, Лермонтов сӑввисене, вырӑссен ытти классикӗсемпе хӗвелтухӑҫ поэчӗсен произведенийӗсене казахла питӗ ӑста куҫарнӑ.

Абайӑн ирӗклӗхшӗн кӗрешме чӗнекен поэзийӗ казахсен феодалла аристократийӗн йӑх-яхӗсене хытӑ тарӑхтарнӑ. Поэт-гуманист пурнӑҫри хирӗҫӳсенче, судлашмалли ӗҫсене татса панӑ чухне яланах пусмӑртисем майлӑ тӑнӑ, чухӑнсене хӳтӗленӗ. Ҫакӑншӑн ӑна «кашкӑр ушкӑнӗсем» тытса ҫурма та хатӗр пулнӑ, пӗринче поэта вӗлерме те пикеннӗ. Тӑшмансем хӗтӗртнипе Абая полици вӑрттӑн сыхлама тытӑннӑ, ӑна ссылкӑри вырӑс революционерӗсемпе ҫыхӑну тытма ирӗк паман.

Анчах тӑшмансем тепле хӗсӗрлесен те, Абай халӑха юратма пӑрахман, темӗнле инкек-синкекре те вӑл халӑх вӑйне ҫирӗп шанса тӑнӑ, тӗттӗмлӗхпе тӗшмӗшлӗхре пурӑнакан ӗҫҫыннисене ҫутта кӑларма тӑрӑшнӑ. Вӑл хӑйӗн ҫулӑмлӑ сӑввисенче казах феодалӗсене те, ҫавӑн пекех патша колонизаторӗсене те хаяррӑн ылханса питленӗ.

Абай хӑйӗн тӑван ывӑлӗсене—Акылбайпа Маговьяна питӗ тӑрӑшса хут вӗрентнӗ. Вӗсем иккӗшӗ те талантлӑ поэтсем пулнӑ, 1904 ҫулта Маговья ятлӑ ывӑлӗ вӑхӑтсӑр вилсе кайнӑ, ҫак йывӑр хуйха Абай тӳсме пултарайман, ывӑлӗ хыҫҫӑн хӑй те хӗрӗх кунранах вилсе ҫӗре кӗнӗ.

Анчах Абайӑн творчестви вилӗмсӗр. Унӑн хӑватлӑ сӑвви-юррисем, ӑмӑрткайӑксем пек, Казахстан ҫеҫенхирӗсенчен ҫӗкленсе, пӗтӗм ҫӗршыв тӑрӑх вӗҫсе ҫаврӑнчӗҫ. Аслӑ поэтӑн ятне Совет Союзӗнчи пур халӑхсем те чун-чӗреренех хисеплеҫҫӗ.

* * *

Эй, тӑван казахсем? Чухӑн халӑхӑм ман!
Хырман майӑхупа тутуна эс хуплан.
Пӗр питре—хӗрлӗ юн, тепринче—ҫара ҫу...
Ӑҫта чӑнлӑх? Ҫакна сан пуҫу шутламан.

Эс сӑнран япӑх мар, сан йышу та чылай.
Анчах мӗншӗн сӑну ултавлӑн кулать?
Ыр канаш панине эс итлесшӗн те мар,
Сан чӗлхӳ йӑлт касать, чӗлхе мар вӑл—ҫурла.

Тытаймастӑн-ҫке эс умӑнти пурлӑхна,
Шуйханса ҫыврӑн,шуйхансах пурӑнан.
Эс мӑнаҫ пӗр чухне, тарӑхан тепӗр чух,
Лӑпкӑ мар кӑмӑлу пӗр пек чӑрсӑр ялан.

Мӗнпур ирсӗр, каппайчӑк, вӗт-шакӑр эшкер,
Халӑхӑм, сан чунна ирсӗрлерӗ тискер,—
Хӑв кун-ҫул шӑпине хӑв алла илмесен,
Эсӗ тӳрленессе ман шанас-ха мӗскер?

Тӑванне тӑванах кураймасть ним ҫукран,
Пур ҫӗрте харкашу, пулӑш ҫук турӑран.
Вылькӑ-чӗрлӗх куллен сайралать кӗтӳре,
Чухӑн халӑх сывлать арантан та аран.

Влаҫпа мулшӑн хӗрет куллен-кун хирӗҫӳ,
Тавлашаҫ хуҫасем, сан ҫук,—теҫҫӗ, ӗҫӳ.
Ҫав хура кирӗке эс хырса тӑкмасан,
Ӗмӗрех хӗн-хурта пулӗ санӑн пуҫу.

Пӗчӗкех ту ҫине улхаймастӑн пулсан,
Мӗскерле чун-чӗрӳ лӑпкӑ пултӑр-ха сан?
Чӑн тӗрек ҫук пулсан, ҫук пулсан ҫирӗп вӑй,
Чӗрери кӑмӑлу ма ҫырлахтӑр-ха сан?
Анчах эс, пӗр-пӗр ҫын кӑтартсан тӗрӗс ҫул,
Хӑтӑратӑн ӑна айванла ылханса.

1886.

* * *

Ларать мӑнтӑр бай, сыхлать выльӑхне,
Сутать—вунӑ пуҫ, упрать—ҫӗрӗшне,
Вун пуҫ илекен тата ҫиелтен
Тытать-сӑптӑрать тӑхӑрвуннӑшне.

Пӗриншӗн тепри—чи ирсӗр тӑшман.
Ҫаять хулана, шыв сыпать Иртышран,
Унта элеклет тӳре-шарана,
Ҫиле таврӑнать хавас хӑй чунтан.

Ыраҫҫӗ утсем пӗрмай чупӑран,
Ҫӗсъе якалать парӑмсем нумайран,
Ҫашни хӑтланать пит чееленсе,—
Аллах пурпӗрех ҫӑлмасть тамӑкран.

Пӗр ним чӗнменни «хӑравҫӑ» ята
Илет те ваккат ӑсатать вӑл суда.
Халь пӗтӗм хӑват байсен аллинче,
Хӗнеҫ ултавҫа, вӑл ҫаплах тепринче
Укҫан сутӑнать усал йытӑлла
Таса тӳр ҫынна ҫыртма пырӗнчен.

Сӑмах ҫук юратура,
Ун чӗлхи—хӑйне кура:
Хыпӑнать куҫра хӗлхем—
Эс хӑвах ӑнлан вара.

Эп те ӗлӗк савнипе
Ҫалаҫса ҫав чӗлхепе,
Анчах халь вӑл асӑмран
Тухса ӳкрӗ пӗтӗмпех.

1894.

А. ЭСХЕЛЬ куҫарнӑ.



# Ěçсыннисем канаççě

Вăрманти кукăр-макăр ансăр сукмакпа çул çÿремелли чăматансем йăтнă çамрăксем хавассăн калаçса утаççě. Атăл леш енне каçсанах, вěсене кану çуртне машинăпа кайма сěнчěç, анчах яшсем вăрман çулěпе çуранах çитесшěн пулчěç. Вăрманти илемлěх, темтем тěрлě кайăк юрри, хитре чечексем, аслатиллě çумăр хыççăнхи озон шăрши çамрăксене машинăпа каяссинчен ытларах килěшрě. Халиччен курман илемлě вырăнсемпе такамăн та паллашас килет ěнтě.

Утнăçемěн таврари сăнлăхсем самантсерен улшăнса пычěç. Çурхи шывпа тулнă затон леш енче хăйăрлă сăртра юмахри пек капăр дачăсем курăнма пуçларěç. Вěсем ěмěр-ěмěр ешěл тумпа пěркеннě хырсемпе чăрăшсем хушшинче вырнаçнă та, юриех такама кěтнě пек туйăнаççě. Вěççěр-хěрсěр ешěл хыр вăрманě дачăсене пур енчен те хупăрласа илнě.

«Учительсен Шупашкарти кану çурчě» тесе çырса çапнă капăр хапха умěнче çамрăксем пěр самантлăха чарăнса тăраççě. Инçе çултан килнě хыççăн халь кăштах ларса канма та пулать, анчах ыванниине никам та туймасть. Вěсем пурте хаваслă, телейлě, пичěсем çинче те ěшенни пачах та палăрмасть.

Канма килнисене регистратурăра ăшшăн кěтсе илчěç. Регистратор Антонина Ефремовна Бурденкова пуринпе те кăмăллăн паллашрě (варринчи ÿкерчěк). Халь çеç килсе çитнě çамрăксен пěр ушкăнě Ульяновск облаçěнчен пулчě. Мария Советовăпа Анастасия Блохина иккěшě те Игнатьевскри Степан Разин ячěпе тăракан фабрикăра ěçлеççě, иккěшě те ткачиха. Мария Советовăпа Анастасия Блохина пěрре кăна мар лайăх ěçленěшěн мухтава тивěçлě пулнă. Кăçал Анастасийăна кану çуртне кайма путевка парса парнеленě. Анчах хěр хăй ăшěнче çаплах фабрикăри юлташěсемпе, пěр цехри тантăшěсемпе уйрăлаймарě. Мария Советова пěлтěр те кунта пěр смена каннăччě, Шупашкарти кану çурчě ăна питех те килěшнěччě.

Ткачихăсемпе пěрле Игнатьевскри тăлăх ачасен çуртěнчи воспитательница Антонина Степанова Рогошкина канма килнě. Вăл та, ткачихăсем пекех, тăхăр çул ытла ěнтě тăлăх ачасене вěрентсе пурăнать. Кану çуртне кайма хатěрленсен, ăна ачасем пурте пěрле пухăнса ăсатнă, лайăх канма, малашнехи ěçсем валли çěнě вăй пухса таврăнма ырă сывлăх суннă, çул çине парнесем илсе панă.

Кану çуртěнчи кун ирхине сакăр сехетре пуçланать. Пур çěртсе тăванла ăшă кăмăлпа йышăннине, кěтсе илнине туятăн. Столовăйра канма килнисене чи хаклă хăнасене йышăннă пекех пăхаççě, хăна тăваççě, тутлă апат çитереççě. Аня Васильева официанткăна кунта пурте кăмăллаççě, вăл хăй те канакансемпе туслă. Канакансем ăна «пирěн Аня» тесе чěнеççě (аялти, сулахайри ÿкерчěк).



Ирхи апат хыççăн пуриншěн те культурлă кану пуçланать. Кичем мар кунта. Шашка-шахмат вăййисемпе интересленекенсем йывăç сулхăнне е клуба пухăнаççě те хěрÿ вăйă пуçланать. Çав вăхăтра теприсем волейболла выляççě е футболпа киленеççě, виççěмěшěсем çěнě юрăсем вěренеççě. Сар хěвел тÿпере хěртсе пăхма тытăнсан затонра кимěпе ярăнма васкаççě е ушкăнпа шыва кěрсе, хěвел çинче пиçеççě.

Халлěхе хăшě-перисем шыва кěме каяйман-ха. Акă икě çамрăк йывăç сулхăнне вырнаçса, шахмат хăми çинче «çапăçу» пуçлаççě (сылтăмри ÿкерчěк). Чапаевски поселокри Владимир Щеглов маттур футболист кăна мар, шахмăтла та ăста вылять. Вăл хăйпе пěрле вылякан Муркаш районěнчи Юçкасси шкулěнче ěçлекен Владимир Самойлов учительтен виççěмěш хут выляса илчě. Куракансем Самойлова тем тери хавхалантарчěç пулин те, учитель хăй «противникне» ниепле те çěнтереймерě.

Инçех те мар, çырма хěрринчи вăрăм пусма площадки çинче хастар юрă кěвви илтěнсе каять. Мускавран канма килнě Роман Иванович Чудаков тавра çамрăксем пухăнса ларнă. Роман Иванович çулěпе çамрăк мар ěнтě, вăл аллă çултан та иртнě, анчах сăнран ăна пурте вăтăр-вăтăрпилěк çулсенче çеç тесе йышăнаççě. Тен, чăнах та, тулăх та телейлě пурнăçра вăл, хăй каларěшле, ватăлас вырăнне çамрăкланса пырать-тěр? Хăть мěнле пулсан та çамрăк чунлă композитора хěрсемпе каччăсем тÿрех кăмăлларěç те, çěнě юрăсем вěрентме ыйтрěç. Часах пěри çěнě юрă пичетленнě «Ялав» номерне йăтса пычě. Малтанах пурте юрă вěренесси пирки





иккĕленкелерĕç, сăмахĕсене пĕлместпĕр терĕç, анчах юрă кĕвви-не пĕрре выляса парсанах яш-кĕрĕмсем юрра хапăлласах килĕш-терчĕç. Кĕтмен çĕртенех кану çур-тĕнче художествăллă пултарулăх кружокĕ пулса тăчĕ. Роман Ива-нович пулăшнипе çамрăксем киле каяс умĕн ăсату каçнеирттерме хавхалансах хатĕрленчĕç (сула-хайри ӳкерчĕк).



Учительсен Шупашкарти кану çуртĕнче Чăваш республикинчи ĕççыннисем кăна мар, тăванла республикăран килнĕ çынсем те нумай канаççĕ. Кунта Мускав, Ленинград, Горький, Ульяновск, Киев, Мурманск хулисемпе Мари, Мордва, Тутар республикисенчен килнĕ учительсемпе искусство ра-ботникĕсене курма пулать. Вĕсем пурте пĕр çемьери çынсем пек туслă пурăнаççĕ. Мускавран кил-нĕ çамрăк учительница Таисия Андреевна Красавцева чăваш хĕ-рĕсемпе малтанхи кунах çывăх туслашса кайрĕ. Çамрăксем кĕске вăхăтра пĕр-пĕрин ĕçĕсене те, шу-хăш-кăмăлĕсене те пĕлсе çитрĕç. Таисия Андреевна чăваш кĕписе-не питех те юратса пăрахрĕ.

— Мускава таврăнсан эпĕ чă-ваш хĕрĕсен костюмне çĕлетĕп,— терĕ те Таисия Андреевна, чăваш кĕпине тăхăнса пăхрĕ (çӳлти ӳкерчĕк). Вăл чăваш тĕррисене ӳкере-ӳкере илчĕ, кĕпесене мĕнле çĕленине ыйтса пĕлчĕ. Чăваш кĕпи вырăс хĕрне те шутсăрах килĕшет иккен.

Мускаври çамрăк художница Инесса Мироновна Пинштог каннă вăхăтрах малашнехи ĕçсем валли эскизсем тăвать. Вăл Му-скаври полиграфи институтĕнчен вĕренсе тухнă хыççăн ача-пăча кĕнекисене илемлетес тĕлĕшпе ĕç-лесшĕн. Ăнаçлă ĕç хыççăн лайăх канма та кăмăллă. Анчах вăл кану çуртĕнче пурăннă вăхăтра та юратнă ĕçне манаймасть. Чĕре кăмăллана илемлĕ вырăнсене ӳкерсе илмесĕр чун чăтмасть (варринчи ӳкерчĕк).



Кану çуртĕнче учительсемпе ис-кусство работникĕсемсĕр пуçне рабочисемпе служащисем те чы-лай канаççĕ. Спортсменсем кăçал-хи спорт вăййисен ăмăртăвĕсенче мала тухма лайăх канса çĕнĕ вăй пухаççĕ. Чапаевски поселкăри клуб çумĕнчи футболистсем кашни кулленех тренировкăсем ирттереç-çĕ, республика кубокне илесси-шĕн пыракан вăйăсенче çĕнтерес-се шанаççĕ. Анчах тренировкăра «штрафной удар» тени час-часах пулкалать те судьян та, тренерăн та футболистсемпе чылаях ĕçле-мелле пулать (сылтăмри ӳкер-чĕк).



Кану çуртĕнчи кун çĕрле вуни-кĕ сехетре тин вĕçленет. Каçхине эстрада çинче лекцисемпе док-ладсем, концертсемпе ташă каçĕ-сем пулаççĕ, клубра çĕнĕ киносем кăтартаççĕ.



Ĕççыннисем канаççĕ, ĕçчен со-вет çыннисем валли пирĕн çĕр-шывра ĕçлеме те, вĕренме те, канма та тулли правасем пур. Çаксемшĕн пирĕн халăх Совет правительствипе Коммунистсен партине пĕтĕм тулли чĕререн тав тăвать.

*Иван*
***ГРИГОРЬЕВ.***

П. Ефремов
фотоӳкерчĕкĕсем.

# Пĕр çемьере

*Калав*

Илья МИХАЙЛОВ

Саша Серафимăпа, лешĕ тем пек ӳкĕтлесен те, килĕшмерĕ.

— Ан та чĕн, пымастăп. Эпĕ пĕчĕк ача мар, пĕррепе икке чухлакан пулнă ĕнтĕ,— терĕ.

— Юрĕ эппин,— терĕ Серафима,— курăпăр-ха, каллех курăпăр, мĕнле эсĕ пĕррепе икке хушса пиллĕк туса хунине,— вăл вартах çаврăнчĕ те аналла васкаса утрĕ.

Мĕне-мĕне, анчах ку сăмахсене Серафимăран пачах та кĕтмен Саша. Питсăмартисем вут пекех пĕçерсе кайрĕç, юрать, пите кăвар пек хĕретекенĕ хăй çийĕнчех çаврăнса утрĕ-ха...

Чăн та, мĕне кирлĕ пулнă-ха ун чухне Сашăна «4» вырăнне «5» çырса лартма? Ну, кайтăр пулатчĕ «тăваттăпах». Çук вĕт, сахал пек туйăнчĕ, «пиллĕк» лартса ярсан — мухтĕç, тепĕччĕ. «Мухтарĕç», аванах «мухтарĕç» комсомолецсен пухăвĕнче. Организаци секретарĕ пулса ĕçленине те пăхмарĕç. Серафима комсомолка та мар, çапах та, авă, пĕлнĕ. Пĕлнĕ, вăл — Саша, комсорг, комсомолецсен бригади тăватă кун хушши колхоз валли радио юпиллĕх касса килсен, комсомол райкомне мĕнле отчет янине. «Пилĕк кун хушши ĕçлесе çавăн чухлĕ кубометр радио юпи хатĕрленĕ»... Эх, пуç ăçта пулнă-ши вăл вăхăтра? Райкомрисем çав кунах килсе çитрĕç. «Мĕн туса ирттернĕ эсир вăрманта пилĕк кун хушши: ĕçлесе-и е картла çапса?» тесех ыйтаççĕ. Паллах-çке ĕнтĕ, тахшин те чухламалла: ĕçе кун тăрăх хакламаççĕ, шут тăрăх хаклаççĕ тата — пахалăхпа.

Тĕрĕссипе, шучĕ те, пахалăхĕ те аван, мухтава тивĕçлĕ пулчĕç, çамрăксем вăй хурса ĕçлерĕç. Хамăр колхоза радио кĕртетпĕр çке! Анчах Саша, тăватă кун вырăнне «5» лартса ярса, комсомолецсен ĕçне, хăй шутланă пек, кăштах ӳстерсе мар, чакарса кăтартнă пек пулса тухрĕ.

Эх, темле ухмах та чухламалла та çав!.. Халĕ, ав, Серафима та аванах чĕпĕтсе илчĕ.

Çапах та, Петясем патне пĕрле кайнă пулсан, юратчĕ те пулĕ. Тен, Петяпа иккĕшин хушшинче мĕн çамрăкранах пынă çирĕп туслăх тепĕр хут çĕнелсе кайнă пулĕччĕ?! Тен, Петян çав тери пысăк йăнăшне те тӳрлетме пулăшнă пулĕччĕ?! Серафима çавăн пиркиех васкарĕ ĕнтĕ унта. Вăл пархатарлă ĕç тума кайнине уççăнах пĕлсе юлчĕ пулин те, Саша чĕринче кĕвĕçӳ хумĕ çĕкленсе юлчĕ. Пустуй кĕвĕçнине вăл хăй те туять, çапах та, Петя, авланиччен, Серафимăшăн çуннине халĕ те манаймасть-ха. Юрату — юлташа та пăхмасть çав. Сашăпа Серафима ун чухне пĕр-пĕринпе уççăн калаçса курманччĕ, анчах иккĕшин хушшинче вăйлă туйăм пуррине вĕсем иккĕшĕ те сиснĕ. Серафима ăна юратнă-мĕн. Çавăнпа та вăл Петяпа, чун савман ачапа, калаçма килĕшмен. Юрату — чун-чĕрене ирĕксĕрлениле килекен япала мар иккен.

Петя вара иртнĕ çулхине Серафимăн çывăх юлташне, Нинăна, качча илчĕ. Нина — колхозра ырми-канми ĕçлесе, чыслă ят илме тивĕçлĕ пулнă хĕр. Виçĕм çулхине ăна Петясен бригадине ертсе пыма суйласа лартрĕç. Вăл часах хăй пултаруллă бригадир иккенне кăтартрĕ. Колхоз ĕçĕнчен яланах айккине пăрăнса çӳрекен Хирлеп Ваньки те, Нина бригадирта ĕçлеме пуçласан, эрнерен бригадăра ĕçлеме пикенчĕ. Халĕ ун пек тăрăшса ĕçлекен те сахал, теççĕ.

Ĕçри калаçусем, шӳтлесе кулнисем-вылянисем Петяпа Нинăна часах çывхарма пулăшрĕç. Вара хăйне Серафима пачах та юратманнине туйса илнĕ Петя Нинăна юратса пăрахрĕ. Иртнĕ кĕркунне вĕсем, колхозра халиччен пулман чаплă туй, хаваслă туй туса ирттерчĕç.

Сашăпа Серафима вăл туя пĕрне-пĕри хытă юратакан туссем пулса пычĕç.

Акă ĕнтĕ, халĕ, мăшăрланни çулталăк çитес чухне, Петя Нинăна хăйĕнчен уйăрса ярать, теççĕ.

Серафима вĕсем патне васкаса чупрĕ.

Саша вара, комсомолецсен пухăвĕнче Петя хăйне çивĕч критикăпа çунтарнине çав тери йывăррăн чăтса ирттернĕскер, унта каймă килĕшмерĕ.

«Секретарь вĕт эпĕ, организаци секретарĕ. Ман вĕсем патне каймаллах»,— шутласа илчĕ вăл, юлашкинчен хăйĕн йывăр кăмăлне çĕнтерсе.

Клуб умне колхозри парторганизаци секретарĕ Артемий Иванч килсе тухрĕ. Унăн галифе кĕсйинчен бутылка мăйĕ курăнса тăрать. Пăккине хăçат таткинчен туса чикнĕ.

— Серафима кунта килнĕ, терĕç. Ăçта кайрĕ?— тӳрех, сывлăх сунмасăрах, ыйтрĕ вăл.

— Сывлăх сунатăп, Артемий Иванч. Серафима Петясем патне кайрĕ. Вĕсен унта темле трагеди, тет-и...

— Çапла. Эпĕ ăна паян ирех илтсе пĕлтĕм. Хам та унта каясшăнччĕ-ха. Анчах... Серафима кирлĕччĕ. Итле-ха, Саша. Пыр, эсĕ те вĕсем патне кай. Эпĕ унта часах çитетĕп. Юлташлă вĕт эсир. Калаçăр, ăнлантарăр ăна, аташма пуçланăскерне, пирĕн çирпывйри юратупа çемье пĕлтерĕшĕ çинчен. Тата эсĕ, Саша, клуба аванрах тирпейле-ха. Кĕçĕр райкомран лекципе килеççĕ.

— Мĕн çинчен — лекци?

— «Социализмла обществăри çемье çинчен». Эпĕ ирех калаçса татăлтăм. Ну, вĕçтер.

* * *

Саша алăка хăюллăн уçса пӳрте кĕрсе тăчĕ те, çакăн пек картина курчĕ: урай варринче Нина арчи ларать, ун çине тӳшекминтер купаласа хунă. Калăн: килтен хĕр тухса каять, тесе.

Петя икĕ аллине икĕ кĕсйине чикнĕ те чӳрече витĕр урамалла пăхса тăрать. Çăварĕнче пирус. Вăл пӳртре сывламалла мар тĕтĕм мăкăрлантарса тултарнă.

Серафима ун çумне пырса тăнă та тăрăшсах тем çинчен «ӳкĕтлесе» калаçать. Вăл алăк сассине илтсе, çаврăнса пăхрĕ те, Саша унăн куçĕсем аванах хĕрелнине сăнарĕ. Куççулĕ те типсех çитмен-ха.

Нина, чавсипе сĕтел айккине тĕртĕнсе ларнăскер, тарăн шухăша кайнă. Вăл Саша килсе кĕрсен те ун çине пуçне çĕклесе пăхмарĕ.

Петя амăшĕ çук. «Куçăм ан куртăр» тесе, кӳрше кайса ларнă пулмалла.

«Трагеди» — шухăпласа илчĕ Саша.

— Акă, тепĕр защитник килсе çитрĕ, савăнăр,— татса хучĕ Петя, Саша килсе кĕрсенех.

— Мĕн хăтланатăр эсир кунта?— тĕлĕнсе ыйтрĕ Саша, ним пĕлмен пек пулса, — эпĕ защитнике вĕренменччĕ-çке...

— Мĕн ĕçпе килтĕн вара... кун пек вăхăтра?

— Хм... ĕçĕ пур-ха вăл, мăй таранах. Анчах, эсир мĕн тăвататăр кунта? Ма пӳрте салху? Виле çинчи пек...

— Мана уйăрма пикеннĕ,— салхуллăн каларĕ Нина,— эпĕ хăйшĕн тăрăшни ун кăмăлне килĕшмерĕ пулас.

— Упăшкашăн çавăн пек тăрăшаççĕ-и вара, ĕçкунĕпе штрафласа-и?— вартах çаврăнчĕ Петя,— эсĕ мана юратман, юратмастăн та. Авă, сан савни,— Саша енне пуçне сулчĕ вăл,— кашни каçах клубра пĕрле, çурçĕрччен ларатăр. Тем тăватăр унта, пĕлместĕп.

— Эх, Петя, Петя... Пачах аташса кайнă иккен эсĕ. Клуба, ху та пĕлетĕн, пĕр Нина кăна мар вĕт, эпĕ те, ытти çамрăксем те яланах, кашни каçах çӳретпĕр. Пĕр эсĕ çеç юлашки вăхăтра çӳреме пăрахрăн. Вĕренме те çавах. Намăс сана Нинăна ун пек сăмахсем калаçа кӳрентерме. Тата... тата... Эпĕ уççăн калама та вăтанмастăп, эпĕ сан пек чуххăм, суя сăмахсем калама вĕренмен. Тата... Сашăпа эпир пĕрне-пĕри çав тери юрататпăр. Саша кашни каçах мана ăсатать,— Саша çине ăшă куçĕсемпе пăхса каларĕ Серафима.

— Çапла,— терĕ ним калама аптраса ӳкнĕ Саша, Петяпа Серафима çумне пырса тăрса,— намăс вĕт, юлташăм. Юлташсенчен аван мар. Мĕн калăн-ха эсĕ, юлташсем умĕнче? Мĕн калăн?

— Çапла ĕнтĕ, тинех мана тавăрма вăхăту çитрĕ. Тавăр, паянах ман çинчен пухура ыйту ларт. Анчах, эпĕ те калама пĕлĕп. Эпĕ хама юратман арăмпа пурăнма пултараймастăп. Кашни кун, киле таврăнать те, мана туптама пуçлать. Туптать-туптать те тухса каять. Çурçĕрччен ан та кĕт вара. Вăл кăна-им-ха, юлашкинчен пилĕк ĕçкунĕ штрафласа хучĕ. Вăт сана, арăм! Арăм пулмарĕ вăл маншăн, диктатор пулса тăчĕ,— лапплаттарса хучĕ Петя, каллĕ-маллĕ уткаласа çӳренĕ май.

— Эх, Петя, Петя... Мĕн калам-ши сана? Мĕнле сăмахсемпе хам чĕрери шухăш-туйăмсене каласа парам-ши? Иртнĕ пухура эсĕ

Сашăна: «Юлташсенчен уйрăлса кайнă, вĕсене пăлламасăр те пулнă» тесе критиклерĕн. Тивĕçлĕ критика пулчĕ. Саша, тен, юлташĕсен сăмахĕсене чĕри çумне илсе, тÿрленме те пултарĕ. Анчах, юлашки вăхăтра эсĕ ху пăсăлма пуçларăн. Ĕç хыççăн клуба çÿреме те пăрахрăн, кружок занятийĕсене пыми пултăн. Манпа та темле сиввĕн çеç калаçатăн. Ман ăш, тем усал япала сиксе тухассине сиснĕ пекех, вăркама тытăнчĕ. Тĕрĕс, эпĕ санпа калаçнă, калаçман мар, анчах та «туптаман». Эсĕ ман сăмахсене ним вырăнне те хуман иккен. Сашăран кĕвĕçнĕ. Вăл кăна мар, эсĕ, никамран ыйтмасăрах, Хирлеп Ванькине «Айгир» ятлă лашана парса янă. Лешĕ, вăрмантан пĕрене тиесе тухса, кÿршĕ яла кайса сутнă. Ункçипе иксĕр пĕрле ĕçнĕ пулас, сана штраф тăвасси пирки правление хамах çырса патăм вара...—Нинăн сывлăшĕ пÿлĕнсе килчĕ, вара вăл, ура çине тăрса, форточка уçса ячĕ те малалла калама пуçларĕ:—Хам бригадир, упăшкам—çумри юратнă сыннăм—конюх. Тăрăшса ĕçлесен, эпир ялти ятлă çынсем пулăпăр, ялйыш пăхса савăнмалли илемлĕ мăшăр пулăпăр тесе ĕмĕтленнĕччĕ. Хĕлле курссене вĕренме кайăпăр, тенĕччĕ. Çук... пулмарĕ. Эх, Петя... мĕн çитмерĕ-ха сана, çав Ванькапа сыхланса кайма? Пирĕн укçа-тенкĕ çитмест-и, тырпул сахал-и, çиепуçа тăхăнма тумтирĕмĕр çук-и? Ĕçсе килнĕ тата, ÿсĕр. Халĕ те аванах уйрăлса çитмен вĕт-ха. Эх, чунăм!..—терĕ те Нина, каплансa килнĕ куççульне тытса чараймасăр, ĕсĕклесех тула чупса тухрĕ.

Çемçе чĕреллĕ Серафима каллех чăтаймарĕ, çанни вĕçĕнчен шур тутăр кăларса куçĕсене шăлкалама пуçларĕ. Часах вăл та, пуç çине килсе лекнĕ хуйха пĕрле пусарма тесе, хĕр-тантăшĕ хыççăн тула тухрĕ.

Пÿртре юпа пек хытса тăракан Петяпа Саша иккĕшех юлчĕç.

— Мĕнле пулса тухрĕ-ха ку?—ыйтрĕ, пÿртри шăплăха пăсса, Саша,—ĕçсем пĕтсен эпир те Серафимăпа иксĕмĕр, туй тума калаçса татăлнăччĕ. Туйра сире—çамрăк мăшăрсене, ват çынсемпе танах, хисеплĕ вырăна лартмалла пулать, тесе калаçса хунăччĕ. Акă ĕнтĕ халĕ, пыр та кур... Халĕ ĕнтĕ, хисеплĕ вырăна мар, юлташсен сучĕ умне лартмалла пулчĕ сана, Петя. Мĕнле аван мар капла, ай аван мар. Комсомолец...

— Комсомолецăн та хăйĕн чĕри, хăйĕн сисĕм-туйăмĕ пур.

— Мĕн сăлтавпа Нинăна манран кĕвĕçен-ха эсĕ? Пĕлетĕн вĕт, эпир Серафимăпа пĕрне-пĕри юратса пурăннине. Эпĕ Нинăна нихçан та юратса курманнине те пĕлетĕн. Аван хĕрччĕ Нина, такам та юратмалли хĕрччĕ. Анчах эпĕ Серафимăна юратнă. Эсĕ те пирвай ăна ăмсанаттăнччĕ, анчах ман нихçан та кÿлешÿ туйăмĕ пулман, пулмасть те,—терĕ Саша, тин анчах, Серафима кунта васкаса килсен, хăйĕн чĕринче те кÿлешÿ туйăмĕ çуралса юлнине аса илсе. «Куншăн эпĕ хама хам нихçан та каçармастăп»—çийĕнчех çиçсе илчĕ ун пуçĕнче çак шухăш.

— Саша,—йывăррăн çавранса тăчĕ Петя Саша енне, анчах та ăна куçĕнчен пăхаймарĕ,—эсĕ мана куншăн каçар... Эпĕ хам та пĕлетĕп, анчах... Сăлтав... сăлтав шыранă кăна вăл ман—кÿлешÿ. Çапах та, эсĕ мана каçарсам ĕнтĕ.

— Эпĕ каçарăп, анчах Нина тата юлташсем каçарĕç-ши?

— Эпир уйрăлсах уйрăлман вĕт-ха,—мăкăртатса илчĕ Петя.

— Çапах та, пухура сÿтсе явмаллах пулать. Ху пĕлетĕн йĕркине.

— Тавăрас тетни?

— Манăн сана нимшĕн тавăрмалли те çук. Хама хам вара эпĕ нихçан та каçарас çук. Пĕлетни—мĕншĕн? Акă мĕншĕн. Эпĕ, Петя, чăнах та сана çилентĕм. Иртнĕ пухурanpa эпĕ, хам йăнăшсене тÿрлетес вырăнне, пачах урăхла, юлташсенчен, хам йăнăшсене тÿрлетме пулăшакан юлташсенчен, пăрăнса пурăнтăм. Критика—йывăр япала иккен вăл, ăна иккен, йывăррине пăхмасăрах, йышăнма пĕлес пулать. Унсăрăн ĕç, пурнăç йăлтах чĕрре кĕрсе кайма пултарать. Акă, мĕн пулса тухрĕ-ха? Эпĕ—комсорг, критикăна тÿсеймесĕр, эрне ытларах юлташсенчен сивĕнсе, пăрăнса çÿрерĕм те, вăл вăхăтра эсĕ те—ман çывăх юлташах—пăсăлма ĕлкĕрнĕ, хамăн та, клубра ĕçсем япăхланнă. Пĕлместĕп, тен, колхозра, татах мĕнле те пулин киревсĕр ĕçсем пур пулĕ. Вĕсемшĕн пуриншĕн те эпир, чи малтан эпĕ айăплă. Кăна эпĕ паян тата уççăнрах курса ăнлантăм. Акă çитес пухура çаксем çинчен калаçатпăр та. Хĕртчĕр, тата хытăрах хĕртчĕр мана. Йăлтах йышăнатăп. Ну, вара, пурнăçра кун пек пысăк йăнăш тăвасран малашне пирĕн сыхланас пулать. Эсĕ те, тен, Петя, хăвăн шухăшна улăштарăн? Нина кун пек мăшкăла тивĕçлĕ хĕр мар.

— Эпĕ ун мăшкăлне тÿсме тивĕçлĕ-им вара?

— Хальхинче тивĕçлĕ. Кам хушнă сана Хирлеп Ванькипе сыхланса, никамран ыйтмасăр, ăна лаша парса яма?

Калитке уçăлса хупăнни илтĕнчĕ те, пÿрте часах Артемий Иванч кĕрсе тăчĕ. Ун хыççăн Нинăпа Серафима та кĕчĕç. Вĕсем иккĕшĕ те тĕпелти сак çине иртсе ларчĕç.

Артемий Иванч пĕр вăхăт хуппи урай варринче ларакан арча çине, унтан Петяпа Саша çине, каллех арча çине пăхкаласа тăчĕ те, картусне хывса, Саша çумне пырса ларчĕ.

— Сывлăх сунатăп, çамрăксем, — терĕ вăл, кĕсйинчен бутылка кăларса,—Серафима, кил-ха кунта. Пĕр стакан илсе, çак бутылкăри сĕте тултарса пар çамрăксене. Тутанса пăхчăр. Ну, ну, ан именсе тăр, часрах тултар.

Бутылкăра чăнахах та сĕт иккен.

Серафима, ним ăнланаймасăр, çÿлĕк çинчен пĕр стакан илчĕ те бутылкăран сĕт ярса тултарчĕ. Стакана çÿп-çаплă, таса мар сĕт тулса ларчĕ. Куç хÿрипе пăхса тăракан Петя та, çакна курсан, тĕлĕнсе кайсах сĕтел çывăхне пычĕ. Вăл стакана аллипе тытса пăхрĕ.

— Серафимăн пичĕ хĕрелнĕçемĕн хĕрелсе пычĕ.

— Мĕн ку?—ыйтрĕ Саша, Серафима çине тинкерсе пăхса.

— Мĕн ку? Каласа пар, Серафима,—терĕ, Артемий Иванч та.

— Эпĕ кайран сĕрсе тасатăп тенĕччĕ. Çак, Нинăсен хыпарне илтрĕм те, васкасах кунта тухса чупрăм. Юлташ вĕт-ха.

— Авă епле иккен... Фермăра таса мар сĕт тултарнă битонсем ларççĕ; лашасем навуслă витесенче тăраççĕ, навуса хырса тасатма Петя пушă мар; клубра, икĕ эрне ĕнтĕ, стена хаçачĕ тухмасть; кружоксем ĕçлеме пăрахрĕç; стройбригадăра пилĕк комсомолецран виççĕн анчах ĕçлеççĕ. Иккĕшĕ—çитмĕл те çичĕ тинĕс урлă, таçти яла, те хулана, хĕр пăхма кайнă, хамăр колхозра лайăх хĕрсем çук пек. Ну, тата ытти те унта. Мĕн пирки? Пĕтĕмшех çамрăксем, сирĕн пирки.

— Эпĕ йышăнатăп, Артемий Иванч,—терĕ Саша, йăпăрт çеç Серафима çине пăхса илсе.

— Эсĕ йышăнатăн. А эсĕ, Петя, мĕнле? Эсĕ мĕн те пулин йышăнатăн-и, çук-и?

— Йышăнатăп. Хам ăрăм хама ĕçкунĕпе штрафланине чунтанах йышăнатăп,—терĕ Петя, кăмăлсăррăн.

— А, сана мĕн, пуçран ачашламаллаччĕ-им? Кунпа çеç мар, комсомолецсен пуххинче сÿтсе яватпăр, унтан вара, ыйтăва правлени умне лартатпăр. Унсăрăн юрамасть. Эсир йăлтах пăсăлса кайма та пултаратăр. Пăсăлнă тесен те юрать. Ку арчасем мĕншĕн урай варрине тухса ларнă тата?

— Эпĕ атте-анне патне каялла таврăнатăп, Артемий Иванч,—терĕ Нина, сак çинчен тăрса арча патне утса пырса.

— Ак тата! Эсĕ, Петя, мĕн шухăшпа авлантăн? Куçу-пуçу пурччĕ-и ун чухне, çукчĕ-и? Эсĕ Нинăна унчченех пăлланă вĕт. Мăшăрланнă вăхăтра: «эпĕ ку хĕре йĕртеп-ха, мăшкăл кăтартăпах», тесе шухăшламан пуль? Эсир пĕрне-пĕри юратнă пуль? Çу-ук, кун пек ĕç иртмест. Пирĕн саманара кун пек киревсĕр ĕçсемшĕн пуçран шăлмаççĕ. Пĕлетĕн-и эсĕ çавна, Петя?

— Пĕлетĕп, Артемий Иванч. Эпĕ ăна чунтанах юратса пурăнаттăм, анчах вăл мана... курайми пулчĕ. Манран сивĕнме пуçларĕ.

— Эх, Петя,—терĕ Нина, Петя çумнех пырса тăрса,—мĕншĕн хăвна ху суя сăмахсемпе улталатăн. Эсĕ вĕт, Саша пекех, коллективран сивĕнме пуçларăн. Аван ĕçлесе пыраканскер, юлашки вăхăтра, ÿсĕр Хирлеп Ванькипе çыхланса кайрăн. Паян çавăн çинчен асăрхаттарса каларăм та, мана хăвалама пуçларăн. Мухмăрлă пуçупа ху мĕн тунине те чухлаймарăн. Артемий Иванч умĕнче хăвăн айăпна йышăнсан, эпĕ юлатăп. Унсăрăн—каятăп.

Артемий Иванч çамрăксем каласнă вăхăтра пуçне чиксе тем çинчен шухăшласа лараканскер, сасартăк ура çине тăчĕ те, Петя çине сивĕч куçĕсемпе сиввĕн пăхса, çапла каларĕ:

— Ытларах ачашланă çав эпир сире, ачашласа ÿстернĕ. Астăватăп, хальхи пекех астăватăп, хам авланнине. Атте-аннерен çамрăклах тăлăха тăрса юлнăскер, эпĕ вунă çул хушши пĕр вĕçĕмсĕр кĕтÿ кĕтрĕм. Настуксен пĕртен-пĕр качаки те ман кĕтÿре çÿретчĕ, анчах эпĕ, вĕсем патне апат черечĕ çитсен, вĕсене сиктерсе иртсе каяттăм. Суккăр амăшĕпе анчах пурăнакан Настукăн çи-пуçĕ çав тери чухăнччĕ, савăнпа та эпĕ, хам та çĕтĕк тумтирлĕскер, ăна вăтантарасран именеттĕм. Сăлтавĕ пулнă: эпир пĕрне-пĕри юратнă. Пĕррехинче, нумай вăхăт хушши пĕр-пĕрне курмасăр пурăннă хыççăн, эпĕ вĕсем патне пырса кĕтĕм. Амăшĕ, мана палласа илчĕ те: «Эпĕ Настукпа иксĕр хушшăрти сывлăша туятăп, юл, ачам, пирĕн патах. Çурту-йĕрÿ çук. Тен, пĕрне-пĕри юратса пурăнсан, хăçан та пулин хăвăр телейĕре тупăр»—терĕ. Эпĕ савăнсах килĕшрĕм. Настук та хавас. Унăн, арча тулли тумтир мар, арчи те çукчĕ. Амăшĕнчен юлнă пĕр хăлтăр-халтăр çÿпçе—вăл та пушахчĕ. Калава вăрăма тăсмастăп. Нушине те нумай тÿснĕ эпир, савăнăçне те куркаланă пулĕ, анчах, пĕрне-пĕри сивĕ сăмах каласа



# ЕШӖЛ ҪӖРТМЕ ПУССИ

Хир тӑрӑх ҫынсем шӑкӑлтатса калаҫса утаҫҫӗ. Тулли кӑмӑлпа хавасланса телейлӗн кулкаласа пӑхаҫҫӗ вӗсем: умра анлӑ хир тӑсӑлса выртать. Пилӗкрен ҫӳлӗ ыраш хирӗ лӑпкӑн-лӑпкӑн, ейӳ сарӑлнӑ чухнехи Ҫавал шывӗ евӗр хумханать. Ав лере, хирӗн тепӗр вӗҫӗнче, ӗне кӗтӗвӗ ҫӳрет. Ешӗл ыраш хушшинчен самӑр ӗнесен сарлака ҫурӑмӗсем ҫеҫ курӑнаҫҫӗ.

— Пит аван,—чӗринчи савӑнӑҫне шӑнӑҫтараймасӑр ҫапла ҫеҫ калать пӗри.

— Мӗн каласси пур,—килӗшет тепри,—ӗнесем те тутӑ, сӗт те хутшӑнать, ҫуркунне валли силос та, хӗлле валли утӑ та пулать.

— Аставатӑр-и, пӗр ҫулхине ҫӗртме пуссине ыраш акнӑшӑн, кайран унта выльӑх ҫӳреттернӗшӗн эсир манпа ятлаҫса та илнӗччӗ,—сӑнасарах пӑхать малтан сӑмах хускатни.

— Кӑҫал «Торсдаг» та ӑнса пулать,—юлташне илтмен пек пулса сӑмах хушать иккӗмӗшӗ.

— Килес ҫул кунта ыраш та ӑнса пулать,—терӗ каллех малтанхи.

Республикӑри малта пыракан колхозсем ҫӗртме пуссине ахаль выртмарҫҫӗ. Ҫӗрпӳ районӗнчи «Ҫӗнӗ пурнӑҫ» колхозра, хура ҫӗртме пуссине ешӗл ҫӗртме тӑвасшӑн колхоз руководителӗсен пайтах ӗҫлемелле пулнӑ. Ватӑрах колхозниксем председатель шухӑшӗпе малтанах килӗшсшӗн пулман. Пархатарсӑр ӗҫ, вӑрлӑха ҫеҫ сая яратпӑр,—тенӗ вӗсем. Правлени ларӑвӗнче те, пухура та, пӗрре кӑна мар тавлашу пулкаланӑ. Колхозри коммунистсемпе комсомолецсем тӑрӑшнипе хура ҫӗртме пуссине ешӗллетме тытӑннӑ.

Халӗ ҫав тавлашуллӑ вӑхӑтсем иртнӗ ӗнтӗ, манӑҫа та тухма пуҫланӑ.

Ялхуҫалӑхӗнче малта пыракансен опычӗсене шута илсе, «Ҫӗнӗ пурнӑҫ» колхозра ҫӗртме пуссине ыраш е пӑрҫа акса усӑ курасси халь йӑлана кӗнӗ ӗнтӗ. Пӑрҫа акнӑ ҫӗртме пуссинчен кашни гектартан вӑтам шутпа ҫирӗм тӑватӑ центнер ытларах тырӑ пуҫтарса илнӗ, ҫапла вара агротехникӑн пӗтӗм комплексне пурнӑҫласа пыма май тупнӑ.

Иртнӗ кӗркунне «Ҫӗнӗ пурнӑҫ» колхоз хӗрӗх гектара яхӑн ҫӗртме пуссине ыраш акса хӑварнӑ. Халь ку пусӑра выльӑх ҫӳретеҫҫӗ, ыраша ҫуррине яхӑн ешӗлле ҫулса силос хатӗрлесҫҫӗ. Ешӗл ыраш ҫинче ҫӳренӗ вӑхӑтра кашни сӑвакан ӗне вӑтам шутпа вунпилӗк процент сӗт ӳстерсе пама тытӑнчӗ, гектартан 10—15 тонна таран ыраш ҫулса илчӗҫ.

Колхоз кӑҫал ҫуркунне ҫитмӗл гектара яхӑн хура ҫӗртме ҫине «Торсдаг» пӑрҫа акса хӑварчӗ. Пӑрҫа аван ӳсет, унӑн тухӑҫӗ те лайӑх, ыраш акма вӑхӑт ҫитиччен пӗр уйӑх малтан «Торсдаг» пӑрҫа пулса ҫаврӑнать те, ана ҫине тислӗк кӑларса колхоз сухаласа пӑрахма ӗлкӗрет.

— Килес ҫул ыраш вунпилӗк-вунултӑ центнер кашни гектартан илсен,—эпир ешӗл ҫӗртме пуссинче тырпул тухӑҫне вӑтӑр центнера ҫити ӳстеретпӗр,—хавасланса пӗлтерет пире колхоз председателӗ.—Акӑ вӑл—ешӗл ҫӗртме усси, кунта ҫумкурӑкӗ те пусмасть.

Ҫапла ӗҫлеҫҫӗ, ҫапла тӑрӑшаҫҫӗ «Ҫӗнӗ пурнӑҫ» колхозникӗсем вӑйлӑ тырӑ туса илме. Вӗсем ҫӗнӗлле ӗҫлеҫҫӗ, наукӑпа тусла пурӑнаҫҫӗ. Ҫӗртме пуссине тӗрлӗ культурӑсем акса, агротехникӑн пӗтӗм комплексне пурнӑҫлама колхоза селекци станцийӗ тӑтӑшах пулӑшса пырать.

Ӳ к е р ч ӗ к с е н ч е: 1: Ҫӗртме пуссинчи ыраш калчине кӗтӳ кӗртнӗ. 2: «Торсдаг» пӑрҫа ҫӗртме пуссинче ялanах ӑнса пулать. Колхозниксем ӑна ҫумкурӑксенчен тасатаҫҫӗ.

**Б. Тимкин** фотоӳкерчӗкӗсем.




курман вара. Эпӗ, кун чухлӗ пурӑнса, арӑма кӳрентермелӗх сивӗ сӑмах каласа курман. Тен, ҫавӑнпа та пулӗ, мухтанмасӑр калатӑп, пирӗн пурнӑҫ тӗрӗс ҫулпа пырать. Хӑварах куратӑр: эпир халь пуян пурӑнатпӑр, яланах хаваслӑ, пирӗн ачасем—колхозри ӗҫченсем, вӗренме чулаканнисем—шкулти отличниксем... Ҫапла вӑл пурнӑҫ. Телейлӗ пурнӑҫ—юратура.

Петя, тем ӑнланса илнӗ пек пулса, Нина ҫине ӑшӑ куҫӗсемпе пӑхса илчӗ, унтан, Артемий Иванч умне пырса, ӑна алӑ пачӗ:—Каҫарӑр, Артемий Иванч. Эпӗ пысӑк йӑнӑш турӑм. Хама арӑм штрафланӑ пирки тарӑхса ӗҫке ерӗҫрӗм. Саша, сана та паян ҫилентертӗм пулас, каҫар. Паянах комсомолецсене пух. Калаҫар, вараланма пуҫланӑ чунсене тасатар. Критикӑн усӑ ҫилӗпе тасалар.

— Эсӗ Нинӑран каҫару ыйт-ха, вӑл каҫарӗ-и?—терӗ Серафима, ура ҫине тӑрса.

— Нина,—терӗ Петя, ун умнех пырса тӑрса,—Нина, мӗнле йывӑр мана сан умӑнта... Пуҫ...

— Мухмӑрлӑ сан пуҫу,—терӗ Нина, — кун пек мухмӑрсем малашне те пулас пулсан, эпӗ сана тек каҫарассӑм ҫук. Халь кая юлман-ха. Эпир пӗрне-пӗри тивӗҫлӗ мӑшӑр ҫех мар, ялшӑн, колхозшӑн мухтавлӑ мӑшӑр пулма пултаратпӑр.

— Нина, каҫар. Пӗр эсӗ анчах маншӑн...—терӗ те, Петя, арӑмне ыталаса илчӗ. Вӗсем, пӳртре ҫынсем пуррине мансах, хӗрӳллӗн чуптурӗҫ.

Килне килсе кӗнӗ ват кинеми, Петя амӑшӗ, ҫакна курчӗ те:—Тавтапуҫ турра,—тесе, сӗтел енне тӑрса, хӑй ҫине виҫӗ хут хӗрес хыврӗ.

— Ну, ачасем, арчана тирпейлесе лартӑр та, пурте ӗҫе васкӑр. Нина, сан унта Хирлепов ӗҫе тухман.

— Лашасем патне кайнӑ чухне Нинӑпа иксӗмӗр каласа хӑваратпӑр ӑна,—терӗ Петя, Нина ҫине ыйтуллӑн пӑхса,—Нина ятлатӑр-ха ӑна та. Иксӗмӗре те ятлатӑр. Кирлӗ ҫав, аванах кирлӗ.

— А, эсӗ,—терӗ парторг, Серафима ҫине пӑхса,—ҫак бутылкӑна фермӑна илсе кай та, сӗтне сӗрсе тасат. Халатсем те хуралнӑ унта. Тирпей пултӑр. Каҫ кулӗм эпир Сашӑпа ҫитсе куратпӑр-ха. Каҫхине вара пурте клуба пухӑнӑр. Кӗҫӗр лекци пулать.

— Мӗнле темӑпа?—ыйтрӗ Нина.

— «Социализмла обществӑри ҫемье ҫинчен».

Петяпа Нина пӗр-пӗрин ҫине кулакан куҫӗсемпе пӑхса илчӗҫ те сасӑпах кулса ячӗҫ.

— Ну и ну-у,—терӗ Петя,—малтанах ҫакӑн пек пулнӑ пулсан, тен, эпӗ те аташман пулӑттӑм. Ну, кайрӑмӑр, Нина,—терӗ вӑл, картусне тӑхӑнса тата арчана хӑй вырӑнне вырнаҫтарса лартса.

— А, эпир, иксӗмӗр, клуба каяр-ха, — терӗ парторганизаци секретарӗ, комсомол организаци секретарне, — санӑн халь ӗҫ планӗ те ҫук, туса хатӗрлер.

Вӗсем хӑйсене шанса панӑ ӗҫсем патне кайма урамалла тухса утрӗҫ.

# Пĕр-пĕрне ăнлансан

*Калав*

Александра ЛАЗАРЕВА

Ирхине, заводсем кăшкăртнă вăхăтра, Шупашкар урамĕсенче пин-пин çын утать. Паллаканнисем те каласса тăмаççĕ, пĕр-пĕрне сывлăх сунса, саламласа иртеççĕ те, вăхăтра ĕçе çитме васкаççĕ.

Эпĕ кашни кунах ирхине хулан аслă урамĕнче Исакова тĕл пулатăп. Вăл яланах тирпейлĕ çӳрет, çи-пуçĕ таса та яка, сухалне хырмасăр вăл нихçан та урама тухмасть. Хура çӳçне хыçалалла тикĕссĕн тураса хурать.

Акă, вăл ялхуçалăх министерстви тĕлне çитрĕ те пирусне сӳнтерсе урнăна пăрахрĕ.

— Степа!—чĕнчĕ ăна çав вăхăтра пĕр хĕрарăм сасси.

— Ах, эсĕ-çке ку!—терĕ Исаков, хăйне хирĕç министерство килхушшинчен тухакан çутă кăвак кĕпе тăхăннă кăтра çӳçлĕ сарă хĕре курсан, йăл кулса.—Сывă-и, Зоя?

— Эсĕ пĕрмай кая юлса килетĕн... Ма нумай çывăратăн?—терĕ Зоя, Исакова алă парса.

— Юрать санăн аннӳ пур та... вăл сана вăрататъ, чей те ĕçтерсе ярать пуль. Манăн никам та çук вĕт. Хамăнах тăмалла, чейне те хамăнах ăшатса ĕçмелле.

— Авланас пулать эппин. Ахаль те, ватă хусаха юлатăн акă...—кулса илчĕ хĕр.

— Каларĕ! Кам мана качча пытăр? Хĕрсем питĕ тиркеççĕ,— шӳтлерĕ Исаков та.

Çав вăхăтра алăкран шăнкăрав сасси илтĕнчĕ.

— Тăхтăр,— терĕ Исаков, ал тунине çыхнă сехечĕ çине пăхса.

Зойăпа Исаков министерство çуртне кĕрсе куçран çухалчĕç.

Исаков ватă каччă мар, çамрăках та мар. Вăтăр çулхи каччă урăхла мĕнле калас? Вăл вăрçăра та пулса курнă, унта хăй ирĕкĕпе, çамрăклах кайнă. Вăрçăра ăна икĕ хут амантнă, çапах та мĕн çĕнтерӳ кунĕ çитиччен çапăçуран тухман, килне сывах таврăннă. Çу каçа Исаков килте пурăннă, кĕркунне вара ялхуçалăх институтне вĕренме кĕнĕ. Тăватă çултан вăл унтан питĕ ăста вĕренсе тухнă та, ăна министерствăрах ĕçлеме хăварнă.

— Эпир иксĕмĕр çеç телейлĕ пултăмăр-çке, Степа,— терĕ ун чухне хăйпе пĕрле вĕренсе тухнă Зоя.

— Мĕн терĕн? Ăнланаймарăм эп сана? — тĕлĕнчĕ Исаков.

— Ара, эпир иксĕмĕр çеç хулара юлтăмăр вĕт... Мана атте ыйтнипе хăварчĕç те хуть... Çавах мар-им? Пурпĕрех, эсĕ те, эпĕ те хулара... Ыттисене ав, пурне те, ялсене ярса пĕтерчĕç.

— Телейне курсах каймастăп-ха эпĕ кунта,— пуçне пăркаласа илчĕ Исаков.

— Айван эсĕ, Степа! Ăçта лайăх, ăçта телей иккенне халиччен те пĕлместĕн.

— Ман шутпа — телей вăл юратнă ĕçре. Ну, тата, паллах, юратнă тусупа пĕрле пулсан...

— Юлашки вара питĕ тĕрĕс, Степа,— савăнăçлăн кулса илчĕ Зоя.

Зоя калаçни-кулни Исакова питĕ килĕшет. Шап-шурă тикĕс шăлĕсене кăтартса çемçен те йăвашшăн кулать вăл. Сăнĕ-пĕвĕпе те темле ачаш чечек пек туйăнать. Тумланасса вара ăста та хитре тумланать, шăпах хăйĕн сăнне килĕшекен кĕпесем, туфлисем темиçе мăшăр унăн. Çавăнпа та, тирпейсĕр тумланнă хĕрарăмсене курсан, вăл яланах тиркеме пăхать.

Пĕрре, çулла, канмалли кун, Исаковпа Зоя Атăл леш енне каçрĕç. Питĕ аван унта çулла! Хĕвел вут пек хĕртсе пăхать. Унăн йăлтăркки ылттăнăн-кĕмĕллĕн ялкăшса Атăл çинче чӳхенет. Çавна пăхса тăнă чух чун савăнать. Вĕри хăйăр çинчен сиксе тăрса хумсем ăшне чăматăн.

Акă, лăпкă Атăла хумхатса, анатран шурă пăрахут хăпарать. Вăл инçе çула тухнă, васкать. Ун çине пăхса, Исаков шухăша кайса юлать. Текех вĕри хăйăр çинче выртас килмест ĕнтĕ унăн, таçталла каяс килет, хастарланса, пĕтĕм вăйне хурса, темĕнле пысăк ĕç тума ĕмĕтленет вăл.

Тĕрĕссипе каласан, Исакова кабинетра ĕçлесе ларасси тахçанах йăлăхтарса çитернĕ ĕнтĕ. Тек телефон умĕнче сводка йышăнса лар... Унтан, кашни кун тенĕ пек, циркулярсем çыр. Ĕç-и вăл вăйпитти çамрăк çыншăн? Кун пек пурăннипе, ăна вĕренни те ахаль сая кайнăн туйăнать.

Исаков малалла та вĕренесшĕн-çке-ха, май пулсанах вăл академие кĕме ĕмĕтленет. Кабинетра ларса вĕренме çуккине Исаков лайăххах туйса илчĕ ĕнтĕ, уншăн пулсан, халь практикăра пулни усă панă пулĕччĕ. Çавăнпа та унăн министерствăра мар, ялта, хирте ĕçлес килет.

Хăйĕн çакăн пек шухăшне вăл Зойăна пĕлтерсе хаваслантарас терĕ. Чăн-чăн пысăк юлташ мĕн тесен те пархатарлă ĕмĕтшĕн савăнмалла. Исаков хăйăр çинчен сиксе тăчĕ те Зоя патне çитсе чарăнчĕ.

— Зоя, эпĕ сана пĕр хыпар пĕлтересшĕн...— терĕ вăл, унпа юнашар ларса.

— Кала ара, итлетĕп!—терĕ Зоя, Исаков темшĕн сăнран та улшăнна пуçланинчен тĕлĕнсе.

Исаков хăйĕн шухăшне пĕр пытармасăр Зойăна каласа пачĕ. Каланă май вăл хĕрсе кайрĕ. Уншăн пулсан пĕтĕм колхоз хирĕ лайăх тырă ӳстерекен сăнавлă участок пек туйăнчĕ. Сипетлĕ ака-çарансенче ăратлă выльăхсен кĕтĕвĕсем çӳрĕç, шыв-шурсенче туллиех пулă та кайăк-кăвакалсем пулĕç, пĕтĕм халăх тĕрлĕ машинăсемпе савăнса ĕçлĕ. Эпĕ вĕсене хам пĕлнĕ таран пулăшăп, вĕрентĕп, терĕ Исаков.

— Çапла, чунăм... Пĕлессӳ килсен, манăн унта санпа пĕрлех каяс килет, яланах пĕр-пĕрне пулăшса, ăмăртса ĕçлĕттĕмĕр, вĕренĕттĕмĕр, телейлĕ пурăнăттăмăр,—терĕ Исаков, Зоя аллине ачашласа илсе.

Зоя, куçне чарса, Исаков çине тинкерсе пăхрĕ, вăхăтлăха сăмах чĕнмесĕр тăчĕ. Унтан тарăн сывласа илчĕ те, пуçне сулкаласа:

— Çук, Степа, ун пек пулма пултараймасть...— терĕ хуллен çеç. Зойăн ахаль те хĕвелпе хĕрелнĕ пичĕ тата ытларах хĕреле пуçларĕ.

Исаков сасартăк сиксе тăчĕ.

— Мĕншĕн, Зоя, мĕншĕн?—ыйтрĕ вăл тĕлĕнсе.

— Эх, Степа! Мĕншĕн те мĕншĕн тетĕн. Хăш чухне эс ача пек калаçатăн. Йĕркеллĕ çынсем хулана куçасшăн çунаççĕ, а эсĕ — яла!..

Исаков, ун сăмахне илтсе, чăтаймасăр ахăлтатсах кулса ячĕ. «Йĕркеллĕ çынсем, тетĕн-и? А-ха-ха-ха!.. Йĕркеллĕ»,— терĕ вăл, кулма чарăнаймасăр. Зоя çиленнĕ пек пулчĕ, хальхинче вăл та ларнă çĕртен тăчĕ.

— Шутла-ха хăвах, ну, мĕн пур ялта? Кичем, таса мар, юлташлăх çын та тупаймастăн. Театр та çук, цирк та

çук, хĕлле трамплин та çук унта. Апат-çимĕç пирки каласан та, хулара мĕн илес тенĕ — çавă пур. Шоколад та, канфет та, кекс та. Ялта мĕн пур? Çийĕнчен тата пирĕн кунта хамăрăн кил-çурт, унта пĕр-пĕр хăнтăлаллă пӳртре пурăнмалла-и? Вĕренес тесен те, хулара аванрах. Библиотеки те, кĕнеки те, вĕреннĕ çынсем те... пурте сан аллунта. Çук, çук, хам çӳлĕш ылттăн кулаласан та, нихçан та эпĕ яла кайма килĕшессĕм çук.

Зоя сăмахĕсенчен тĕлĕннипе Исаков нимĕн калама аптăрарĕ. Кĕтменччĕ вăл унран çакăн пек сăмахсем илтессе. Çавăнпа калаçнă вăхăтра ăна пачах та пӳлмерĕ.

— Зоя,—терĕ Исаков тĕлĕнсе.—Эсĕ чăнласах çапла шухăшлатăн-и?

— Чăнласах пулмасăр!

Зоя вара Исаков патĕнчен васкамасăр урăх çĕрелле пăрăнса кайрĕ. Ăна Исаков чĕнсе илетех, унпа кăнăçатех тесе шутларĕ пулмалла вăл, анчах Исаков пĕр чĕнмесĕр пăхса ăсатса ячĕ...

Çакăн хыççăн, Зойăпа Исаков нумай вăхăт хушши пĕрпĕринпе калаçмасăр пурăнчĕç, куçа-куçăн курнăçасран та пытанарах çӳрерĕç.

...Пĕр канмалли кунхине вĕсем, стадионра тĕл пулсан, каллех мирлешрĕç.

— Степа, эсĕ халĕ те яла кайман иккен-ха?—терĕ Зоя, кулкаласа.

— Кайман-ха, сана кĕтетĕп,— терĕ Исаков та шӳтлесе. Вĕсем юнашарах утса кайрĕç.

...Çутçанталăка кĕр пуçламăшĕн сăнĕ çапрĕ. Кунсем кĕскелчĕç, çĕрсем сулхăнрах пула пуçларĕç. Йывăç çулçисем те тĕллĕн-тĕллĕн сарăхкаланă.

Пĕрре, ирхине, ĕçе кайма вăхăт çитеспе, Исаков радиопа çĕнĕ хыпар илтрĕ:

— «Колхозсене малалла аталантарса пырасси çинчен...» — пĕлтерчĕ диктор.

— Çĕнĕ постановлени,— шухăшларĕ Исаков, радио çывăхне пырса ларса.— Кăшт итлесенех ура çине сиксе тăчĕ.

— Акă, яла тухса кайма вăхăт çитрĕ!—терĕ вăл урай çума хатĕрленекен килхуçи карчăкне.

— Ай, тупата, ăçта каясшăн тата?—тĕлĕнсе ыйтрĕ лешĕ.

— Кайрăмăр, кайрăмăр... Ав, итле! Халь ĕнтĕ Зоя та хирĕç пулас çук. Пĕрле, пĕр МТС-а каятпăр.

Министерствăра ĕçлекен çынсем те тĕрлĕ май шухăшлама тытăнчĕç. Пурте çĕнĕ постановлени çинчен, хăйсен шухăшĕсемпе ĕмĕчĕсем пирки калаçрĕç.

Исаков Зоя мĕн шухăшлать-ши, тесе пĕлесшĕн пулчĕ. Анчах, темиçе кун та иртрĕ, Зоя çĕнĕ постановлени çинчен нимĕн илтмен пекех, пĕр сăмахпа та шарламарĕ. Пĕррехинче, ĕçрен тухнă чух Исаков Зойăна çапла каларĕ:

— Зоечка, эпĕ сана ăсатам-ха паян.

— Тархасшăн, Степа. Атя пирĕн пата, анне паян кукăль пĕçеретĕп терĕ.

— Тавтапуç!—килĕшсе пуçне сулчĕ Исаков.

Аслă урам тăрăх вĕсем васкамасăр утса анчĕç. Зоя пурăнакан урам вĕçĕнчи кĕпер çине кĕрсен Исаков Зоя аллине хыттăн чăмăртаса илчĕ те утнă çĕртен чарăнчĕ.

— Зоечка, манăн санран ыйтмалли пурччĕ... те юрать? Çиленместĕн-и?—терĕ вăл.

— Мĕн эсĕ пĕчĕк ача пек калаçатăн? Юрамасăр!—терĕ Зоя, кăштах тĕлĕннĕ пек пулса.

— Акă мĕн пирки каласшăн эпĕ. Халĕ нумай çынсем ялсене каяççĕ. Эсĕ халь те пĕркунхи пекех шутлатăн-и? Тен, эпир те... ялхуçалăх специалисчĕсем вĕт-ха.

— Ай, Степа, авă мĕн çинчен калатăн иккен эс.— Çук, çук, урăх ан асăн та, илтетĕн-и? Ан асăн.— Зоя сылтăм аллипе сулса илчĕ.— Ку специальноçа эпĕ хам кăмăлпа суйласа илмен, хам çуралса ӳснĕ килтен тухса каяс килменнипе çавăнта пуçа пырса чикрĕм.

— Апла иккен. Зоя, эпĕ сан шухăшна пĕлмен. Çакăн çинчен каламанччĕ-ха эсĕ мана.

— Халь каларăм-çке, пурпĕрех мар-им?

— Пурпĕрех çав, пурпĕрех... Айăп ан ту мана хăвна чарса тăнăшăн. Эпĕ каям... Çулăмăрсем уйрăлчĕç иккен пирĕн, Зоя. Ну... Çавă лайăх та, тепĕр тесен. Урăх кунта пĕр кунлăха та тытăнса тăрас çук.

— Хăвăн ирĕкӳ, Степа. Анчах, эсĕ мана юратнă пулсан хуларан пăрахса каймăттăнччĕ.

— А, эсĕ те, мана юратнă пулсан, пĕрле пырăттăн, ун пирки тинех мĕнле сăмах виттĕр ĕнтĕ, Зоя?

— Хĕр вăл каччă хыççăн çӳремест.

— Каччăн мĕн тумалла?

— Каччăн хĕр сăмахне итлемелле, хĕр кăмăлне хуçмалла мар пек, ман шутпа.

— Айăп ан ту мана, Зоя, эпĕ пысăк ĕмĕтпе пурăнакан çын, пурнăçра халăхран уйрăлас килмест манăн.

— Эсĕ, мĕн вара, эпĕ халăхран уйрăлса юлăп тетĕн-и?

— Çук, эпĕ ун пек каласшăн мар. Анчах паян сана эп пачах ăнланаймастăп.

— Эпĕ те сана ăнланаймастăп.

— Апла пирĕн хушшăмăрта нимĕнле урăх сăмах та пулма пултараймасть.

— Енчен эс ун пек шутлатăн пулсан, юрĕ. Ирĕклĕ çынна—ирĕк.

Зоя кĕпер урлă вĕттĕн-вĕттĕн утса каçса кайрĕ. Исаков ăна чĕнсе чарать тесе шухăшларĕ пулас вăл... Исаков хальхинче те вырăнтан хускалмарĕ, вăл пирус тивертсе ячĕ те килнелле утрĕ. Йывăр пулчĕ ăна çакăн пек уйăрлма, анчах мĕн тăвăн? Вăл шухăшламан-и тӳрĕ юлташ пулма? Пысăк чĕреллĕ çын пуласчĕ тесе ĕмĕтленмест-и вăл? Зоя вара?.. Çук! Исаковшăн вăл ĕмĕрлĕх юлташ пулаймĕ çав. Зоя пурпĕрех хăйĕн халиччен кăмăлне улăштармасть. Ун кăмăлĕ Исаков чĕрине нихçан та вырнаçас çук.

Тепĕр каçхине Исаков Атăл хĕррине тухрĕ те Зоя урăх каччăпа çӳренине курчĕ. Исаковăн чĕри çурăласла ыратса илчĕ. Вăл çапах та хăйне йăпатма пăхрĕ.

— Ну, мĕн тăвăн ĕнтĕ, мĕн тăвăн? Пăхман хĕвеле пурпĕрех пăхтараймăн,— тесе мăкăртатрĕ те килнелле пĕр пĕчченех утрĕ.

* * *

Урам варрипе икĕ тулли витре йăтнă яштака пӳ-силĕ хĕр утса хăпарать. Унăн пуçĕнчи шап-шурă тутри те, шурă кĕпин арки те утнă май варкăша-варкăша илет.

Хăй вăл хура пиншакпа, кăкăрĕ çинче комсомол значокĕ йăлтăртатать.

Хĕр хăйсем патнелле çывхарнă чух, хăй палламан çамрăк çынна тĕл пулчĕ. Çамрăк çын вăтам пӳлĕ, тĕксĕм кăвак пальто тăхăннă. Хăрах аллипе пысăках мар сарă чăматан тытнă.

— Шыв ĕçтермĕр-ши, чипер пике?—ыйтрĕ вăл, хĕрпе танлашсан.

— Ĕçессе ĕçĕр те шывĕ ытла сивĕ мар-ши,— терĕ хĕр, чарăнса тăрса.

— Эпĕ сивĕ шыв ĕçме хăнăхнă.

Çамрăк çын чăматанне çерем çине лартрĕ, хăрах витрине кăштах тайăлтарса шыв ĕçрĕ.

— Тавтапуç! Шывĕ те тутлă иккен сирĕн кунта,— терĕ вăл, тутине тутăрпа шăлса.

— Ăçтан эсир капла?—хăйса ыйтрĕ хĕр.

— Шупашкартан килетĕп...

Вĕсем çавăнтах пĕр-пĕрин куçĕнчен пăхса илчĕç. Унтан вĕсем иккĕшĕ те уйрălса кайма тăчĕç.

— МТС-а çитме кунтан миçе километр пулать?—ыйтрĕ каччă, тепĕр хут чарăнса тăрса.

— Кунтан пĕр тăватă километр пулать. Униче хапхинчен тухсан тӳрех сукмакпа каймалла. Район центрĕпе юнашар пĕчĕк вăрман пуçĕнче вăл, аякранах курăнса ларать... Командировкăна килтĕр пуль?

— Çук, ĕçлеме.

Хĕрпе каччăн куçĕсем каллех тĕл пулчĕç. Кăмăллăн пăхса илчĕç те пĕр-пĕрин çине, вара харпăр хăй çулĕпе утрĕç.

Хĕр, хăйсен умне çитсен те, Исаков çинелле пăхса илчĕ. Сарлака хулпуççиллĕ кервен каччă урисене яра-яра пусса утать. Акă, вăл та, униче хапхи патне çитсен, каялла çаврăнса пăхрĕ. Те ял çине, те хĕр çине пăхрĕ вара—çавна тӳррĕн пĕлме май пулмарĕ.

— Агнис!—илтĕнчĕ килхушшинчен.

Агнис хăйне амăшĕ чĕннине илтмерĕ. Вăл çаплах çав çамрăк çын çинчен шухăшларĕ.

Куҫӗсем унӑн епле тарӑн та хура, кӑмӑллӑн та уҫҫӑн пӑхаҫҫӗ. Каялла туранӑ хура ҫӳҫӗ ялкӑшать.

Пӗтӗмпех астуса юлчӗ Агнис: унӑн шап-шурӑ пӗр тикӗс шӑлӗсене те, хулӑнрах сассине те манас ҫук. Агнисӑн ҫав ҫынна хӑҫан та пулин татах тепре курас килнӗн туйӑнчӗ. Хӑй вӑл ытла ҫамрӑках та мар пуль. Тен, ҫемьелӗскер те-и? Анчах пурпӗрех мар-и тата? Агнис унӑн ҫывӑх ҫынни пулма ӗмӗтленмест-ҫке, ун пек шухӑшлас та ҫук вӑл, мӗншӗн тесен Агнис вӗреннӗ ҫын мар... Вӑл хӑй те Агнис ҫинчен шухӑшлас ҫук.

— Агнис!—илтрӗ вӑл амӑш сассине.— Мӗн ҫывӑрса ҫӳретӗн? Хӑҫантанпа шыв ӑсса килессе кӗтетӗп, хуранай та ҫунса пӗтет ӗнтӗ.

— Ҫаплах вӑхӑт иртрӗ-им?—терӗ Агнис.

Амӑшӗ урӑх чӗнмерӗ.

Агнис ҫӳлӗк ҫинчен кӗнеке илчӗ те вулама ларчӗ. Анчах мӗн вулани пуҫне кӗмест. Паян унӑн пӳртре те ларас килмест, чунӗ текех тулалла, урамалла туртать. Вӑл кӗнекине каллех хупрӗ, унтан хӑйӗн сӑнне тӗкӗр ҫинче пӑхрӗ, ҫӳҫне тӳрлеткелерӗ те урама тухрӗ.

Кӗрхи ҫанталӑк самаях сулхӑн. Хутран-ситрен пӗлӗт хушшипе хӗвел йӑл кулса илет.

Агнис пахча хӗррипе иртрӗ. Садри ҫамрӑк улмуҫҫисене курсан, унӑн куҫӗсем сасартӑк савӑнӑҫлӑн ҫуталса йӑлкӑшма тытӑнчӗҫ. Вӑл таҫта васканӑ пекех тӑвалла утса кайрӗ.

...Агнис ҫичӗ ҫул ҫеҫ вӗреннӗ. Ашшӗ вӑрҫӑра вилнӗ пирки малалла вӗренме май килмерӗ унӑн. Ватӑ аслашшӗпе амӑшӗ ӑна вӗрентесшӗнех ҫунман, килте ҫын кирлӗ, тенӗ вӗсем.

Пӗлтӗр Агнис ҫӑвӗпех плугарь-прицепщицӑра ӗҫлерӗ. Ку ӗҫ ӑна пӗр ӗмӗтленмен ҫӗртен тӗлне килчӗ.

Агнис ун чух ялти хӗрсемпе пӗрле ҫул юсанӑ ҫӗрте ӗҫлетчӗ: вӗсенчен инҫе те мар трактор суха тума хатӗрленнӗччӗ.

— Ну, хӗрсем, камӑн прицепщик пулас килет?—терӗ Кузьмин тракторист, вӗсем патнелле пырса.

Вӑл кун ялан прицепщикра ӗҫлекен Ваня чирлесе ӳкнӗмӗн.

— Эпӗ пулас тетӗп, эпӗ!..— шӳтлесех юлташӗсем хушшинчен чупса тухрӗ Агнис.

Ҫав кунран пуҫласа Агнис прицепщикра ӗҫлеме тытӑнчӗ. Ку ӗҫ ӑна килӗшрӗ. Ҫу каҫа вӑл тракторист ӗҫне те самаях пӗлекен пулчӗ.

Агнис часах Улькасен тӗлне ҫитрӗ. Улька, вӑл Агнисӑн чи ҫывӑх юлташӗ. Вӗсем шкулта пӗр парта хушшинче ларнӑ. Халӗ Улька почтальонра ӗҫлет.

Агнис кӗнӗ чух Улька пӑлтӑр урайне ҫуса пӗтеретчӗ.

— Улька, сана эп пӗр сӑмах калас тетӗп. Атя-ха хӑвӑртрах урама,—терӗ Агнис хыпаланса.

— Мӗн-ши тата? — тӗлӗнсе ыйтрӗ лешӗ, аллине ҫуса.

Вӗсем урама тухрӗҫ.

— Эпӗ трактористкӑна вӗренме каятӑп—акӑ мӗн.

— Ан калаҫ... Хӑҫан?

— Халех, тен, ыранах...

— Хӑҫан ун пек шухӑш тытрӑн вара?

— Паян.

— Апла иккен. Аван,— ассӑн сывласа илчӗ Улька.

— Трактор ӗҫне кӑшт пӗлетӗп вӗт-ха эпӗ. Ялхуҫалӑх специалисчӗсем халь пит нумай кирлӗ. Хуласенчен те специалистсем колхозсемпе МТС-сене йышлӑн килеҫҫӗ. Акӑ, паян та пӗри килчӗ...

Агнис пасӑр кӑна каччӑпа тӗл пулни ҫинчен ик-виҫ сӑмахӑн тенӗ пек каласа пачӗ.

— Ҫавӑн пек вӗреннӗ ҫынсене курсан, манӑн пӗтӗм чун хавхаланса каять. Неушлӗ пултараймӑп? Эх, трактористкӑна вӗренсе тухас мар-тӑк, ҫӗр ҫинче пурӑнас та мар!—терӗ вӑл юлашкинчен ҫирӗппӗн.

Улька вӑрӑммӑн сывласа илчӗ.

— Кала-ха, Агнис, сана трактористкӑна вӗренме кайма Кузьмин каланӑ ӗнтӗ.

— Ҫук, Улька, Кузьмин мар... Ав, мӗн пирки эсӗ кӑмӑллах мар иккен-ха!..— йӑвашшӑн кулса илчӗ Агнис.

Улька тахҫанах Кузьмина юратнине Агнис лайӑх пӗлет. Ҫавӑнпа вӑл хӑй Кузьминпа пӗрле ӗҫленӗ пулин те, ун пирки нихҫан та каччӑ ҫинчен шухӑшланӑ пек шухӑшламан. Вӑл яланах Улькапа Кузьминӑ хӑйсене ҫеҫ хӑварма тӑрӑшнӑ, хӑй ҫав вӑхӑтра аяккалла пӑрӑннӑ.

— Агнис, эсӗ мана усал тӑвас ҫуккине шанатӑп эпӗ. Чӑнах та, кай Агнис, вӗрен! Каярахпа эпӗ хам та ӑҫта та пулин вӗренме кӗме ӗмӗтленӗп-ха.

— Тавтапуҫ, Улька, ырӑ сӑмахушӑн.

— Колхозран рекомендаци ил, комсомол организацийӗнчен те ил. Кирлӗ пулма пултараҫҫӗ.

— Атя, правление кайса килер.

Хӗрсем правлени еннелле утрӗҫ.

* * *

— Кӗме юрать-и? — кӑшт алӑк уҫӑлсан илтӗнчӗ пӗр сасӑ.

— Кӗрӗр,— терӗ МТС директорӗ ура ҫине тӑрса.— А эсир, юлташ, кӑштах тӑхтӑр-ха,— терӗ вӑл кабинетра ларакан хӗр ҫине пӑхса.

Ҫамрӑк хӗр пуҫӗпе сулса килӗшрӗ те кантӑк умне куҫса ларчӗ.

Исаков кабинета кӗнӗ-кӗменех хӑй кунта чи малтанхи хут килнӗ чух курнӑ хӗре, Агниса, палласа илчӗ. Ҫав самантрах унӑн чӗри хӑвӑрттӑн тапа пуҫларӗ. Анчах хӑй ҫапах та юлташӗсемпе пӗрлех директора хирӗҫ пырса тӑчӗ. Ӑшӗнчи шухӑшне халлӗхе никама та пӗлтересшӗн марччӗ ӗнтӗ вӑл.

— Ну, хӑҫан тухса каяс тетӗр, юлташсем?—ыйтрӗ директор, вӗсем ҫине пӑхса.

—Хӑвӑр хӑҫан хушатӑр, Василий Петрович,— терӗ вӗсенчен пӗри.

— Тепӗр икӗ кунтан, юрать-и?

— Юрать. Эпӗ паян тесен, паян тухса кайма хатӗр,— терӗ тепри.

— Эпӗ те...

— Эпӗ те...

— Юрать, юлташсем. Хӑвӑр ирӗкӗр. Эпӗ сире колхоза чӗрӗ вӑйпа пырса кӗмелле пултӑр тенипе ҫеҫ пӗрер кун канма сӗнесшӗнччӗ.

Исаков ҫав хушӑра тепӗр хут та хӗр еннелле ҫаврӑнса пӑхрӗ. Хальхинче ӑна хирӗҫ хӑйне те хӑмӑр ӑшӑ куҫсем тӗллесе пӑхрӗҫ, пӑхрӗҫ те самантрах вӗсем урӑх ҫӗрелле пӑрӑнчӗҫ. Анчах Исаков хӗрӗн пичӗ хӗмла ҫырли пек хӗрелнине асӑрхаса юлчӗ-юлчех. Унӑн хӑйӗн пичӗ те ҫунма тытӑнчӗ. Ҫынсем асӑрхасран пулас, вӑл тутӑр кӑларса питне шӑлса илчӗ.

— Исаков!—терӗ директор, ӑна та хут тыттарса.

— Тавтапуҫ!—килӗшсе тав турӗ Исаков, хутне илсе кӗсйине чикнӗ май.

...Директорпа сывпуллашса кабинетран тухнӑ чух Исаков татах Агнис ҫине пӑхса илчӗ. Агнис хальхинче ун ҫине пӑхмарӗ, именнӗ пек пулса вӑл, ҫӗррелле пӑхса, ларса юлчӗ.

Директор кабинетӗнчен тухсан, Исаков Агниспа ҫывӑхрах паллашасшӑнччӗ, анчах юлташӗсенчен тӑрса юлма та лайӑх мар. Ҫавӑнпа вӑл, пӗр сӑмах чӗнмесӗр, шӑппӑн утрӗ. Куҫ умӗнчен пурпӗрех хӗр сӑнарӗ хӑпмарӗ.

Пичӗ унӑн ҫавракарах, таса та илемлӗ. Янах вӗҫӗ пӗр хӗрринчен путӑкланса тӑрать. Сӑмси пуканенни пек пӗчӗккӗ те тӳрем, тирпейлӗ. Хура ҫӳҫне вӑл шӑпах варринчен уҫса якатнӑ, вӑрӑм ҫиптунисене кӗрен лентӑпа ҫыхнӑ.

Исаков Агниса МТС-ра, директор кабинетӗнче тӗл пулнинчен тӗлӗнчӗ, вӑл ҫавӑншӑн савӑнчӗ те.

— Ахальтен мар ку,— шухӑшларӗ вӑл.

...Тепӗр кун МТС директорӗ Исакова колхоза ҫитиччен кайма машина пачӗ. Километр хушши инҫе мар, Исаков ҫуранах утасшӑнччӗ, анчах директор килӗшмерӗ.

«Ҫӗнтерӳ» колхоза ҫитсен Исаков тата ытларах савӑнчӗ. Чи малтан ҫак ялта тӗл пулнӑччӗ вӑл шыв ӑсма тухнӑ хӗре. Кунта вӑл ӑна каллех тӗл пулать ӗнтӗ...

Исаков колхоз правленине пырса кӗнӗ чух, унта тин ҫеҫ пуху иртнӗччӗ пулас. Ҫынсем килӗсене кайма ӗлкӗрейменччӗ-ха. Исаков вӗсене сывлӑх сунчӗ, председатель пурри-ҫуккине ыйтса пӗлчӗ. Председатель хӑй кабинетӗнчех иккен.

Ҫынсем пӗр-пӗринпе сӑмахлама тытӑнчӗҫ, районран мӗн ӗҫпе ҫын килнине пӗлесшӗн пулчӗҫ, анчах никам та тӗрӗссипе пӗлекен пулмарӗ.

Ак вӗсем кабинетран хӑйсемех тухрӗҫ.

— Юлташсем, паллашăр, пирĕн пата агроном килчĕ,— пĕлтерчĕ председатель.

Исаков пӳлĕмри ҫынсене пуҫ тайса илчĕ. Кунта Данилов парторг, ферма пуҫлăхĕ Кириллова, Кураков бригадир, правлени членĕсем, колхозниксем.

Чи малтанах Макар мучи сăмах хускатса ячĕ.

— Чĕртсе ярар пуль, — терĕ вăл кĕсйинчен табак енчĕкне кăларса.

— Чĕртер-ха,—терĕҫ ăна хирĕҫ хăшĕ-пĕрисем.

Ҫавăнтах тахăшĕ Исакова та туртма сĕнчĕ.

— Вăл пирĕн пек «сарайхыҫ-трест» табакне туртмасть пуль-ха,— терĕ Макар мучи.

— Тутанса пăхам-ха, тен, ытларах килĕшĕ,— терĕ Исаков, старик аллинчи енчĕке илсе.

— Аҫтисем пулатăн эс, ывăлăм?—ыйтрĕ Макар мучи, чĕлĕмне ĕмсе.

— Эпĕ Тутар республикинче ҫуралса ӳснĕ чăваш.

— Инҫетрен эппин? Ну, мĕнле, кунта килĕшет-и сана?

— Питĕ килĕшет. Сирĕн кунта, вăрманĕ те, шывĕ те пур, пит илемлĕ.

Макар мучи, унпа килĕшсе, пуҫĕпе сулса илчĕ.

— Тата илемлĕрех тăвас тетпĕр-ха, йĕри-тавра садсем ĕрчетмелле тесе йышăнтăмăр кăҫал. Ак ĕнтĕ, эсĕ те пире пулăшма ҫитрĕн.

— Ҫавăнпа килтĕм ҫав,— терĕ Исаков, старик ҫумнерех ҫывхарса.

Вăтă старик пуринпе те интересленни ун кăмăлне кайрĕ.

— Анчах калăр-ха, эсĕ пирĕн пата пурăнмаллипех килтĕн-и, е вăхăтлăха ҫеҫ-и?—ыйтрĕ старик татах.

— Пурăнмаллипех пулчĕ пуль ĕнтĕ.

— Вăт аван! Ахалĕн, ытти чух, командировочнăйсем килеҫҫĕ те, ну, чи малтанах пуху пухаҫҫĕ. Унта сăмах тухса калаҫҫĕ. Калаҫҫĕ, калаҫҫĕ, тепĕр чух ăнланма та ҫук, пуҫа нимĕн те кĕрсе юлмасть. Кайран, хучĕсене пуҫтарса хулхушшине чикеҫҫĕ те, килне вĕҫтереҫҫĕ. Ах, хăямат, ĕҫлесчĕ санăн та пирĕнпе пĕрле уя тухса. Мĕнле вăйлă тырпул тумаллине хăвăн кăтартса парасчĕ санăн, тӳрпилĕк, тесе юлатпăр вара,— терĕ старик хĕрсе кайса.

Пĕрле ларакансем ахăлтатсах кулса ячĕҫ.

— Ну, ҫак Макар мучи ытла тӳрĕ ҫаптарать-ҫке,— терĕ пĕри.

— Ҫук, малашне ун пек пулмĕ. Партипе правительство йышăннă постановленисене пĕлетĕр ĕнтĕ. Халĕ кашнин ялхуҫалăхне ҫĕклеме тăрăшмалла,— терĕ Исаков.

— Тăрăшасчĕ-ха, тăрăшасчĕ,—терĕҫ итлесе ларакансем. Исакова ҫав кунах хваттер тупса пачĕҫ. Хваттерĕ ăна тăван кил пекех килĕшрĕ. Унта карчăкпа старикĕ ҫеҫ пурăнаҫҫĕ. Пĕр ывăлĕ Мускаврах вĕренет, тепри салтакра иккен. Хĕрĕсем качча тухса пĕтнĕ. Пӳрчĕ хăйсен пысăк та ҫĕнĕ.

— Вăт сире мучи-кинемей тепĕр ывăл илсе килтĕм, пĕр кун калаҫрăмăр-ҫке-ха... — терĕ председатель, вĕсен килне кĕрсенех.

— Аха, юрать, юрать. Хамăрăннисем килте ҫук пулин те, ҫак пӳрт пушă янăраса ан лартăр,— терĕ старик.

— Пӳрчĕ пурин валли те ҫитетчĕ те... Тунă чухнех каларăм, ытлашши пысăк пулать, терĕм. Пӳртне туса лартрăмăр та, хăйсем карр саланса кайрĕҫ,— терĕ карчăкĕ аллине шăлса типĕтнĕ май.

— Карчăк, эсĕ ытлашши ан палка-ха. Акă ывăл вырăнне, ывăл килчĕ, ҫапла мар-им?

— Вăл ҫаплах-ха,— йăвашшăн кулса Исаков патнелле утса пычĕ карчăк.

— Иртех, ывăлăм, вырнаҫ кăмăлна кайнă пек, килти пек пул...

...Исаков малтанах нумай вăхăт кантăк витĕр урамалла пăхса тăчĕ. Акă куҫ умĕнче пĕтĕм ял лăпкăн сывласа ларать. Ҫаралса юлнă ҫӳлĕ йăмра тăрри хуллен хумханать. Униче карти хыҫĕнче вĕҫĕ-хĕррисĕр уй-хир тăсăлать. Сарăхнă кĕрхи хĕвел ун ҫине вырăнĕ-вырăнĕпе ҫутатса пăхса илет. Ҫавăнта ĕнтĕ вĕҫĕ-хĕррисĕр ĕҫ, вĕренӳ, пуянлăх сарăлса выртнăн туйăнать Исакова.

* * *

Хĕллехи сивĕ каҫ. Пӳрт пĕренисем шартлата-шартлата ҫурăлаҫҫĕ. Пӳртре ăшă та канлĕ. Исаков лампа умĕнче ыранхи куна хатĕрленет. Ыран каллех агрокружок занятине ирттермелле.

— Макар мучи каллех ыйтусем парса аптратĕ-ха,— шухăшларĕ вăл хулăн кĕнеке листисене уҫнă май.— Вырăсмине парти вĕренĕвĕ, унпа та кĕнекене тепĕр хут пăхса тухас пулать.

...Вăхăт иртни сисĕнмест. Автансем пасăрах авăтрĕҫ. Вăл Шолоховăн «Уҫнă ҫерем» романне тытрĕ те, пуҫ вĕҫне лампа лартса, вырăн ҫине выртрĕ. Исаков ку романа тахҫанах вуланăччĕ, унтанпа манса та кайнă ĕнтĕ. Ҫук, темшĕн, кĕнеке те вуланмарĕ, пуҫа шухăш ҫине шухăш кĕрет...

— Аҫта ҫав Агнис ятлă хĕр? Ҫак ялтанах пулнă пулсан, халиччен тĕл пулмаллăччĕ ĕнтĕ... Ниҫта та курăнмасть... Ахальтен мар вăл МТС директорĕн кабинетĕнче ларатчĕ. Урăх колхоза ĕҫлеме кайман-ши?! Тен, качча та тухнă пуль?.. Кăлăхах ун чухне васкарăм иккен...—тарăнăн сывласа илчĕ вăл.

...Суйлав кампани вăхăтĕнче Исаков агитаторта ĕҫлерĕ. Пĕррехинче вăл, суйлавҫăсемпе паллашма тесе, кашни килех кĕрсе тухрĕ.

Пĕр ҫурт умне ҫитсен, калинкке умĕнче пайтахчен чарăнса тăчĕ.

— Ҫын пур-ҫке кунта?.. Кĕрсем, ма урамра шăнса тăратăн?—терĕ ăна ҫарамасăх тухнă кăвак ҫӳҫлĕ пĕркеленчĕк питлĕ старик.

— Сывă-и, Макар мучи?.. Ак ăҫта пурăнатăр иккен эсир,— терĕ Исаков, старике палласа илсе.

Вĕсен пӳртĕнче таса та ăшă. Пӳрт варринчи тимĕр кăмакине хутса янă. Пĕчĕк пӳлĕмре шурă пĕркенчĕкпе витнĕ таса та ҫӳлĕ вырăн. Вырăнпа юнашар тăракан ҫӳлĕксем синче йĕркерен тăратнă кĕнекесем, тетрадьсем, хутсем... Вырăнтан ҫӳлте, стена ҫумĕнче сăн ӳкерчĕкĕсем ҫакăнса тăраҫҫĕ. Вĕсем ҫине Исаков алăкран кĕрсенех пăхса илчĕ.

— Ирт, малалла, иртех,— терĕ аллă ҫулсенчен иртнĕ кăмăллă хĕрарăм, тĕпел кукринче ĕҫлекенскер.

— Кунтарах кил, пальтуна хывса ҫак, ăшăн,— тет Макар мучи, тимĕр кăмака ҫывăхне типĕтме хунă кăҫаттисене илсе.

Ытти килсенче Исаков пальто хывсах лармансчĕ-ха. Кунта унăн хăйĕн те салтăнсах ларас килчĕ.

— Эсир иксĕрех пурăнатăр-и вара?

— Иксĕмĕрех-ха халь. Ку ман кин пулать. Ывăлăм вăрҫăра пуҫне хучĕ. Ывăлăн хĕрĕ халь Етĕрнере тракториста вĕренет. Питĕ каясшăн пулчĕ те, чармарăмăр, вĕрентĕрех ĕнтĕ. Ҫуркунне килет пулĕ те-ха, унсăр ҫуртра та кичем пек, ялан темĕн ҫитмен пек.

— Ара, ҫамрăк ҫынсем пире, ват ҫынсене, кӳсран пăхса лараймĕҫ ĕнтĕ. Вĕсен вĕренес те пулать, ĕҫлес те пулать,— терĕ Макар мучин кинĕ, тумтир тăхăнса.— Эпĕ выльăхсене апат парса кĕрем-ха.

— Ҫапла пуль ҫав, ҫапла пуль,— тăсса каларĕ мучи кăмакари вутта пăтратнă май.— Эсĕ, кин, сăра ăсса кĕр-ха. Ҫтаппан Мирончă пирĕн пата пирвайхи хут килчĕ вĕт-ха.

— Тавтапуҫ! Ан чăрманăр! Мана Степан Михайлович теҫҫĕ,— терĕ Исаков.

Вăл, малалла иртсе, ҫӳлĕк ҫинчи кĕнекесене пăхма тытăнчĕ. Кунта Ленинпа Сталинăн произведенийĕсем пур, «Агротехника», «Трактор—ХТЗ», иккĕмĕш ҫӳлĕк ҫинче тата урăх кĕнекесем. Аялти ҫӳлĕкне вара пĕтĕмпех художествăллă литературăпа тултарнă.

— Ку кĕнекесем камăн, кам вулать сирĕн вĕсене?— ыйтрĕ Исаков.

— Э-э! Агнисăн вăл,—терĕ старик, Исаков еннелле пăхса илсе.

— Ҫав тракториста вĕренекеннийĕн-и?

— Ара ҫав. Ҫавăн. Темĕнле хĕрача пулчĕ-ҫке!.. Ялти ытти хĕрсем пек, хăй валли лентăсем, шăрҫасем илес вырăнне кĕнеке илет те килет, илет те килет... Ирхине ҫывăрса тăрсан та кĕнеке вулать, каҫхине те. Амăшĕ те ятлаҫать. Лара-а-а-ать вара вуласа, тепĕр чух ҫурҫĕр те иртсе каять.

— Маттур хĕрача вăл сирĕн, маттур.

— Мĕн маттурĕ!.. Пурăнать ҫавăн пек хăйĕн ăсĕпе. Хуть те ăна мĕн кала, вăл хăйĕннех... Акă, халĕ те, вĕренме тухрĕ те кайрĕ. «Лапра ĕҫ» тетпĕр эпир, а, вăл ăна хăлхана чикет тетĕн-и?

— Хăлхана чикмест эппин?—кулса илчĕ Исаков.

— Чикме-е-ест!—аллипе сулчӗ мучи.

Унтан Исаков стена ҫуммӑнчи сӑнӳкерчӗкӗсене пӑхма тытӑнчӗ.

Агнис сӑнӳкерчӗкне вӑл куҫ чарса пӑхрӗ, палларӗ вӑл ӑна.

«Ҫавах»,— терӗ вӑл хӑй ӑшӗнче.— Ҫакӑ-и сирӗн хӗр?— ыйтрӗ вӑл унтан, Макар мучи еннелле ҫаврӑнса.

— Аха, ҫавӑ,— терӗ старик.

Исаков тепӗр хут та сӑнӳкерчӗк ҫине пӑхрӗ. Агнис ун ҫине кӑмӑллӑн пӑхса йӑл кулать. Чӑн та, сӑнӳкерчӗкӗ мар, чипер пике хӑй кулнӑ пек туйӑнать Исакова.

— Чиперккеҫӗм!—терӗ вӑл каллех хӑй ӑшӗнче.— Тинех тупрӑм ӗнтӗ сана,— тупрӑм, тек ҫухатмӑп,— терӗ вӑл пӑшӑлтатса, сӑнӳкерчӗкӗ ҫинчен куҫ илмесӗр.— Ав эс мӗнлескер иккен!..

— Эй, мӗн пӑхмалли пур ара унта, кил-ха сӗтел хушшине, пӗрер курка сӑра ӗҫер. Паян сурхури вӗт,— терӗ старик.

— Чӑнах-и? Эпӗ ӑна пӗлмен те,—терӗ Исаков.— Агитатор эпӗ, сирӗнпе калаҫса ларасшӑнччӗ-ха, ну, юрӗ эппин, ыран та кун пур.

— Пурпӗрех, паян та, ыран та, эпир сирӗнпе калаҫса ларма яланах хавас. Калаҫса ларма халь те лайӑх, хӑмлаллӑ сӑра чӗлхене уҫать. Час-часах килсе ҫӳрӗр,— терӗ старик.

Кинӗ те килсе кӗчӗ. Вӗсем виҫҫӗшӗ, ҫывӑх тӑвансем пек, нумайччен калаҫса ларчӗҫ.

— Эпӗ сирӗн пата ыран каллех кӗрӗп-ха,— терӗ Исаков килне тухса каяс умӗн.

Исаков вӗсем патӗнчен ҫав тери хавасланса тухрӗ. Хӑйне ӑна тата ытларах вӑй хутшӑннӑн туйӑнчӗ. Вӑл лаборатори еннелле ҫӑмӑллӑн утрӗ.

...Ҫав кунтан пуҫласа Исаков трактористкӑна вӗренекен хӗр ҫинчен кун сиктермесӗр шухӑшла пуҫларӗ.

* * *

Хӗвелтухӑҫ ылттӑн пек ҫап-ҫутӑ. Часах хӗвелӗн хӑрах хӗрри курӑна пуҫларӗ те, йывӑҫ тӑррисемпе ҫуртсем ҫине ӑшӑ ҫутӑ ӳкрӗ. Ҫурхи ир пуҫланчӗ. Ку вӑхӑтра вӑрмансемпе садсенче шӑпчӑксем юрлаҫҫӗ. Таҫта, инҫетри уйра, трактор кӗрлени илтӗнет.

Исаков, юлашки виҫӗ кун хушши килте пулманнипе пулас, паян автансемпе танах ура ҫине тӑчӗ. Вӗсем садоводпа пӗрле, сад ыйтӑвӗпе хулара та, ҫула май «Ялав» колхозӗнче те пулчӗҫ.

— Тракторист килчӗ. Ыран ирех Туҫи уйне сухалама тытӑнаҫҫӗ,—терӗ председатель вӗсем таврӑннӑ кунах каҫхине.

— Аван. Эпӗ унта ирех тухса пӑхатӑп,— терӗ Исаков.

Акӑ вӑл уйсем урлӑ васкаса утать. Унӑн пуҫӗнче темӗнле юрӑ кӗвви янӑрать, ӑна вӑл халь тесен халь юрласа ярас пек пырать. Анчах сасӑпах юрламасть вӑл, шӑхӑркаласа ҫеҫ илет.

Сухаласа тӑкнӑ кӑпӑшка хура уйра вӑл тракторист ӗҫне тӗрӗслет, мӗн тарӑнӑш сухаланине виҫсе пӑхать. Анчах, тиркемелли тупаймасть. Вара татах вӑл малалла утать, шӑйрӑксем шырать. Ҫук, йӗри-тавра пӗр тикӗс сухаланӑ хура пустав витнӗ пек курӑнать аслӑ хир.

— Аван, маттур тракторист,— шухӑшлать Исаков.

Пӗртен-пӗр япала ун кӑмӑлне каймарӗ: уйӑн пӗр хӗррипе улӑм турттармалли ҫул улӑхранах хӑпарать. Ҫав ҫула сухаламасӑр хӑварнӑ.

— Кун пирки асӑрхаттарас пулать, халех сухаласа тухтӑр,— шухӑшлать вӑл трактор патнелле тӳррӗн утса.

Исаков, трактор ҫитессе кӗтсе, уйри ҫул ҫинче чарӑнса тӑчӗ.

Тракторист вӑл тӑнине курса пулас, ун тӗлне ҫитсен, тӳрех чарӑнчӗ. Вӑл куҫлӑхне хывврӗ те, трактор ҫинчен сиксе анчӗ. Ҫийӗнчи комбинезонне турткаласа юсарӗ, унтан хӑйне хирӗҫ утса пыракан ҫын патнелле ҫаврӑнчӗ.

— Агнис, эсир-ҫке ку?—терӗ Исаков, кӗтмен ҫӗртен курнипе тӗлӗнсе.

Самантрах Агнисӑн пичӗсем хӗрелсе кӗренленчӗҫ.

— Ай, ӑҫтан ман ята пӗлетӗр эсир?—тесе ыйтрӗ вӑл. Исаковӑн чӗри хӑвӑрттӑн тапма тытӑнчӗ.

— Тахҫантанпах сирӗн ятӑра пӗлетӗп эпӗ, Агнис.

— Эпӗ хам та сирӗн ятӑра пӗлетӗп те-ха, Степан Михайлович,— терӗ вара Агнис, вӑтаннипе тата ытларах хӗрелсе.

Ҫав вӑхӑтра вӗсем патнелле колхоз почтальонӗ Настук утса пычӗ.

— Эсир те кунтах-ҫке, Степан Михайлович, ку маншӑн лайӑхрах-ха!—терӗ вӑл, васкаса сӑмахланӑ май, сӑран сумкинчен хаҫатсемпе ҫырусем кӑларса.

Исаковпа Агниса вӑл пӗрер ҫыру пачӗ.

— Вулӑр, савӑнӑр! Ташлаттармаллаччӗ те сире пӗрре...— кулкаласа илчӗ хӑй.

— Тавтапуҫ, Настук!—терӗ Агнис, ҫыруне тӳрех вулама тытӑнса.

Исаков конвертне пӑхрӗ те, вуламасӑрах кӗсйине чикрӗ. Унтан хӑйне панӑ ҫӗнӗ хаҫатсене уҫкаласа пӑхрӗ.

— Сывӑ пулӑр, Агнис, эпӗ каятӑп-ха,— терӗ вӑл сасартӑк ял еннелле утса.

— Чипер кайӑр...

Исаков, улӑха ансан, ҫерем ҫине ларса, ҫыру вулама тытӑнчӗ.

«Юратнӑ Степа, тусӑм! Эпӗ сана пӗтӗмпех каҫаратӑп. Эсӗ унта кайма килӗшни, чӑн та, лайӑх пулчӗ. Акӑ, халӗ ҫынсем халиччен сухаламан ҫӗрсем ҫинче тырӑ акса тума каяҫҫӗ. Кунти колхоза кайни инҫете кайни мар вӗт-ха? Кунтан инҫех мар, хулана час-час ҫӳреме пулать. Тепӗр тесен, ялта—пӗр майлӑ, уҫӑ сывлӑш, канӑҫ... А, хулара—тепӗр майлӑ, культура, илемлӗх, вӗреннӗ ҫынсем, театрсем... Эсӗ мана юратма пӑрахман пулсан, эпӗ сан пата паян тесен паян ӗмӗрлӗхе пыма хатӗр.

Хытӑ чуптӑватӑп.

Сана ӗмӗр савса юратакан Зоя».

Исаков ҫакна вуласа тухсанах йӗрӗнсе сурчӗ те, ҫырӑва вӗттӗн-вӗттӗн вакласа, ҫурса тӑкрӗ. Шурӑ хут татӑкӗсем ҫерем ҫийӗн ҫилпе вӗлтӗртетсе вӗҫсе ҫухалчӗҫ.

— Мӗншӗн вӗрентсе кӑлараҫҫӗ-ши ҫавӑн пек ҫынсене! Юрать-ха, качча илмерӗм,— тесе савӑнса шухӑшларӗ вӑл хӑй ӑшӗнче.

Унӑн хӑлхине каллех трактор кӗрлени пырса кӗчӗ.

— Акӑ вӑл!.. Ай, эпӗ ҫул пирки калама та маннӑҫке...— каялла таврӑнмалли сӑлтав тупӑннӑшӑн хӗпӗртесех ӳкрӗ Исаков.

Трактора чарӑнса тӑма вӑл катаранах аллипе сулчӗ.

— Агнис, чимӗр-ха, эпӗ ҫав почта пула ӗҫ пирки калама та маннӑ. Ҫав ҫула сухаласа хӑвармаллах,— терӗ вӑл.

— Юрӗ, эпӗ хам та ҫаплах шухӑшланӑччӗ-ха... Ҫав териех савӑнӑҫлӑ ҫыру илтӗр-им, Степан Михайлович?— именсе ыйтрӗ Агнис.

— Ҫук, Агнис, тарӑхтаракан ҫыру ҫеҫ, нимӗне пӗлтерменскер... Эсир те илтӗр-и?

— Э-э! Манӑн ҫав тери лайӑх ҫыру. Улькапа Кузьмин мана Алтайран ҫырса янӑ. Хӑйсем патне пыма чӗнеҫҫӗ.

— Эсир те унта каясшӑн-и?

— Кӑҫал пулмарӗ ӗнтӗ, килес ҫул, тен, май килсен.

— Эпӗ те сирӗнпе пӗрле пырӑп вара...— Агнис каласа пӗтеричченех пӳлсе хучӗ Исаков.

— Тен, кунта ӗҫлесен те ҫавах пуль? Кунта та тырпул тумалла вӗт?—терӗ Агнис, Исаков ҫине ӑшшӑн пӑхса.

— Апла та тӗрӗс,— терӗ Исаков.

...Трактор каллех вырӑнтан хускалчӗ. Унӑн кӗрлекен сасси каллех уй-хир тӑрӑх инҫете илтӗнет.



# АЧА-ПĂЧА КАЛАВĔСЕМ

Степан АСЛАН

П. Сизов ӳкерчĕкĕсем.

## Пулла кайсан

Пĕррехинче Петĕр пичче мана:
—Атя, Ванюш, пулă тытма каятпăр, Çеруша та чĕнетпĕр, терĕ.

Петĕр пирĕнтен икĕ çул аслăрах, вунвиççе кайнă, çавăнпа эпир ăна «пичче» тесе чĕнетпĕр.

Çапла эпир виççĕн: Петĕр пичче, эпĕ тата Çеруш,—вăлтасемпе чĕрессем илтĕмĕр те Çавал хĕррине пулă тытма кайрăмăр.

Ялтан тухсанах Калкамашши çырмине антăмăр, Çавал хĕррине çак çырма тăрăх тухас терĕмĕр.

Çуллахи хĕвеллĕ, шăрăх кунсенче çырмапа çӳреме питĕ аван. Йĕри-тавра темĕн тĕрлĕ чечексем ешереççĕ: кăвакки те, хĕрли те, сарри те, кĕренни те, чăкăт пек чăлт шурри те, темĕн тĕрли те пур: юриех пире илĕртме шăтса ларнă тейĕн. Вăрăм ӳснĕ курăк ăшĕнче унта та кунта куçа курăнми пĕчĕк шăрчăксем чăрăлтатаççĕ. Чечексем çинче пыл хурчĕсем нăрлатса вĕçсе çӳреççĕ, пыл пухаççĕ, вĕл-вĕл лĕпĕшсем вĕлтĕртетеççĕ. Сывлăш усă кунта, сулхăн, чуна канлĕ.

Çырма хĕрриччи вĕтĕ-вĕтĕ çеçкеллĕ курăксем хушшинче хĕпхĕрлĕ çырла пиçет. Çырла татса çикелесе, эпир кĕпер патне çитсе тухрăмăр. «Ĕшне кĕперĕ» теççĕ ăна пирĕн аттесем. Эпир çитнĕ чухне çак кĕпер патнех пĕр тулли лав пырса çитрĕ.

Сасартăк темĕн хыттăн шартлатрĕ, унтан, йывăр чул ӳкнĕ пек, пăлтăр-пăлтăр туни илтĕнчĕ. Кĕпер урлă каçакан лав чарăнчĕ. Лашипе юнашар пыракан лавçă унăн-кунăн пăхкаласа илчĕ, вара лавĕ патне чупса пычĕ.

— Эй-та, но-о-о! Атя, атя, вăй парса!—кăшкăрчĕ вăл пушипе хăлаçланса.

Хура ăйăр тем чул вăй парса, пăркаланса, талпăнса туртса пăхрĕ, анчах йывăр лава икепле те вырăнтан тапратаймарĕ. Вара лавçă хăй пулăшасшăн пулчĕ—лавне хыçалтан тĕртме хăтланчĕ. Лавĕ çав-çавах вырăнтан тапранмасть.

— Атьăр, эпир те кайса пулăшар,—терĕ пирĕн Петĕр пичче, çакна курсан.

— Атьăр!—хавасланса килĕшрĕмĕр эпир Çерушпа.

Ĕнер кăна, ирпеле, пирĕн патра вăйлă çумăр пулчĕ. Нумайччен шарлаттарса çуса тăчĕ вăл. Çав çумăр кĕпер патĕнчи çула татса кайнă мĕн те, унта чылаях пысăк шырлан пулса юлнă. Çав шырлана кайри урапа хирĕнсе кĕрсе ларнă та, лаша ăна тем чул тапаçлансан та, туртса кăлараймасть.

— Эпир те пулăшар мар-и?—ыйтрĕ Петĕр пичче.

— Темĕн çав, пулăшайăр-ши?—тавăрчĕ лавçă, татах мекеçленсе.

Вара эпир ушкăнпа темчченех тĕрмешрĕмĕр çакăнта. Урапана аран-аран шырлантан кăлартăмăр. Лавçă питĕ тарăхнă:

— Хăшкăлтарса çитерчĕ ку, йăлтах вăйран сулăнтăм, ма юсамаççĕ-ши?!—тесе, такама ятлать.

Çапах вăл пире тав турĕ: «Пулăшнăшăн тавах сире, ачасем, пĕчĕкскерсем пулин те, хăвăр маттур пулас-ха. Пысăк пулăр»,—терĕ.

— Яланах хатĕр!—пурте харăс ответлерĕмĕр эпир.

Часах вăл тăвайккирен хăпарса кайса курăнми пулчĕ. Пирĕн Петĕр пичче темĕн шухăша кайнă, шыв çурнă шырлан çине пăхнă та вырăнтан та тапранмасть. Эпир, Çерушпа иксĕмĕр, ним тума пĕлмерĕмĕр.

— Петĕр пичче, пулă тытма каймастпăр-и-мĕн?—ыйтрăм эпĕ тĕлĕнсе.

— Каккуй пулă тытма халь,—ман çине кăмăлсăррăн пăхрĕ вăл.—Ав мĕнле ятласа хăварчĕ пире çав çын. Илтрĕр пулĕ вĕт?

— Вăл пире мар-иç, шырлана ятларĕ. Эпир ăна пулăшрăмăр-çке. Хăй те пире уншăн тав турĕ.

— Мĕнле пире мар?—терĕ каллех Петĕр пичче.—Пире ятларĕ çав вăл. Çак çул кам çĕрĕ çинче? Пирĕн колхоз çĕрĕ çинче мар-и? Кама намăс уншăн?..

Петĕр пичче тепĕр кана шухăшласа тăчĕ те сасартăк:

— Атьăр, ачасем, çак çула юсатпăр! Юрĕ-и?—терĕ.

— Мĕнле?—тĕлĕнсе кайрăмăр эпир.

— Мĕн мĕнли пултăр,—хавхалансах ăнлантарма тытăнчĕ Петĕр пичче.—Киле кайса кĕреçесем илсе килетпĕр. Ав, Ахратран чул йăтатпăр. Купалатпăр та пулать те... Çумăр хыççăн кунта хамăр колхозран никам та килсе курман пулас. Кун çинчен правление пĕлтерсе чăрмантарма кирлĕ мар. Халĕ çынсем пурте ĕçре, утă çулаççĕ, пушă мар. Атьăр, хамăрах юсаса хуратпăр!

— Атьăр! — терĕмĕр Çерушпа иксĕмĕр те.

Вара эпир самантрах вăлтасемпе чĕрессене кĕпер айне хурса хăвартăмăр та васкасах килелле чупрăмăр.

Кăнтăрла çитиччен эпир шырлана чулсемпе тата тăпрапа тултарса лартрăмăр. Кайран пулă тытма кайрăмăр.

Çав кун эпир кашниех пĕрер чĕрес пулă тытрăмăр. Киле таврăннă чухне кĕпер урлă каллех лавсем каçса пынине куртăмăр. Халĕ вĕсем пĕр чăрмавсăр, лашисене юрттарсах, çăмăллăн каçса кайрĕç.

— Вăт, куратăр-и,—калама çук хĕпĕртерĕ Петĕр пичче çакна курсан.—Лайăх çул пулчĕ вĕт!?

— Питĕ лайăх пулчĕ!

Çакăн çинчен кайран хамăр шкулти пионервожатăйĕ пĕлнĕ те пире пурсăмăра та: «Маттур ачасем эсир», тесе ырларĕ. Халĕ эпир вăйлă çумăр хыççăн яланах хамăр колхоз тавраш̆ĕнчи мĕнпур çулсене тĕрĕслесе тăратпăр.



## Маруçпа Валерик

Пĕчĕкçеç Маруçăн хăйĕнчен те пĕчĕкрех шăллĕ пур, вăл Валерик ятлă. Анчах вăл кутăнланма, юнтарма юратать.

Пĕррехинче Маруç Валерике хăйпе пĕрле пăтă çитерчĕ. Анчах Валерик пăтта пĕртте чипер çиме пĕлмерĕ. Апат çинĕ чухне пĕрмаях ашкăнса-выляса ларчĕ вăл, çавăнпа хăйĕн пит-куçне, сăмсине, кĕпе умĕсене йăлтах пăтăпа вараласа пĕтерчĕ. Маруç ăна ятларĕ, чипер çиме вĕрентрĕ, çавах юнтармăш Валерик ун сăмахне тăна илмерĕ.

Пăтă çисе тăрансанах Маруç хăйĕн питне тата аллисене ăшă шывпа, супăньпе çуса тасатрĕ. Унтан алшăллипе лайăх шăлса типĕтрĕ. Вăл Валерике те çутарасшăнччĕ, ăна та хăй пекех таса тăвасшăнччĕ, çук вĕт, шăллĕ итлемерĕ. Вăл пĕчĕк тутине мăкăртса хучĕ те:

— Ка-ай! Эпĕ пите çутармастăп. Эпĕ алла çутармастăп!—терĕ.

— Эппин эпĕ санпа вылямастăп та,—хыттăн каласа хучĕ Маруç.

— Эпĕ пĕчченех вылятăп,—каллех юнтарчĕ Валерик.

Çакăн хыççăн Маруç ăна хăех тытса çуса ярасшăнччĕ, анчах шăллĕ ун аллинчен вĕçерĕнсех пӳртрен тухса тарчĕ.

— Халĕ эп Маруçран тартăм. Маруç мана тытайма-арĕ. Халĕ эпĕ хам ирĕккĕн çӳре-етĕп,—тесе çатăлтатать Валерик.

Акă, тула тухнă-тухман ун çумне шăнасем çыпçăнчĕç. Халь пĕри, халь тепри вĕçсе пырса лараççĕ. Вĕсем çуллă пăтă шăршине сиссе Валерик тавра пĕлĕт пек сырăнчĕç. Вуннăн-вуниккĕн кĕпе çине, çиччĕн-саккăрăн пичĕ çине пырса ларчĕç. Ниçта кайса кĕреймест Валерик, хăлаçланса кăна тăрать.

— Уй, путсĕр шăнасем!—тесе вĕсене аллипе шăлса пăрахасшăн, анчах шăнисем ун патне татах та татах вĕçсе пыраççĕ.

— Пулмасть кусемпе, тарас!—терĕ Валерик.

Вара вăл часрах сарай тăррине хăпарса тин çеç çулса типĕтнĕ тутлă шăршăллă утă çине кĕрсе выртрĕ.

— Тинех çăлăнтăм шăнасенчен. Халĕ тек вĕсем мана тивеймеççĕ. Мана Маруç та шыраса тупаймасть. Маруç мана çухатнăшăн хăех макăрма пуçлать акă. Хăех мана шырама тухĕ. Эп пурпĕрех чĕнместĕп. Пĕр шарламасăр выртас-ха. Пултаратăп вĕт эпĕ,—тесе, хăй ăссĕн мăкăртатса выртать Валерик.

Сарай тăрринче, пĕр кашта çумĕнче, сăпса йăви пулнă иккен. Валерик çумĕнчи тутлă пăтă шăршине сăпсасем те часах сисрĕç. Вĕсем хăйсен чăп-чăмăр йăви çинчи пĕчĕк шăтăкран тухаççĕ те тӳрех Валерик çине вĕçсе пырса лараççĕ.

— Эпĕ сире мăшкăллатаратăп-и!—тарăхса кайрĕ Валерик.—Эпĕ Маруçран та тарса пытантăм, ак сире...



Валерик пĕчĕк аллисемпе сăпсасене хăвала пуçларĕ. Сăпсисем пушшех те тарăхса кайрĕç пулас. Пĕр сăпси Валерике шăп питĕнчен сăхрĕ. Валерик шари-и! çухăрса ячĕ. Çав тери хытă ыраттарчĕ-çке!

Валерик, ним тума пĕлмен енне, сăпса йăвине мĕнпур вăйран чышкипе çапса ячĕ. Акă ĕнтĕ ун патне пĕр кĕтӳ сăпса кĕрлесе тухрĕ. Вĕсем тӳрех Валерике тапăнчĕç. Пит-куçран та, çамкаран та, ĕнсерен те, аларан та сăха-сăха илесçĕ. Темиçе сăпса кĕпе айне кĕрсе кайнă, çурăмран сăхаççĕ. Ниçта кайса кĕреймест Валерик, варĕ вăл йăпăр-япăр сарай тăрринчен вĕçтерсе анчĕ те, макăра-макăра тӳрех Маруç патне чупса кĕчĕ. Хăйне ĕнтĕ палласа илме те çук. Пĕр енчи питçăмарти минтер пек хăпарса кайнă, сăмсине чалăштарса лартнă. Сылтăм куçхупаххийĕ усăнса анса куçне йăлтах хупласа лартнă. Тепĕр куçĕ çамки çине хăпарса кайнă.

Çакна курсан Маруç питĕ тĕлĕнчĕ.

— Мĕн пулчĕ сана?—хыпăнса ӳксе ыйтрĕ вăл Валерикрен.

— Сăп... сăп... сăпса... сăпса сăх... сăхрĕ-ĕ!—аран-аран сăмах хушрĕ Валерик.

— Çавă кирлĕччĕ эппин сана. Ху айăплă. Нихçан та ман сăмаха итлеместĕн. Каласан та питне çумастăн,—ятларĕ ăна Маруç.

— У... у... урăх... них-çан та... ку... ку.. кутăн... лан-ма-ма-ас!..—ĕсĕклесе ячĕ шăллĕ.

Çакăн хыççăн вăл чăнах та кашни кунах супăньпе çăвăнса, тасалса çӳре пуçларĕ. Апат çинĕ чухне те ашкăнмасть, тирпейлĕ çиет. Маруç сăмахне те пĕрмаях итлет. Вĕсем халь Маруçпа питĕ килĕштерсе пурăнаççĕ, ялан пĕрле выляса-кулса савăнаççĕ. Иккĕшĕ те чечек пек таса çӳреççĕ. Çавăнпа вĕсем çумне ни шăнасем, ни сăпсасем çывçăнмаççĕ.

## Илемли

— И-эх, эп мĕн чухлĕ выльăх пăхса ӳстернĕ тетĕр-и?.. Эсир ăна шутласа та кăларас çук,—тет пирĕн атте час-часах. Эпир вара, вăл мĕн те пулин тĕлĕнмелли каласа парасса кĕтсе, ун çумнех тĕршĕнсе ларатпăр.

— Вара питĕ нумай-и, атте?

— Шутлăр акă,—пӳрнисене пĕрин хыççăн тепĕрне хутлатма тытăнать атте. — Кĕрĕк тесен, вунă пин çын валли кĕрĕк, атă тесен—пилĕк-ултă пин мăшăр атă çĕлеме çитет. Кăлпаса пĕçерсен, тиесе кайма çĕр вагон ытла кирлĕ.

— Ой-йой, питĕ нумай-çке!

Нумай пулмасăр. Хĕрĕх икĕ çул хушши выльăх-чĕрлĕх пăхатăп.

Атте мăнаçлăн пуçне ывăтса илет те кăмăллăн лăхăлтатса кулса ярать. Ача чухне вăл ялти кĕтӳçĕ пулнă, халĕ — колхозри фермăсен заведующийĕ.

Пĕррехинче пирĕн атте таçтан, те пасартан, вăрăм сухаллă кăвак качака çавăтса килчĕ.

— Ну, амăшĕ, çĕнĕ чун хутшăнчĕ пирĕн, лайăх пăхăр,—терĕ вăл аннене.

— Мĕн тума илсе килтĕн кăна?—килĕшмерĕ анне. — Качака вăл чарусăр выльăх вĕт.

— Эсĕ апла ан кала-ха. Качакан сĕчĕ имлĕ, теççĕ, ăна тухтăрсем те ĕçме хушаççĕ,—тет атте.

— Сĕчĕ, сĕчĕ...—Çаплах мăкăртататать анне (эх, çав пирĕн анне!)—ĕне те пур-çке хамăрăн. Качакана ăна çук çын ĕни тенĕ ĕлĕк.

— Ии-я, ĕлĕк çапла каланă. Халĕ апла мар. Тĕрлĕ выльăх пултăр. Колхозра та, килте те. Нумай пулччăр вĕсем. Кур эсĕ, качаки ку питĕ сĕтлĕскер. Çилли мĕнлерех, хуран пек.

— Пырĕ ĕнтĕ, пăхăпăр. Пурри кансĕрлемĕ,—килĕшрĕ вара анне те. Эпир, шăллăмпа иксĕмĕр, куншăн питĕ савăнтăмăр.

Çуркунне çитес умĕн, çурт тăррисенче тумла юха пуçласан, пирĕн качака путек туса пачĕ. Путекĕ юр пек шап-шурă, çăмĕ мамăк пек çемçе, яп-яка, пĕчĕк кăна çӳп-çӳхе туталлă. Çавăнпа эпир ăна «Илемли» тесе ят патăмăр.

Пĕр-икĕ эрне иртсен, пирĕн Илемли пурсăмăра та тĕлĕнтере пуçларĕ. Анне ун валли кăмака хыçне юриех вырăн туса панăччĕ. Анчах Илемли унта тем тусан та çывăрасшăн марччĕ. Вăл кашни касах пирĕн çумма, кровать çине хăпарса выртасшăнччĕ.

Пĕр каçхине анне ăна темле майпа хăй вырăнне хупма маннă пулнă. Çавăн чухне Илемли анне çумнех кĕрсе выртнă.

— Качака каскăнĕ темерĕн. Тупса килтĕн çав ăсти-çук путсĕне! Хитре тĕлĕк курнă çĕртен вăратрĕ,—тесе çĕмĕрĕлет анне.

Атте касса кайсах ахăлтатать:

— Ара, сана юратать вăл. Кашни кун ăна яшка пĕçерсе çитеретĕн те, ăстан ан юраттăр-ха,—тет.

— Мĕн яшки çини пур ун,—тет анне.—Чашăк çинчи яшка çине пӳрне чикнине курсанах, тутанса та пăхмасть. Эпĕ яшка сивĕнĕ-ши тесе кăна пĕлес тетĕп, вăл пур, тиркет, улпут пек. Ни çын çыртнă çăкăра çимест.

— Ара, вăл тасалăха юратать.

— Çав та тасалăха пĕлтĕр,— хăй те ахăлтатсах кулса ярать анне.—Тĕлĕнмелле вăл качакапа. Ытла чее выльăх...

Тепрехинче анне пире купăста кукли пĕçерсе парас терĕ. Пирĕн парникри купăстасем чылаях чăмартаннă ĕнтĕ. Илемли ун чухне чиперех чӳрече сакки çинче, хĕвел ăшшипе киленсе, урамалла пăхса выртатчĕ. Анне ик-виçĕ купăста пуçĕ касса кĕрсенех, вăл пĕчĕк сăмсине касăртрĕ те нăш-нăш—нă-ăшш! шăршласа илчĕ. Вара йăпăр-япăр чӳрече сакки çинчен сиксе анчĕ те анне çумне çыпăçрĕ, ĕçлеме те памасть ăна.

— Кăларса ярăр-ха ку чăрмавçăна тула!—хушрĕ пире анне.—Ара, купăстана çисе ярать вĕт ку! Кукăль пĕçересси те пулмасть манран капла.

Тулта хĕвел пăхать ун чухне. Çавăнпа эпир, анне хушнине итлесе, качака путеккине чăнах та тула кăларса ятăмăр. Вара аннене кукăль пĕçерме никам та чăрмантаракан пулмарĕ.

— Ну, халь илсе кĕрĕр ăна, ĕнтĕ ĕç пĕтертĕм,—терĕ анне, кукăльсене кăмакана хывнă хыççăн.

Эпир, шăллăмпа иксĕмĕр, пĕрпĕринпе ăмăртмаллах тула чупса тухрăмăр: «Эпĕ тытса кĕретĕп. Çук, эсĕ мар, эпĕ йăтса кĕретĕп»,—тетпĕр.

Ак хайхи, пирĕн Илемли ниçта та çук. Ни картара, ни витере, ни лупасайĕнче курăнмасть. Ăста кайса кĕчĕ вăл? Урама тухса кайнă тес, урам алăкĕ хупă тăрать...

Эпир хăрасах ӳкрĕмĕр, часрах пӳрте чупса кĕрсе аннене каласа патăмăр.

Анне пире ĕненмерĕ: «Чипер путек ăста кайтăр?»—терĕ вăл, пирĕнпе пĕрле тула тухса.

Анчах путек ниçта та çук.

— Хумкка пиччӳсен Парпăсси килсе йăтса каймарĕ пулĕ-çке? Çавна путексем тытать теççĕ,— хытах шиклене пуçларĕ анне те.—Пĕтерчĕ вара. Путеккине питĕ юрататтăм, ача пек ăсlaччĕ.

Эпир хамăр килте пăхман вырăн та хăвармарăмăр, Илемлине пурпĕрех тупаймастпăр.

— Пĕтерчĕçех ăна. Çав Парпăсах пĕтерчĕ пуль,—хашлатса илчĕ анне.

Эпир шăллăмпа кĕç-вĕç макăрса ярасса çитрĕмĕр.

Çав вăхăтра атте те фермăран таврăнчĕ.

— Мĕн хыпăнса ӳкнĕ эсир? Мĕн пулнă?—пирĕн пата васкаса пырса тăчĕ вăл.

— Илемли çухалнă-ха. Ниçта та çук,—тет анне.

Атте сасартăк лăхлатса кулса ячĕ:

— Авă, çав тата мĕскер?—аллипе çӳлелле тăсса кăтартрĕ вăл.

Пăхрăмăр та... пурсăмăр та çăварсене карса пăрахрăмăр. Пирĕн Илемли пӳрт тăрринче, мăръе çумĕнче тăра парать. Аслăк хыçĕпе, çатрака купи тăрăх улăхса кайнăскер вăл унта. Анчах мĕншĕн хăпарнă-ши?

— Э-э,—терĕ анне,—ара унта мăрьерен купăста кукли шăрши тухать-çке! Пулать вĕт тĕлĕнмелле чее выльăх!



# ÇЕÇПĔЛ МИШШИН ЧĔЛХЕПЕ СТИЛЬ УЙРĂМЛĂХĔСЕМ

Чĕлхе халăх пурнăçĕнче питĕ пысăк вырăн йышăнать. Чĕлхе вăл, И. В. Сталин вĕрентнĕ тăрăх, çынсене пĕр-пĕринпе хутшăнма, шухăшсене пĕлтерме, пĕр-пĕрне ăнланма, пĕрлешсе ĕçлессине йĕркелеме пулăшать. Общество кĕрешĕвĕпе аталанăвĕнче вăл чи кирлĕ майсенчен пĕри. Чĕлхесĕр литература пулма пултараймасть. Çавăнпа та писателĕн чĕлхипе стиль уйрăмлăхĕсене сăнаса тĕпчени пире писатель творчествине тĕплĕн пĕлме пулăшать, вăл общество çине мĕнле куçпа пăхнине, тăван чĕлхепе усă курса, общество аталанăвĕнче вăл мĕнле вырăн йышăннине уççăнах курма май парать.

Тепĕр енчен, писателĕн чĕлхине тĕрĕс тишкĕрсе тĕпчени культурăна пур енĕпе те çĕклеме, стиле ирĕккĕн çитĕнтерме, çыру ĕçне лайăхлатса пыма, тăван чĕлхен законĕсемпе свойствисене тарăн пĕлме, сăмах пуянлăхĕпе пĕлсе усă курма анлă майсем туса парать.

Писателĕн чĕлхепе стиль уйрăмлăхĕсене тĕплĕн пĕлни тăван чĕлхе мĕн енчен çĕннипе пуянланнине курма пулăшать.

Çак пĕчĕк статьяра эпир Çеçпĕл Мишшин чĕлхепе стиль уйрăмлăхĕсем çинчен сăмах хускатасшăн. Çеçпĕл Мишши чăваш поэзин чĕлхине тĕпчесе вĕренни идейăпа художествăлла шухăшне тата художествăлла хăйне евĕрлĕхне анлăнрах уçса панипе пĕрлех, чăваш халăх чĕлхин шухăша уçса паракан мелсем нумай енлĕ пулнине те пĕлме çул уçса парать.

Аслă Октябрь тивлетне мухтаса, «çиçĕм ури пек çип-çивĕч ухă, касса вут кăлармалла хурçă пек» чăваш чĕлхишĕн Çеçпĕл Мишши мĕнпур вăйран тăрăшса ĕçленĕ. Тăван чĕлхе мĕншĕн çав тери хаклă иккенне Çеçпĕл лайăх пĕлет, кăвар чĕреллĕ поэт унпала: «Йывăр тимĕр сăнчăртан хăтăлнă чăвашсене, паттăр та хăватлă саслăн, çĕн тĕнчен çĕн пурнăçне, çĕн кунне, çĕн кун-çулне, çĕнĕ пурнăç хĕвелне юратса тăма» хушать, çав чĕлхепе усă курса çĕнĕлле пурнăç тума чĕнет.

«...Тинĕс, эсĕ вăйлă! Ху хумсен вăйлă, хăюллă юрри сассипе ман чĕрене вăй кĕрт! Чĕре çунтăр! Чĕлхе вĕçне кăварлă сăмахсем килччĕр. Вара эпĕ хам чăваш çĕрне кайсан, хам вăя, чĕре вăйне чăваш çĕрне парăп. Кăварлă сăмахпа çамрăк чунсене вăратăп. Пурте тĕнче курччăр, çут тĕнче илемне пĕлччĕр»,—тесе çырать Çеçпĕл Мишши. Çак сăмахсем поэт тăван чĕлхене мĕн тери хакланине, тăван халăха çутта кăларас тесе вăл мĕнле çуннине, пурнăçа чун-чĕререн юратнине кăтартаççĕ. Тăван чĕлхепе, унăн пархатарлă хăвачĕпе Çеçпĕл пурне те «тĕнче курма» тĕрĕс те тӳрĕ çул çине кăларасшăн.

Тăван чĕлхе ирĕке тухни Çеçпĕле питех те савăнтарать.

«Тĕттĕм тĕп пулчĕ, мăшкăл
иртсе кайрĕ —
Тин ирĕке тухрăн, тĕп чăваш
чĕлхи!
Миçе ĕмĕр витĕр асаппа
тухмарăн,
Миçе çичĕ ютăн мăшкăлĕ
пулса...
Çапах паттăр юлтăн, вăйна
çухатмарăн,
Халь те пулин çивĕч, кăвартан
таса».

Ирĕке тухнă чĕлхе «кĕсле кĕвви саслă янраттарса кайĕ, уйăхăн-хĕвелĕн çунĕ ун хăвачĕ». Çав хăват чăваш халăхне çĕнĕ пурнăç, ирĕклĕ пурнăç тума пулăшĕ, тенĕ поэт.

«Чăваш чĕлхи текех чухăн мар,
Чăваш чĕлхи чĕрĕлчĕ вилĕмрен.
Эй, чăвашсем! Пĕтĕм чĕререн:
— Чăн чĕрĕлчĕ!—тесе
кăшкăрар!»—

тет поэт, тăван чĕлхе ирĕке тухнипе хавхаланса. «Тăван çĕршывăн капăр чĕлхине ялан савма» хушать вăл, унсăрăн чĕлхене пăсса юрăхсăра кăларакансем пулма пултарĕç тет.

«Чĕлхе, обществăра çынсем пĕр-пĕринпе хутшăнмалли средство пулса, обществăн пур класĕсемшĕн те пĕр пекех ĕçлесе тăрать, ку тĕлĕшпе вăл классем çине нимĕн уямасăр пăхать темелле. Анчах çынсем, уйрăм социальнăй ушкăнсем, классем чĕлхе çине пĕрре те уямасăр пăхмаççĕ. Вĕсем чĕлхепе хăйсен интересĕсемшĕн усă курма, чĕлхене хăйсен уйрăм лексиконне, хăйсен уйрăм терминĕсене, хăйсен уйрăм пуплевĕсене кĕртме тăрăшаççĕ» (Сталин И. В.).

Чăвашсен буржуалла националисчĕсем те, литература чĕлхине аталантарассине хăйсен аллине çавăрса илсе, унпала хăйсен интересĕсемшĕн усă курма тăрăшнă. Çапла майпа вĕсем чăваш халăхне, социализм çулĕ çинчен пăрса ярса, буржуалла наци туса хума ĕмĕтленнĕ. Чăваш литератури чĕлхи никама пăхăнман, ытти пур нацисен чĕлхинчен те уйрăлса, вĕсенчен инçе тăракан чĕлхе пулмалла, тесе вĕрентнĕ вĕсем. Çапла вĕсем чăваш нацине аслă вырăс халăхĕнчен пистересшĕн, уйăрасшăн пулнă.

Анчах пирĕн чăваш литература чĕлхи çĕнĕ хăватпа аталанса пынă. Ăна буржуалла националистсем вырăс чĕлхинчен кĕрекен пурне те ăнланмалла сăмахсенчен «тасатайман». Вĕсем чăваш совет литературине хутшăнакан писательсене тӳрĕ çултан пăрса ярайман, социализм строительствинчен уйăрма пултарайман, авалхи пусмăрлă кун-çула идеализацилесе кăтарттарайман. Вĕсем писательсене йăла тематикипе ытларах çырма хистенĕ, вăл этем шухăшкăмăлне туллин уçса пама пултаракан тема, тенĕ, социально-политикăлла ыйтусем чăваш литературинче пулмалла мар, тенĕ. Ку енчен те вĕсем халăха общество пурнăçĕнчен пăрса ярасшăн пулнă.

Çичĕ сыпăклă силлабика виçи, вĕсен шучĕпе, чăн-чăн чăваш сăвă виçи вырăнне хисепленнĕ, пирĕн чăваш поэчĕсен çав картаран тухма юрамасть, тенĕ. Анчах нумай енлĕ пурнăç аталанăвне çав çичĕ сыпăклă ритмикăпа анлăн кăтартса пама май килмен.

Çеçпĕл Мишши литература чĕлхипе сăвă техники çинчен хускатнă ыйтусем чăваш совет литературинче халăха хирĕçле пыракан буржуалла националистла элементсен «теорине» аркатса пыракан çĕнĕ те хăватлă вăй пулнă.

Çеçпĕл Мишши чăваш литературине вырăс литературипе çыхартас ыйту кăларса тăратать. Вырăс литературинче Çеçпĕл хăйĕн поэзийĕ валли, çав май пĕтĕм чăваш совет поэзийĕ валли те, çĕнĕ творчествăлла мелсемпе идейăллă тĕрĕс никĕссем шыранă. Çеçпĕл поэзийĕпе унăн чĕлхе пуянлăхĕ çĕнĕ пурнăç условийĕсенче вырăс литературин чи паха традицийĕсене пула, чăваш литературине ӳстерсе пыма май панă. А. С Пушкин, Н. А. Некрасов, А. М. Горький Украина халăхĕн поэчĕ Т. Г. Шевченко тата ыттисем те順 уншăн аслă вĕрентекенсем пулнă. Çав пысăк ăстасенчен вăл лайăх сăвăсем çырма вĕреннĕ.

Çапла майпа Çеçпĕл чăваш поэзийĕнче халăхăн çитĕнĕвĕсене кăтартса пама пултаракан анлă çул уçать.

Çеçпĕлĕн поэзири ăсталăхĕ чи малтан вăл чăваш совет поэзине çĕнĕ композициллĕ, метрикăллă, ритмикăллă формăсем кӳнинче. Революци хăвачĕ, ирĕке тухнă ĕççыннисен кăмăлĕ вăйлăн хăпарни поэтăн чунне калама çук çĕклентернĕ, хăйĕн туйăмĕсене туллин сăнласа пама çĕнĕ меслетсем шырама пулăшнă. Çĕнĕ событисемпе çĕнĕ туйăмсен содержанине традицилле çичĕ сыпăклă силлабика виçипе каласа пама кансĕр пулнă. Çавăнпа Çеçпĕл чăваш поэзине çĕнĕ метрикăллă формăсем—силлабо-тоникăпа тоникăна кĕртет. Çеçпĕлĕн тĕп метрики силлабо-тоника. Çичĕ сыпăклă виçерен силлабо-тоникăлла метрикăна куçма кирли çинчен Çеçпĕл Мишши хăйĕн «Сăвă çырассипе ударени правилисем» ятлă статьинче тĕплĕн каласа парать: «Революци пурнăça пур енчен те çĕнĕ сывлăш, чĕрĕ сывлăш вĕрсе кĕртрĕ,—тет вăл.—Пур ĕçре те чĕрĕлĕх. Чăваш кун-çулне çутатмашкăн, чĕрĕ сывлăш вĕрсе кĕртмешкĕн чăваш поэзийĕ те чĕрĕле пуçларĕ... Ку ĕç — пирĕн чăваш çĕршывĕшĕн çĕнĕ ĕç. Çул шырас пулать. Сăвă ĕçĕн техникине пултарас пулать»,—тет Çеçпĕл.

Поэтăн сăввисенче силлабо-тоникăн пур виçисем те, амфибрахи те, анапест та пур. Вăл хăйĕн сăввисенче ĕçĕн, явленин, событин, картинăн содержанине тарăн та сулмаклăн, вăйлăн кăтартса пама пултаракан динамикăллă виçепе ытларах усă курнă.

«Вĕççĕр-хĕрсĕр тинĕсĕм,
Хуп-хуран, сип-симĕсĕн,
Кăпăк тумлăн, хумлăн, хумлăн
Çырана çапса, хăюллăн
Хумлă сулнăксемпе сулăн,
Хумлă кăпăкпа вĕре.
Ман çунатлă вутлă чунăм,
Çĕн ĕçе чĕнен чĕре
Кĕрешӳ вăйне анчах
Кăмăллать çак тĕнчере».

Кивĕ пурнăçран çĕнĕ пурнăçа куçни, çĕнĕлле ĕмĕт-шухăша çирĕплетме кирли çинчен каланипе пĕрлех коммунизмшăн активлăн кĕрешме чĕнни, событисен динамики, ĕççыннисен çĕнĕ туйăмĕ çирĕпленсе пыни—Çеçпĕл поэзийĕнчи социализмла реализмăн вăйхăватлă никĕсĕ.

«Литература ĕçĕ пĕтĕм пролетариат ĕçĕн пĕр пайĕ пулса тăрать»,—тенĕ В. И. Ленин. Çеçпĕл çакна тĕрĕс те лайăх ăнланнă. Пурнăçри чăнлăха вăл чăннипе уçса панă, ĕçхалăхне эксплуатацие хирĕç кĕрешме, çутă пуласлăхшăн пĕтĕм вăйран ĕçлеме чĕннĕ, революци идейисене çирĕптытса пынă. Çеçпĕл ĕлĕкхи пусмăр тĕнчинчи пурнăç тискерлĕхĕсене уçса кăтартнă, çыннăн тивĕçлĕхне таптанине хирĕç нихçан иксĕлми вăй-хăвачĕ çитнĕ таран паттăрăн кĕрешнĕ.

Социализмла реализм пурнăçа тĕрĕс те тарăннăн, истори тĕлĕшĕнчен конкретлăн, революцилле аталану йĕрĕпе çутатса пама хушать. Вăл поэтăн ĕмĕтне, унăн шалти туйăмĕсене пĕтĕм халăх кăмăлĕпе, халăхăн ĕмĕчĕсемпе тӳррĕн çыхăнтарса пыма сĕнет. Социализмла реализм пурнăçри явленисене паянхи кунпа шайлаштарса çеç мар, унăн малашнехи революцилле ӳсĕмне те шута илсе, паттăр кĕрешĕвĕпе таса ĕмĕтне уçса парать.

«Таса искусство», «Искусство—искусствăшăн» текен реакцилле теорисем Çеçпĕлшĕн ют пулнă, вăл вĕсене йышăнман, искусство—халăхшăн пулмалла тенĕ шухăша вăл пĕр вăхăта та манман, искусствăн пысăк идейăлăхĕшĕн тата обществăлла пысăк пĕлтерĕшĕшĕн тăнă. Искусство халăх кун-çулĕнчен хăйне уйрăм тăма пултараймасть.

Çеçпĕл содержанипе — социализмла, формипе нацилле культурă ӳссе чечекленессине пĕтĕм хавалĕпе шанса тăнă. Хăйĕн «Вăхăт çитĕ» прозăллă сăввинче вăл тăван чĕлхе культури анлăн сарăлса аталанасса çирĕп шанса çапла çырать:

«Вăхăт çитĕ. Чăваш чĕлхи те тимĕр татĕ. Çивĕч пулĕ, хĕртнĕ хурçă пек пулĕ. Вăхăт çитĕ—чăваш юрри те янăраса кайĕ. Таса пĕлĕте, çут тĕнчене, хĕрлĕ хĕвеле савса юрлĕ вăл. Чăваш юрринченех таса пĕлĕт çумĕнчи тăри юрри илтĕнĕ. Чăваш юрринче тинĕс хумĕ шавлĕ, вăрман чашлĕ. Вĕçĕ-хĕррисĕр улăхсем симĕсленсе выртĕç. Авалхи хуйхă сасси илтĕнмĕ. Телей куç умне тăрĕ. Атăл хĕрри тăрăх тĕнче кĕсле сассин янăраса тăрĕ, çакă—чăваш юрри пулĕ. Чăваш сăмахĕ кăвар пулĕ, хĕрнĕ хурçă пулĕ».

Унăн кашни сăвви революцилле пафоспала вĕресе тăрать. Çеçпĕл Мишши, Октябрьти революци çулăмĕпе пиçĕхсе ӳснĕскер, пĕтĕм вăй-халне революци ĕçне панă. Вăл хăйĕн çивĕч лирикипе иртнĕ пурнăçăн хура вăйĕсене питлесе, социализмла революцие чун-чĕререн мухтать, ирĕклĕ те телейлĕ пурнăçшăн, коммунизм çĕнтерĕвĕшĕн кĕрешес ĕçре ĕççыннисене хĕрӳллĕ, çирĕп пулма чĕнет, уншăн хастарлăн кĕрешме хистет. Çеçпĕл телейлĕ малашлăх пуласса чунтан-вартан шанса тăрать, ахальтен мар вăл: «Малта — Хĕвел»,—тесе асăнтарать.

Çеçпĕлĕн лирики—кивĕ пурнăçран çĕнĕ пурнăça куçмалли кĕпер. Хăйĕн сăввисенче вăл ĕççыннисене çĕнĕ пурнăç тума чĕнсе хавхалантарать. Совет çĕршывĕн телейлĕ пуласлăхне—хĕвеллĕ коммунизма курма ĕмĕтленсе, Çеçпĕл хăйĕн чĕререн тухакан сăмахĕпе халăха çав çутă малашлăхшăн пĕтĕм вăя хурса кĕрешме йыхăрчĕ:

«Хастарлă, хыт утăмлă пулăр,
Çĕршывăн хастар ачисем,
Вут кайăклăн вĕçĕр, ан юлăр,
Ан юлăр кун-çул уттинчен»,—

тет Çеçпĕл чăваш ĕççыннине социализм строительствине активлăн

хутшăнма чĕнсе. Анчах, кĕрешӳ çулне шанмасăр, унран пăрăнма пăхакан, «ăш еншĕн çунакан» чĕресене:

«Камăн нишлĕ чĕри,
Пур нишли, халсăрри—
Лĕнчĕрти шапасем пулччĕри»,—

тет поэт хĕрӳллĕн. Ахальтен мар ĕнтĕ: «Революцин хурçă карапĕ çинче халсăр сынсем ан пулччĕр»...—тесе çырнă поэт Покрышньăна панă фотоӳкерчĕкĕн тепĕр енне.

* * *

Революцичченхи чăвашсен литература чĕлхи буржуалла наци аталанăвĕпе çыхăнса тăнă пулсан, Октябрь революци хыççăнхи чăвашла литература чĕлхи социализмла наци аталанăвĕн çулйĕрĕпе тапранса каять. Революциччен ытларах литература чĕлхи анатри чăвашсен чĕлхине никĕсе хурса аталаннă пулсан, Совет саманинчи литература чĕлхине тури чăвашсен калаçăвĕ те хутшăнать, анатрипе тури чăвашсен калаçăвĕнчи паха енĕсене пĕтĕмпех тивĕçлĕ вырăна хурса йышăнать, çавăнпа пĕрлех вырăс чĕлхинчен кĕнĕ элементсем те активлăн хутшăнаççĕ. Çак йĕрке Çеçпĕл творчествипе те çыхăнса тăнă.

Çеçпĕл Мишши чăвашла çирĕп литература чĕлхи тăвасшăн тăрăшнă. Вăл чăваш халăхне пуриншĕн те ăнланмалли сăмахсемпе усă курать.

Диалектизмсем ăна илĕртсех кайман. Архаизмсем те сахал тĕл пулаççĕ. Неологизмсем вара чылай тĕл пулаççĕ. «Паттăр ĕç çинчен калаcа пама паттăр сăмахсем кирлĕ»,—тенĕ А. М. Горький. Çеçпĕл халиччеихи поэзире тĕл пулакан сăмахсемпе çеç лăпланса лармасть, вăл вăйлă туйăмсемпе шухăшсене палăртма пулăшакан çĕнĕ сăмахсем шырать, сахал мар çĕнĕ сăмахсем туса, вĕсемпе хăйĕн поэзинче усă курать. Вăл кĕртнĕ сăмахсем чăваш литература чĕлхине тахçанах кĕрсе çирĕпленнĕ ĕнтĕ. Унăн çĕнĕ сăмахĕсемпе сăмах çаврăнăшĕсем пур чăвашсене те ăнланмалла, кулленхи калаçура кирлĕ сăмахсем пулса тăчĕç. Сăмахран акă, Çеçпĕлччен чăваш поэзин словарĕнче çакнашкал сăмахсем тĕл пулман: 1. Япала ятĕнченех тата паллă ятĕнчен -лăх, -лĕх, аффикссем хушнипе пулакан абстрактлă пĕлтерĕшлĕ япала ячĕсем: «Нишлĕлĕх», «Паттăрлăх», «хурлăхлăх», «йăвашлăх», «тантăшлăх», «тăванлăх», тата: «пултараннă», «çăлтăрăн», «хĕвелĕн», «хăватлăлантăр», «хар-хаяр», «кар-карла», «хум-хумла», «хĕрлĕхĕрлĕ» т. ыт. те.

Çеçпĕл хăй поэзине халиччен чăваш чĕлхинче тĕл пулман сăмах çаврăнăшĕсем кĕртет:

Тĕнче **кĕсле сассин янраса тăрĕ**
**Е тата:**
Çĕршывăм хăюллăн вăранĕ,
Тапранĕ **кăвар кайăкла.**

Çакнашкал танлаштарусем Çеçпĕле хăйĕн шухăш-кăмăлне çивĕчрех те витĕмлĕрех калама пулăшать, вулакана тĕплĕн ăнланма май парать. Пĕр-пĕр япалана хăйĕнчен çирĕпрех, вăйлăрах япалапа танлаштарни танлаштаракан япалана вулакана ăнланмаллараx тăвать.

«Чĕлтĕрти çеçкеллĕ чечек», «кĕмĕл сывлăм шывĕ», «вĕри вутлă çулăм», «Хĕрлĕ хĕрнĕ хурçă», «çунтаракан çиçĕм», «ылттăн-кĕмĕллĕ», «хĕвеллĕ тумтир», «хупхура сивĕ кун», «хурçă шанчăк», «кăварлă ывăç», «кăвар чĕре», «кăварлă юн», «ирĕк вут-кăварĕ», «ылттăн сӳре» тата ытти эпитетсем те поэтăн шухăшне вăй кĕртме пулăшаççĕ.

Вăл халиченех тĕл пулакан эпитетсемпе те сахал мар усă курать: «капăр чĕлхе», «йăлтăра çанталăк», «çут тĕнче», «çичĕ ют», «сивĕ хĕл», «йăлтăра хĕвел», «ирхи шевле», «кăвак пĕлĕт».

Эпитетсемпе вăл анлăн та пĕлсе, питĕ вырăнлă усă курать, ку вăл поэзин пахалăхне тата ытларах вăйлăлатать.

Çеçпĕл сăввинче чи малтанхи хут тĕл пулакан эпитетсем интонаци енĕпе аван палăраççĕ:

«Хĕрлĕ хĕрнĕ хурçă,
çунтаракан çиçĕм,
Вĕри вутлă çулăм эсĕ пулăн ху».

Калаçура ялан тĕл пулакан эпитетсем çине интонаци уйрăмăнах ӳкмест:

Ушкăн-ушкăн шур пĕлĕт иртет...
Тăлăх хирте каç пулса килет.

Унăн поэзине тата хăйне уйрăм кĕске формăллă эпитетсем кирлĕ вырăнта тăраççĕ.

**Ылттăн шăратан хуран...**
**Çĕр пин çăлтăрлăн çунат**
Чăваш çĕрĕ...

Ку тĕслĕхсенчен палăртнă эпитетсенче -акан, -екен аффикссем кирлĕ пек, анчах поэт çав эпитетсем туйăмне вĕсемсĕрех вăйлăлатать, тата вăйлăрах янăракан тăвать. Ку унăн ăсталăхĕнчен, илемлетекен мелсемпе пĕлсе усă курма пултарнинчен килет.

**Гиперболăсем** те çук мар: «**çĕн ĕмĕр чăвашĕ**, хулпуççипе кăвак **пĕлĕте перĕнсе**, кун-çул уйне тухса, **хĕвел тумтир** тумланĕ», «кăвар чĕрем—пин çын чĕри», «Эп пĕр çын мар, **эп пин чăваш**, эп пин-пин çын!», «чĕрем юрри—**пин çын юрри**».

Поэтăн калас шухăшĕ пысăк пулнипе çав революцилле пысăк шухăша сахал сăмахсемпех калаcа пама тăрăшнипе çыхăнса тăрать те ĕнтĕ Çеçпĕлĕн поэзинче тĕл пулакан гиперболăсем. Гипербола калас шухăша вăйлăлатса кăтартма, шухăша вулакан асĕнче нумайччен тытăнса тăма пулăшать.

Çеçпĕл метафорăсемпе те анлăн усă курать: «акапуç туртийĕ хушшинче хĕвел ташлать»; «çĕн кунхĕвел сарриллĕ ылттăн акапуç чăваш уйне ака тума тухать»; «çилтăвăл иртсессĕн çанталăк кăмăллăн та лăпкăн ачашланса канĕ»; «**шур пĕлĕт иртет**», «каç пулса килет»; «эй, çĕнĕ кунăм, каялла ан кай, ан чак!»

Чĕрĕ мар япаласене чĕрĕ пек туса кăтартни, илемлетекен мелсемпе сăмахсен куçаруллă пĕлтерĕшĕсемпе усă курни пурнăça уççăнах кăтартма пулăшать. Часчасах сăмахсен куçаруллă пĕлтерĕшĕсемпе усă курса, Çеçпĕл образсене, уйрăм эпизодсене палăрмаллах, çивĕч кăтартать. Çавнашкал илемлетекен майсемпе анлăн та ăста усă курни Çеçпĕл поэзине вăй хушать, пуянлатать, янăравлăрах та илемлĕрех илтĕнмелле тăвать.

«Каждое слово в поэтическом произведении должно до того исчерпывать все значение требуемого мыслью целого произведения, чтобы видно было, что нет в языке другого слова, которое тут могло бы заменить его»,—тенĕ вырăссен аслă критикĕ В. Г. Белинский.

Çеçпĕл сăвă çырнă чухне çак сăмахсене асра тытса тăнă. Çавăнпа вăл сăмахсем суйласа илсе вĕсене пĕлсе вырнаçтарас енĕпе ăста пулнă. Унăн кашни сăмахĕ хăй вырăнĕнче. Сăввисенчи нихăш сăмаха та пĕр йĕркерен кăларса урăх çĕре лартаймăн, ун пек тусан, сăвă шухăшĕ пĕтĕмпех пăсăлса каять.

Çеçпĕл сăввисем çамрăксене пурнăç çине марксистла-ленинла пăхма вĕрентеççĕ, совет патриотизмĕн туйăмне аталантарма пулăшаççĕ, совет халăхĕн чапĕпе мухтавне туйса илме, совет çамрăкĕсен çӳлти пусăмра тăракан мораллĕ пахалăхĕсене ӳстерсе пыма вăй хушаççĕ.

Çеçпĕл аслă вырăс халăхĕн малта тăракан, идея тĕлĕшĕнчен çӳлти пусăмра тăракан, халăх интересĕсене хӳтĕлекен хăватлă литературин влиянийĕпе ӳссе аталаннă. Унăн поэзийĕ вулакансене коммунизмла воспитанипе образовани парас ĕçре пысăк вырăн йышăнать. Вăл вулакансен кăмăл-туйăмне çĕклентерет, патриотизм туйăмне ӳстерет.

Вăл Аслă Социализмла революцичченхи чăваш халăхĕн пусмăрасапне, хĕн-хурлă пурнăçăн пĕтĕм тискерлĕхне, тĕрĕсмарлăхне, халăхăн революцилле протестне кĕрешӳ çулĕ пĕртен-пĕр тĕрĕс çул пулнине кăтартса парать, халăха уççăнах ирĕклĕхшĕн кĕрешĕве тухма чĕнет.

* * *

Çеçпĕл Мишши хăйĕн поэзинче пур пуплев пайĕсемпе те анлăн та пĕлсе, вырăнлă усă курать. Пысăк шухăша кĕскен те витĕмлĕн кăтартма Çеçпĕл сахал мар çĕнĕ сăмахсем тунă, терĕмĕр. Уйрăмăнах,—лăх, -лĕх аффикслă абстрактлă пĕлтерĕшлĕ япала ячĕсем: «малашлăх», «пуласлăх», «нишлĕлĕх», «хурлăхлăх», «паттăрлăх», «тăванлăх», «тантăшлăх», тата ытти сăмахсем те.

Япала ячĕсен камăнлăх падежĕпе икĕ формăра та усă курать. Япала камăннине е мĕнĕннине ытларах палăртса каланă чухне поэт камăнлăх падежĕн тулли формипе ытларах усă курать: «çĕршывăн хăвачĕ», «хĕвелĕн юрри», «чăвашăн ĕмĕрри», «тăвансен юнĕ», «чăвашăн ĕмĕчĕ»...

Камăнлăх падежĕн кĕске форми: «çанталăк илемĕ», «хăюлăх юрри», «ĕмĕрсен ĕмĕлки-кĕлетки», «кĕрешӳ вăйĕ», «ирĕклĕх юрри», «сывлăм шывĕ» тата ытти те.

Пĕрлелĕх падежĕнчи япала ячĕсем ытларах -па, -пе аффикссемпе тĕл пулаççĕ: «хăюллă куçпа», «ирĕклĕхпе», «тĕнчипе», «çуттипе», «çивĕчпе хăватлăх» тата ытти те.

Çак майлă формăпа поэт ытларах усă курать, мĕншĕн тесен вăл аффикссем литература чĕлхине çыхăхрах, çирĕпрех кĕрсе вырнаçнă. -пала, -пеле, -палан, -пелен аффикслă пĕрпеклĕх падежĕнчи сăмахсем курăнсах каймаççĕ, мĕншĕн тесен вĕсем уйрăм калаçусенче кăна (диалектсенче) тĕл пулкалаççĕ.

Камăнлăх формипе анатри чăвашсем ытларах усă кураççĕ. Çав форма вĕсен калаçăвне çирĕп кĕрсе вырнаçнă. Камăнлăх форми, местоименипе каланă пек мар, япала манăннине, е санăннине, е унăннине тĕрĕс кăтартать, чĕре туйăмне вăйлăрах пĕлтерме пулăшать.

Илсе пăхар-ха: Çĕршывăм е ман çĕршыв. «Çĕршывăм» тенĕ сăмахра темле тăванла çывăх курни, чунтан хисеплени палăрса тăрать.

Çак форма Çеçпĕл поэзинче питех те витĕмлĕ. 1-мĕш сăпатри камăнлăх формипе вăл ытларах усă курать: «чĕрем», «çĕршывăм», «чунăм», «куçăмсем», «тăванăмçăм» (-çăм аффикс юрату, кăмăл тарăннине пĕлтерет).

Çак форма (çавăнпа пĕрлех 2—3-мĕш сăпатри те) чăваш халăхĕн сăмахлă творчествишĕн характерлă япала. Вăл Çеçпĕл творчестви халăхăн сăмахлă поэзине çывăх тăнине кăтартать.

Паллă ячĕсем чылайăшĕ эпитетсем вырăнĕнче тăраççĕ: «кăнкăвак хум», «сарă сĕтел», «шурă пĕлĕт», «тăлăх хир», «шĕл-кăвар», «йăлтăр хĕвел» тата ытти те.

Тĕс пĕлтерекен паллă ячĕсем пурте тенĕ пекех вăйлă формăра тĕл пулаççĕ: «кăн-кăвак хум», «Хуп-хура сивĕ кун», «хĕрлĕ-хĕрлĕ». Поэтăн ытларах паллă ячĕ глагол — сказуемăй çумĕнче тĕл пулать, ку ĕнтĕ поэзири динамикăна вăйлăлатмалли чи лайăх меслет: «тапранĕ кăвар кайăкла», «вут-кайăклăн вĕçĕр», «хăюллăн вăранĕ», «кăварлă чечеклĕн чечекĕ», «уйăххăн-хĕвеллĕн çуталать», «çăлтăрлăн çунан чăваш çĕрĕ», «кĕмĕл саслăн килет», «çитмĕл çичĕ чĕлĕхлĕн янăраççĕ»...

Çак сыпăках асăнтарма пулать:

«Тинĕс, тинĕс вăйлăраххăн
Хăвăртраххăн, çăмăлраххăн,
Чул пулсан—хăватлăраххăн,
Хыççăн-хыççăн хум-хумла!»

Паллă ячĕсем мăшăррисем те сахал мар тĕл пулаççĕ, вĕсем шухăша вăйлăлатмалли майсем: «йăр-яр», «вĕççĕр-хĕрсĕр», «хупхура», «вут-кайăклăн», «хар-хаяррăн», «хура-шур»; çавăн пекех мăшăр япала ячĕсем те: «ашшĕамăш», «хурт-кăпшанкă», «çил-тăвăл», «турчăка-мелке», «кил-тĕрĕм»...

Икĕ хут калакан сăмахсемпе нумайăшне е ĕç темиçе хутчен пулса пынине кăтартнă чухне усă курать: «Çул-çул урлă», «уй-уй урлă», «ушкăн-ушкăн шур пĕлĕт», «пин-пин çын», «вула-вула», «кăчăрт-кăчăрт», «кас-кас», «касса-касса», «хыççăн-хыççăн хум-хумла».

Анлă шухăша революцилле çĕнĕ ĕмĕре, ирĕк пурнăça мухтаса, çĕнĕ шухăшсене, революцилле идейăсене калаcа пама вăл шухăшсене вулакан патне сахал сăмахсемпе витĕмлĕн те çивĕччĕн çитерес тесе, ĕç хăвăрт улшăнса пынине кăтартма Çеçпĕл глаголсемпе тата унăн формисемпе анлăн усă курать:

«Çĕн поэт ака та тутăр,
Утă çултăр,
Вутă çуртăр,
Ĕçлесе çĕн юрă хутăр,
Туй пулсан—ташлатăр,
култăр...» тет вăл.

Совет саманинчи поэт-писателĕн çапла пулмалла та. Халăхпа, унăн кулленхи пурнăçĕпе ĕçне хăй курса хăй пĕлмелле унăн; унсăрăн Çеçпĕл те халăх шухăш-кăмăлне, сисĕм-туйăмне, ĕçне-хĕлне тӳррĕн кăтартса парайман пулĕччĕ.

Ирĕк пурнăçа юратма, çĕнĕ пурнăça çирĕплетме чĕннипе çыхăнса тăраççĕ те унăн çине-çинех тĕл пулакан хушу наклоненийĕнчи глаголсем: «сулăн-уткăн», «хумхумла», «кар-карла», «вĕр», «кĕрт», «силле», «тапрат», «тасат», «ан кай», «ан чак» тенĕ сăмахсем.

Çеçпĕл Мишши деепричастисене те юратнă. Вĕсемпе вăл халăх ĕмĕчĕсене витĕмлĕрех каласа пама пултарнă. -ма, -ме, -са, -се аффикслă деепричастисемпе вăл кĕске тата тулли формăра та усă курать. Тăван литература чĕлхинче вĕсем икĕ формăра курăнаççĕ.

1. Ачасене вĕрентме эсир
ан ÿркенĕр;
2. Тăван поэт ятне вĕри кăвар
чунсем
Савма пăрахас çук.
Е тата:
1. Ирĕклĕ кун-çул тумашкăн
Тăрăр пурте харăс:
2. Ху чĕлхÿне хăват
кĕртмешкĕн...

Шухăша çивĕчрех, хĕрÿллĕрех, витĕмлĕрех калас тенине пĕлтерессĕ унăн хăшпĕр сăмахсене çине-çинех икĕ е виçĕ хут калани. Кунта параллелизмпа анафора кĕрет. Синтаксисла параллелизм тесе уйрăм сăмах майлашăвĕсене темиçе хут кĕртнине калаççĕ.

Вăхăт çитĕ, вăхăт пулĕ
Çĕн йĕрке килсен,
Юхмĕ, юхмĕ тек куççулĕ
Пурнăç хĕсĕкрен.

Çакнашкал пĕр сăмахах икшер хут каласа поэт хăй шухăшне тарăн та витĕмлĕн, асра тăрса юлмалла пултăр тенипе кĕртнĕ.

Е тата:
«Йăлтăр хĕвел, çун! çун! çун!»
«Малалла, малалла çул хывар!»

Кусем поэтăн хĕвеллĕ пурнăç патне çивĕччĕн утма хистекен чĕререн тухнă революцилле шухăшлă сăмахсем.

Çавăнпа пĕрлех Çеçпĕл çав пĕр сăмахах икшер хут каласа иртнĕ саманари чăваш çĕршывĕн йывăр кун-çулне те вулакан куçĕ умне тĕкĕр çинчи пек кăларса тăратать.

«Ĕлĕкхи ĕмĕрсен ĕмĕлки
хушшинче
Чăваш çĕрĕ мана курăнать:
Ман çĕршыв хĕрлĕ юнлă хĕрес
çумĕнче
Çакăнса, сыхăнса тăрать.
Кăмрăкланнă асаплă чăваш
чĕринчен
Юн тумлать, юн тумлать—
хĕрлĕ юн».

Уйрăм сăмахсене темиçе хут калани чĕлхене эмоци енчен те вăйлăлатать:

«Пулĕç ĕмĕрлĕх илемлĕ
Сăвă-юрăсем,
Пулĕç чаплă, çивĕч ăслă
Кĕнекеçĕсем».

Содержанипе — социализмлă, формипе — нацилле чăваш культури ÿссе аталанасса чĕререн шанса тăнине анафорăпа усă курса ĕненмелле кăтартать.

Предложенисем е сăвă йĕркисем пĕр пек сăмахран пуçланнине анафора теççĕ.

* * *

Çеçпĕл поэзинче предложенисен пур формисем те пысăк вырăн йышăнаççĕ, вĕсенчен темиçе йĕркеллĕ хутлă предложенисем те сахал мар:

«Тинĕс, тинĕс, вăйлăрах
Хыççăн-хыççăн хум пăрах,
Тамăк вутлăн, тамăк çутлăн,
Вут-кăварлăн, хар-хаяррăн
Тайăн-тайăн, çырăн-варăн
Хутлă-хутлăн сулăн, уткăн».

Çавнашкал предложенисемпе поэт хăй калас тенĕ революцилле пысăк шухăшсене тĕрĕс те янравлă каланă. Шухăш çивĕччĕшне, унăн витĕмлĕхне вулакан патне çав халлĕнех, ăнланмалла илсе çитернĕ.

Чăваш поэзийĕнче союзсăр пăхăнуллă хутлă предложенисем Çеçпĕл çыриччен курăнсах кайман. Анчах Çеçпĕл поэзинче вĕсем хăйсем валли тивĕçлĕ вырăн йышăннă:

«Пÿрте кĕтĕн—ачупчу выçă
макăрать»...
«Çунат хушар: чăваш чĕлхи
чĕрĕлчĕ вилĕмрен!»...
«Çĕн кун пăхать: ÿн ылтăн
аки пуç
Кăпăшласа хуратрĕ хытă
уйсене».

Хальхи литература чĕлхишĕн кунашкал предложенисем питĕ вырăнлă.

Революциччен чăваш поэзинче деепричестиллĕ сăмах çаврăнăшĕсем пачах тĕл пулман, Çеçпĕл сăввисем вара **деепричастиллĕ** сăмах çаврăнăшĕсемпе питĕ пуян:

1. «Çĕн Кун аки шăтма вăхăт
çитсен,
Çĕн Кун умне хура çĕр
айĕнчен,
Хĕвел калчи пулса, хĕвеллĕн
сарăлса, хăюллăн
Чăваш çыннин кунçулĕ тухĕ».
2. «Катаран кас килсен, касхи
кунăн мĕлки
Уйсене ыйхăпа хупласан,
Йĕркерен-йĕркерен тĕрлĕ
шухăш йĕрки
Пусăма пустарна пусласан...
3. «Чăваш чĕлхи çеçке ярса
чечекленсен,
Сан кĕвĕллĕ чĕлхÿ
кăварланса çитсен,
Чăваш çынни хăвна юратакан
пулсан,
Ĕмĕтсене татса, куçу хупăнĕ
сан».

Çапла вара, Çеçпĕлĕн хăшпĕр предложенийĕсем пĕтĕмпех деепричастилле сăмах çаврăнăшĕсенчен тăраççĕ Çак май вăл шухăша сахал сăмахсемпех пурне те ăнланмалла ăста тума тăрăшнинчен килет.

Шухăша палăртарах калама, эмоцие вăйлăлатма поэт чылай чухне риторикăллă ыйтусемпе, кăшкăрусемпе усă курать:

«Эй, ваттисем! Асап чăтни аса
килет-и сире?»
«Çĕршывăн пит-куçĕ çĕнелĕ
Ыран-и, паян-и вăл? Час...»
«Çĕнĕ пурнăç хĕвелĕ çунĕ
çутатса!»
«Ĕмĕрлĕх никĕс çине çĕнĕ
çурт лартар!»

Çак кăшкăрулла предложенисем вулакансен кăмăлне ирĕксĕрех хускатаççĕ. Чĕнсе е ятран асăнса, поэт хăйĕн калас тенĕ сăмахне вулакан патне лайăхрах çитерет:

«Сан иртнĕ ĕмĕрÿ, çĕре кĕнĕ
поэт,
Чуна пăчăртаса ялан аса
килет»...—тет вăл
Ахаха асăнса.
«Çĕн тĕнче! Эй, çĕнĕ кунăм,
Каялла ан кай, ан чак!»

Октябрь тивлетне пула ирĕке тухнă чăваш халăхĕн çĕнĕ пурнăçне чечекленсе, сарăлса пыма сунать, кивĕ пурнăç каялла ан таврăнтăр, тет поэт.

«Эй, ваттисем!
Эй, ват çынсем!
Авал чăваш асаплă пулнине
Çамрăксене каласа парăр!..»

Асап чăтса ирттернĕ ваттисене кăмăллăн чĕнсе, аваллăх каялла ан таврăнтăр тесе, çав йывăр пурнăç çинчен социализмăн çамрăк строителĕсене каласа пама хушать. Çамрăксене обществăна аталантарас ĕçе активлăрах хутшăнса ĕçлеме чĕнет.

Хăш чухне поэт çутçанталăкри явленисене, чĕрĕ мар япаласене те сăмах калать: ку вара ĕлĕкхи чăваш халăхĕн сăмахлă творчествишĕн характерлă явлени пулнă. Анчах Çеçпĕл çавнашкал обращенисем туса, вĕсенчен телей ыйтмасть, кĕрешÿпе çĕнсе илнĕ телейпе савăнма хушать, ирĕклĕх çĕр çине килнипе вĕсем те савăнччăр, тет.

«**Сĕм вăрмансем**, шавласа ларăр,
Уйсем, варсем, вĕç-вĕçĕмрен:
«Чăн чĕрĕлнĕ!»—тесе ан янрăр.
«**Чăваш чĕлхи**, хĕвел кăварĕпе
вутлан!»

«**Чĕрем**, выля, çĕн юрă пар!»

Çакнашкал чĕнÿсемпе поэт ĕçхалăхне тăван çĕршывăн тăшманĕсене пĕтерме, совет çыннин ăстăнĕнчи капитализм юлашкийĕсемпе кĕрешме, социализмлă пурнăç тума чĕнет.

Çеçпĕл вулакан куçĕ умне картинăна чĕррĕн кăларса тăратас шутпа час-часах урăх çын ячĕпе те калать.

Ĕлĕкхи саманара хĕрарăм чура вырăнĕнче шутланнă. Унăн обществăра та, çемьере те нимĕнле права та пулман. Ăна этем вырăнне шутламан. Çак правасăрлăха хĕрарăмсем çинчен калакан ваттисен сăмахĕсем те лайăх пĕлтереççĕ.

«Хĕрарăмăн çÿçĕ вăрăм,
Ăсĕ кĕске»—тетчĕç.
«Уншăн çут тĕнче курмашкăн
Мĕне кирлĕ?» —тетчĕç».

Октябрьти Аслă социализмла революци, ĕмĕрхи чуралăха тĕп туса, хĕрарăм пурнăçне, унăн обществăри вырăнне тĕпренех улăштарчĕ. Совет влаçĕ хĕрарăма арçынпа танлаштарчĕ.

«Чăваш çынни те халь ĕнтĕ
хăй пуçне çĕклерĕ,
Чăваш çĕршывне юратрĕ:
«Эпĕ те çын»,—терĕ.
Кивви текех ан килтĕр, тет
чăваш ĕççынни.

Çавăнпа та:

«Ĕлĕкхи саманана: «Тĕп пултăр çав!»—тесе питлет Çеçпĕл.

Инверси ытларах поэзире палăрать. Вăл Çеçпĕл сăввисенче те час-часах тĕл пулать:

«Чĕре кĕтет хĕвеллĕ ĕмĕре!»..
«Кĕрешÿ вăйне анчах
Кăмăллать ман вутлă чунăм»...
«Çунтартăр çулăмлă, кăварлă
Чĕлхÿ çынсен чĕрисене...»

«Çулăмлă, кăварлă чĕлхÿ çынсен чĕрисене çунтартăр», темеллеччĕ ĕнтĕ, анчах инверси йĕркипе çав шухăш тата ытларах вăйлăланать

Инверси йĕркипе глагол-сказуемăя малти вырăна лартни халăх поэзийĕнче час-часах тĕл пулать, вăл ĕçе çивĕчрех, вăйлăрах, палăртарах кăтартма пулăшать. Çеçпĕлĕн çакнашкал инверсисем тĕл пулни унăн поэзине халăхăн сăмахлă творчествипе çывхартать.

Çавнашкалах, «кĕсле кĕвви»,—«çитмĕл çич чĕлĕх», «ухă йĕппи» сăмах çаврăнăшĕсем фольклорта та сахал мар тĕл пулаççĕ.

«Ăспа чул кас та, вут кăлар» тенĕ ваттисем те.

Халăх поэзинче çÿрекен сăмах çаврăнăшĕсене Çеçпĕл чылайăшне хăйне май илемлетсе, çĕнетсе улăштарса кĕртет:

«Çĕр иртет те... килет çутă ир».
«Ушкăн-ушкăн шур пĕлĕт
иртет».
«Кăвак хуппи пĕлĕт тăрринчен
Чăваш çĕрне çутатса ячĕ».

Вĕсенчен хăшпĕрисене çав халлĕнех кĕртсе лартать:

«Хĕрарăмăн çÿçĕ вăрăм—
Ăсĕ кĕске»,—тетчĕç.

Çак сăмахсене ваттисем ĕлĕкавал пусмăр тĕнчи пуç пулса тăнă чухне каланă. Çеçпĕл ун çинчен асăнтарса, çĕнелен пурнăçа юратма вĕрентес ĕмĕтпе асăннă.

Çакнашкал тĕслĕхсем Çеçпĕл творчествине чăваш халăхĕн сăмахлă творчествипе çывхартаççĕ.

Пур аслă писательсемпе поэтсем те хăйсен пултарулăхне халăх поэзи сĕткенĕпе çĕклентернĕ. Чи витĕмлĕ те нихçан вилми произведенисен хăвачĕ—вĕсем халăх кăмăлĕпе уйрăлми тачă çыхăнса тăнинче. Сăмах халĕн çÿрекен произведенисем халăхăн чи таса та çутă ĕмĕт-шухăшне усса параççĕ.

Кăвар чĕреллĕ Çеçпĕл Мишши чăваш халăхĕн сăмах вĕççĕн çÿрекен творчествине ăста пĕлнĕ. Çав сăмахсене вăл хăй произведенийĕсен тĕп шухăшне тата ытларах çивĕчлетмелле туса юсаса, кĕртсе пынă. Чи илемлисене улăштармасăрах кĕртсе лартнă.

Çеçпĕл Мишши хăйĕн поэзийĕнче вырăс литературин чи паха традицийĕсене асра тытса, вĕсенчен вĕренсе пынă.

Çеçпĕл Мишши—чăваш совет литературине, чăваш совет поэзин никĕсне хываканĕ. Çеçпĕл творчестви совет поэзин аталану çулйĕрне пысăк, анлă çул уçса пачĕ. Унăн творчестви литература чĕлхине хывас ĕçре пысăк вырăн йышăнать. Çеçпĕл чăваш совет поэзине пур енчен те: содержани енчен те, форма енчен те вырăс поэзийĕпе çывхартать, унпала çыхăнтарать, чăваш поэзине социализмла реализм меслечĕпе аталанма çул уçса парать. Çĕнĕ ĕмĕрти çĕнĕ ĕççыннине çĕнĕ ĕç çине çĕнĕлле пăхма вĕрентни Çеçпĕлĕн новаторла пархатарлă ĕçĕ.

Çеçпĕл чăваш чĕлхин словарьне сахал мар çĕнĕ сăмахсем кĕртсе пуянлатрĕ. Халăх ăнланман сăмахсем Çеçпĕлшĕн ют пулнă. Социализм çĕнтерĕвĕнчи пысăк çитĕнÿсене традицилле çичĕ сыпăклă силлабика виçипе каласа пама хĕн пулнă, çавна пула вăл чăваш поэзине силлабо-тоникăпа тоника метрики кĕртет. Чăваш поэзирех вăл вырăс чĕлхинчи пек çĕнĕ, пуян шухăшлă, çĕнĕ конструкцилле предложенисем тăвать.

Çеçпĕл чăваш поэзине пур енчен те «çĕнĕ сывлăш, чĕрĕ сывлăш вĕрсе кĕртрĕ». Çавсене пула эпир кăвар чĕреллĕ поэта Çеçпĕл Мишшине тĕрĕссипех чăваш совет поэзийĕн никĕсне хываканĕ тетпĕр. Çеçпĕл Мишши чăваш совет литературин чăн-чăн ăста та пысăк поэчĕ.

**Н. ГРИГОРЬЕВ.**

# ПУСĂ ШЫВĔ — ТĂРĂ ШЫВ

Сăмахĕсем *Николай Евстафьевăн*

Кĕвви *Иван Степановăн*




Пусă шывĕ куç пек тăрă—
Витре тĕпĕ курăнать.
Кунĕ пулчĕ питĕ шăрăх:
Сивĕ шывшăн чун çунать.

Бригадир иртсе пыратчĕ,
Тавранатчĕ уй-хиртен.
Тўсеймерĕ çамрăк каччă
Шыв ыйтмасăр сар хĕртен.

Пусă шывĕ питĕ уçă—
Кăшт сыпсан та ăш канать.
Савнă хĕрĕн сенкер куçĕ
Çăлтăр евĕр туйăнать...

Ĕçрĕ каччă — тăранмарĕ,—
Хĕрĕ ăшшăн кулнăран:
Чĕринех-çке ун сăнарĕ
Кĕрсе юлчĕ паянтан!



ПУСĂ ПАТĔНЧЕ — П. Матюхин фотоэтючĕ.


ОТК8



ЯЛАВ № 7(103)
ИЮЛЬ — 1954

ЕЖЕМЕСЯЧНЫЙ ЛИТЕРАТУРНО-ХУДОЖЕСТВЕННЫЙ И ОБЩЕСТВЕННО-ПОЛИТИЧЕСКИЙ ЖУРНАЛ СОЮЗА СОВЕТСКИХ ПИСАТЕЛЕЙ ЧУВАШИИ.
ИЗДАТЕЛЬ: ЧУВАШСКОЕ ГОСУДАРСТВЕННОЕ ИЗДАТЕЛЬСТВО.

Редколлегия: Н. Ильбеков (и. о. отв. редактора), А. Эсхель, Л. Агаков, А. Артемьев, В. Долгов, К. Сергеев-Турхан, П. Хузангай.

*Рукописи не возвращаются* — Тех. оформление И. Григорьева.

НТ 00058. Подписано к печати 27. VII. 1954 г. Объем 5,165 п. л. Заказ 1878. Тираж 4500 экз. Цена 2 руб.

Адрес редакции и издательства: Чувашская АССР, г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. Телеф. № 8—36
Типография № 1 Министерства культуры Чувашской АССР.



Хакӗ 2 тенкӗ.